КАПКАН БИБЛИОТЕКИ

№




Владимир КУЗЬМИН

# КАРТЛАШКА

Национальная библиотека ЧР
4-026218

26218 чув

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1981 г.

КАПКАН БИБЛИОТЕКИ 1 № (58)

К С(Чув)
К 89

Владимир КУЗЬМИН

# КАРТЛАШКА

Калавсемпе
фельетонсем

Ӳкерчӗкӗсем Георгий ЯКОВЛЕВАН

КПСС Чӑваш обкомӗн издательстви

Шупашкар — 1983




Пĕлекенсем пĕлеççĕ: Владимир Кузьмина култарма çăмăл мар. Хăй тесен вара ай-ай ахăрттарать çынсене калавсем вулаттарса. Ахăрттарать-ахăрттарать те... шухăшлаттарать: ăçтан тупăнаççĕ-ха пирĕн хушăра вăл çырса кăтартнă ăçтиçуксем, усалсем, харам пырсем, бюрократсем? Мĕн тумалла вĕсене тĕпрен кăклас тесен?

Вăрнарсем каланă тăрăх (хăй вăл çав районта, Хурăнсур Çармăс ялĕнче çуралса ӳснĕ), çынна култарас пултарулăх Улатимĕрĕн пĕчĕкренех палăрнă. Çавăнпа, тем тĕрлĕ хаçатсенче те ĕçленĕскере, пурнăç çулĕ ăна юлашкинчен «Капкăнах» илсе çитернĕ. Халĕ вăл çак журналăн тĕп редакторĕн заместителĕ.

ПРОВЕРЕНО
2010

26218-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

# ЙĔКЕХӲРЕ

Пĕр пысăк канашлура йĕкехӳре капкăнĕ туса кăларакан завод çинчен пит хивре калаçрĕç. Тепĕр куннех завод директорĕ Осип Осипович Ретов планерка пухрĕ.

— Юлташсем! Сире калатăп, юлташсем,— пуçларĕ вăл, хальхаль çĕр айĕнчен вулкан тухасси çинчен пĕлтерес пек сехĕр сасăпа. —Ĕнер паллă çĕрте анлă канашлу пулса иртрĕ. Унта... Мĕн терĕç унта? «Йĕкехӳре капкăнĕ туса кăларакан завод квартал планне тултараймас хăрушлăх умĕнче. Завода ертсе пыракансем лăпкăлăх тыткăнне кĕрсе ӳкнĕ. Ыйхăран вăранма вăхăт мар-ши вĕсен?» Акă мĕн терĕç.

Осип Осипович аран-аран сывлăш çавăрса янă хыççăн чей сыпрĕ, унтан, темле вăй хĕтĕртнĕ пек, хăлаçлана-хăлаçлана сăмахне çапла вĕçлерĕ:

— План вăл — саккун! Вилсен те, чĕрĕлсен те ăна тултармаллах! Ретов ятне яма никамăн та права çук! Плана çунма памастех Ретов! Ретов çывăрмасть! Ретов вăл...

Вăрăм çивĕтлĕ секретарь Ретова валидол хыптармаваскарĕ. Таблеткăпа пĕрлех директор сăмахне те çăтса ячĕ.

Завод специалисчĕсем, пай пуçлăхĕсем, цех начальникĕсем Ретова лăплантараççĕ:

«Хисеплĕ Осип Осипович, хамăр пурнăçа пама хатĕр...» «Эпир тытăнсан...», «Сирĕн кăтартăвăрсене шута илсе...», «Ан пăшăрханăр, плана ирттерсе те тултарма пулать».

Кăкăртан тухса тарасла тапакан чĕрине хыпашла-хыпашла, директор тăчĕ, васкамасăр кăна ăслă кăтартусем пама тытăнчĕ:

— Сӳтсе явмалла! Халех. Пур çĕрте те. Канашлура критиклениие кашни инженер, мастер, рабочи, техничка, дворник патне çитермелле. Çитменлĕхсене пĕтермелли мероприятисем хатĕрлемелле. Пурне те хĕрӳ кĕрешĕве мобилизацилемелле! Халех...

Алăкран вăрăм çивĕтлĕ секретарь тем систернипе директор чарăнчĕ, сехечĕ çине пăхса илчĕ, уявлăн пĕлтерчĕ:

— Планерка апатра тесе шутлатăп, хаклă юлташсем. Яшка сивĕнме пултарать. Режим. Дисциплина.

Кăнтăр апачĕ хыççăн планерка малалла пычĕ. Пиллĕк çитеспе Ретов ура çине тăчĕ те хурлăхлăн вĕçлерĕ:

— Шел, шел, юлташсем. Вăхăт, вăхăт сахалли касать. Мĕн чухлĕ усăллă япала çинчен калаçаттăмăр. Халĕ — ĕçе, массăсем патне. Ман сăмаха кашни çын чĕри патне çитерĕр. Планшăн, планшăн кĕрешĕр!

...Директор сĕннĕ анлă мероприятисем чăнах та пурнăça кеме пуçларĕç.

— Хулари чи тăн-пуçлă специалистсене чĕнсе илтĕмĕр,— савăнтарать директора унăн пĕрремĕш заместителĕ.

— Ĕç тухăçлăхне хăвăртрах хăпартмалли меслетсем шыратпăр,— пĕлтерет тепĕр заместителĕ.

Акă паян та аслă залра лекци пырать. Халăхран юлас мар тесе, Ретов хăй те çăвара карса итлет. Уйрăмах ăна мулкач туталлă доцент лекцийĕ кăмăла кайрĕ. Васкамасăр, çав тери тĕплĕн ăнлантарать вăл:

— Йĕкехӳре вăл,— шĕвĕр сухалне шăла-шăла калать лектор,— харампыр, этеме чĕррĕн кăшлакан чĕрчун. Ĕлĕк-авалтанах йĕкехӳре кил-çурта иленнĕ, этем тăшманĕ пулса тăнă. Йĕкехӳре... ахаль сăмахпа ăнлантарса пама май çук йышлă хунать. Йĕкехӳре... Аминех илер, сăмахран. Çулталăкра вăл темиçе хут çăвăрлама пултарать. Çурисем калама çук хăвăрт ӳсеççĕ, виçĕ уйăхран хăйсем çăвăрлама тытăнаççĕ... Йĕкехӳре шывра та путмасть, вутра та çунмасть. Эпир ăçта — вăл та çавăнтах...

Чăтса лараймарĕ Ретов, лектора пӳле-пӳлех хăлаçлана пуçларĕ:

— Илтрĕр-и? Анлантăр-и? Туйрăр-и чĕрепе? Эпир плана тултарайманни мĕн тери пысăк хăрушлăх патне илсе пырать халăха? Пĕр капкăн сахалтарах кăлартăмăр — пĕр йĕкехӳре ирĕкре юлать. Çулталăкра икĕ хутчен çăвăрласан та вăл хĕрĕх çурана çитерет. Хĕрĕхĕшĕ тепрер çăвăрласан? — çаврăнчĕ вăл лектор еннелле. Лешĕ кĕттермерĕ, самантрах каласа хучĕ:

— Сакăрçĕр йĕкехӳрене çитет! Малалла çавсен çурисен çурисем, çурисен мăнукĕсем, мăнукĕсен пин-пин мăнукĕсем çăвăрласан...

— Во! Илтрĕр-и пурте?— каллех сиксе тăчĕ Ретов. — Ĕçлĕр, пĕр капкăн мĕн хака ларнине пуçпа шутласа, хăвăр мĕнле чыслă та хисеплĕ ĕç тунине ăнланса ĕçлĕр, ĕç тухăçлăхне ӳстерĕр, юлташсем. План вăл — саккун!

Кун хыççăн кун иртет. Акă, квартал та вĕçленсе пырать Калас пулать, ĕç тени те пĕр вырăнта тăмасть. Директор патне унăн помощникĕсем пĕрин хыççăн тепри кĕреççĕ: главнăй специалистсем, пай пуçлăхĕсем, цех начальникĕсем...

— Канашлу, инструктаж, пуху, лекци, калаçу иртттерне,— тет пĕри.

— Йĕкехӳре сиенĕ çинчен курăнакан агитацие çĕнетнĕ,— тет тепри.

— Малта пыракан опыта вĕренме Крысовăна, Мышкинăна, Кошкинăна кайса килнĕ...

— Капкăн пружинине лайăхлатас енĕпе рационализаторсен конкурсне ирттернĕ...

— «Йĕкехӳре хӳри» ятлă сатира хаçачĕ кăларма пуçланă...

— «Завод территорийĕнче йĕкехӳре таврашĕ ан пултăр!» девизпа тасалăх эрни...

Унтан каллех тепĕр канашлу ирттерес терĕç. Пухура профком председателĕ сăмах илчĕ:


ПЛАН

— Критикăран çиййĕнчех тивĕçлĕ вывод тăвас, ĕçе лайăхрах йĕркелесе ярас тесе, çав тери тăрăшса ĕçлерĕмĕр, хисеплĕ Осип Осипович. Паян та аллăн пилĕк сехет лартăмăр. Икçĕр аллă сехет ĕçлерĕмĕр, эппин. Главнăй специалистсемпе цех начальникĕсен планеркисенче — пилĕкçĕр сехет, йĕкехӳре сиенĕ çинчен ирттернĕ лекцисенче—шăпах пин сехет. Пĕтĕмпе виçĕ пине яхăн сехет. Пĕррехинче тĕрĕс каларăр эсир: «Этем сăтăрçи — йĕкехӳре». Эпĕ те çапла каласшăн: пирĕн ĕçри сăтăрçă та—йĕкехӳре.

Приемнăйĕнчен вăрăм çивĕтлĕ секретарь чупса кĕчĕ.

— Осип Осипович,— пăшăлтатрĕ вăл директора хăлхаран,— трестран отчет ыйтаççĕ.

— Мĕн? Мĕскер?! — çăварне кап! карса пăрахрĕ Ретов. — Эппин... квартал вĕçленчĕ те-и? Пĕтрĕ пуç!

Директор валли каçхи апат йăтса хăпаракан шур халатлă хĕрарăм курăнса кайрĕ. Тутлă апат шăршине туйса-ши, уçă юлнă алăкран пĕр кĕтӳ йĕкехӳре ушкăнĕ кĕрсе тулчĕ. Хĕрарăм шари сухăрса ячĕ те тулли подноса урайне ӳкерчĕ. Хайхи йĕкехӳресем пĕрне-пĕри çырта-çыртах чăх тукмаккине сĕтĕреççĕ, теприсем ăшаланă çĕрулмие чаплаттараççĕ, тата теприсем урайне сарăлса кайнă яшкана ĕмеççĕ.

Осип Осипович аллисемпе хăлаçланчĕ, урисемпе тапкаланчĕ, йĕкехӳресем еннелле тем-тем кăшкăрасшăнччĕ те пулас — сасси тухмарĕ. Аллипе чĕрине ярса илчĕ те Ретов çемçе пукан çине тĕшĕрĕлсе анчĕ.

# ТАРАСА ТАРАСĔ

Ялхуçалăх институчĕ умĕпе иртсе пынă чух такам мана хулпуççинчен шап! тутарчĕ. Шартах сикрĕм, çаврăнса пăхрăм та пушшех тĕлĕнтĕм: хамăр ял çынни Тарас тăра парать.

— Ентешĕме хула саламĕ! — пуçне пĕксе, кĕске аллине тăсрĕ вăл ман еннелле, унтан ыталаса чăмăртама пикенчĕ. — Хăçантанпа курман сире, хаклăран та хаклă çыннăм. Ахаль ирттерсе ярас марччĕ ку тĕлпулăва, паллă тăвасахчĕ, çак тарасапа виçсех..

Тарас мана хăй çумĕнчи тараса сакки çине ирĕксĕрлесех хăпартса тăратрĕ.

— Пулчĕ те,— терĕ вăл тараса чĕммине пӳрнипе тĕллесе. — Утмăл тăхăр кило та тăхăрçĕр аллă грамм. Аван, аван, вăхăтлă виçе. Ентешрен укçине те илмĕп. Ахаль те вилетĕп ĕнтĕ кулянса сирĕншĕн, ялшăн. Пырса курас тетĕп — вăхăт тупăнмасть. Пĕлессĕмех килет, мĕнле кĕрлеттеретĕр-ши эсир унта?

Эпĕ ăна хыпар хыççăн хыпар пĕлтеретĕп. Пуçне пăркаласа итлет-итлет те вăл:

— Тэк-тэк-тэк, гектартан икçĕр пăт тырă илнĕ апла. Тэк-тэк-тэк, шăпах эп шутланă пек ку,— тет.

Фермăсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă хыççăн хайхи ман ывăç тупанне сивĕ аллипе шаплаттарчĕ:

— Шăп та шай Тарас шухăшĕпе çĕмĕрттеретĕр иккен. Кашни ĕнерен пилĕк пин литр сĕт суса тĕп-тĕрĕс тăватăр. Маттур, ентешĕм!

— Эсир итлĕр-ха малалла,— калатăп унăн вылянчăк куçĕнчен тинкерсе,— колхозра цех системи йĕркелерĕмĕр, диспетчер служби уçрăмăр, комплекссем турăмăр, шыв пăрăхĕ кĕртрĕмĕр, урамсене асфальт сартăмăр, магазинсем, мастерскойсем, йăла...

Каласа пĕтерме памарĕ мана Тарас, кĕске аллисемпе пилĕкрен çулса илсех чăмăртарĕ:

— Чисти ман ĕмĕтпе ĕçлетĕр! Савăнатăп! Мухтанатăп! Эпĕ те хулара пурăнсах ăслă шухăшăмпа яла çĕклетĕп вĕт, э? Çавăнпа тахçанах сирĕнтен... Тăхтăр-ха? Çав ушкăна... Тупăша çухатас марччĕ. Эсир...

Тараса умĕнче кĕпĕрленсе тăракан туристсене Тарас хăвăрт-хăвăрт виçе пуçларĕ. Эпĕ анаталла уттартăм.

Атăл хĕрринче уçăлса çӳренĕ вăхăтра та пуçран туха пĕлмерĕ Тарас. Шкул хыççăн пирĕнпе ялхуçалăх институтне пымарĕ вăл, зооветтехникума кайса кĕчĕ, унтан кĕçех пăрахрĕ. Эпир диплом илнĕ тĕле Тарас фермăра осеменаторта ĕçлетчĕ, мăкăрăлса тăракан тарăн кĕсйисене çапсах мухтанатчĕ. Ĕне чуптарма пыракан çынсен укçипе пуйнă иккен çавскер.

Пурнăç тараси ăçталла тайăлнине сиснĕ Тарас, хăйне тăрă шыв çине кăлариччен районти хатĕрлев кантурне сĕкĕнчĕ. Ял халăхĕ Тарас патне аш-пăш, сĕт-çу, çăмарта, тир, çĕтĕк-çатăк, ăпăр-тапăр пайтах йăтатчĕ. Çынсене куçкĕретех улталакан тăрпанккан кĕсйисем каллех вĕрсе хăпартнă пек тулчĕç.

Меллĕ самантра ултавçă кунтан та вăшт çеç тухса шурĕ, ялхуçалăх управленийĕн алăкĕнчен такăнмасăрах кĕрсе кайрĕ, кадрсен пайне вырнаçса ларчĕ. Мĕн тунă унта вăл — пăллă мар. Анчах та Тарас чĕлхи такама тĕлĕнтерме, такамăн сыхлăхне те сĕвĕртсе яма пултарни вара палăрчĕ. Район центрĕнче çĕвĕ фабрики лартма йышăнсан, Тараса ун хуçи пулма сĕнчĕç.. Директор-строитель уншăн çунмарĕ, ĕçри материалпа чаплă кил-çурт çавăрчĕ. Çил-тăвăл çывхарнине туйса, вăл ăна туса пĕтеричченех хулаalla вĕçрĕ. Пĕр пысăк стройкăра чиперех йăла ыйтăвĕсемпе ĕçлетчĕ-ха, акă, халĕ йăла комбинатĕнче...

Атăл хĕрринчен хăпарнă чухне мана Тарас тепĕр хут песплат турттарса пăхрĕ: ни хушăнман, ни чакман эп.

— Хаклă ентешĕм! — каллех алла чăмăртарĕ вăл манне. — Иксĕмĕр ĕнтĕ эпир пĕрне-пĕри ачаранпах пĕлетпĕр. Эсĕ те çын пултăн, эпĕ те. Эсĕ яла çĕклерĕн, эпĕ те ун ятне ямарăм. Куратăн-и, çакă мĕн вăл?

Епле асăрхайман-ши эпĕ малтанах? Тарасăн ансăр кăкăрĕ çинче ăмăрту çĕнтерӳçин палли çакăнса тăрать-мĕн.

— Хэ-хэ, ентешĕм,— сарлака тутине сарса çутă шăлĕсене çутăлтарчĕ вăл. — Вилме çуралман-ха Тарас. Месерле выртса çăлтăр шутламан нихçан та, чеснăй ĕçпе тивĕçнĕ наградăна. Пĕлесех килсен, осеменаторта ударник ятне, хатĕрлев кантурĕнче премисине премии, ялхуçалăх управленийĕнче Хисеп грамоти илнĕччĕ. Стройкăра çеç... тăвата пӳлĕмлĕ хваттерпе дача майлаштарнăшăн... Юрать кунта çаклантăм. Пилĕк çул хушши хулара хваттер чӳречи çыпăçтарса, алăк çапса, çăра лартса, сĕтел-пукан юсаса пу-

рӑнтӑм — тарасапа ӗҫлеме тивӗҫ пултӑм. Хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартмасӑрах лекмен мана ку паллӑ. Анлантӑр-и халӗ эп пурнӑҫ аталанӑвӗшӗн мӗн тери пысӑк ӗҫ тунине?

Тепӗр ушкӑн ҫамрӑка вичрӗ те Тарас, вак укҫана ывӑҫ тупанӗ ҫинче сиктере-сиктере хэхэхлетнӗ хыҫҫӑн, тутине чаплаттаркаласа илчӗ.

— Цех системи... паллах, вӑл питӗ чаплӑ ҫӗнӗлӗх,— терӗ вара чеен. — Шутларӑм-шутларӑм та хамӑн ухмах пуҫпа, сирӗн унта шӑпах пӗр замӗ ҫитмен пек туйӑнчӗ, йӑла ыйтӑвӗсем енӗпе хӑвӑра пулӑшаканни, эппин. Ҫыннине аякра шырама кирлӗ мар пуль, тетӗп. Акӑ вӑл, хӑвӑр умрах. Ял пуянлӑхӗшӗн, халӑх малашлӑхӗшӗн уҫӑ сывлӑшра паттӑррӑн кӗрешес килет! Уншӑн мана нумай та кирлӗ мар: колхоз шучӗпе ҫӗнӗ ҫурт-йӗр лартасчӗ те, сад ӳстерсе, пыл хурчӗ ӗрчетесчӗ те... Эх... тэк-тэк...

Унӑн та, манӑн та урӑх пустуй паврама вӑхӑт юлмарӗ. Сывпуллашнӑ май эпӗ ӑна ҫапла шантарса хӑвартӑм:

— Пырӑр, курӑр пирӗн тулӑх пурнӑҫа. Ял хапхи ентешшӗн хупӑ мар. Ун чухне халӑха пухӑпӑр та, ҫав пурнӑҫа тунӑ чухне эсир ӑҫта пулни ҫинчен куҫа-куҫӑн каласӑпӑр, вара колхоза йышӑнасси пирки те татса парӑпӑр. Тараси хӑш еннелле тайӗ...

Тарас урамра тараса ҫине таянса тӑрса юлчӗ.

# ЮПА

Пысӑк цех тунӑ ҫӗрте пысӑк ыйту тухса тӑнӑ. Юпа ыйтӑвӗ. Кам лартнӑ-ши ӑна, мунча пӗрени пысӑкӑш чӑрӑш татӑккине? Мӗн тума? Хӑҫан? Никам та пӗлмест. Цех вара ун ҫумнеллех сарӑлса пырать. Юпа ним пулман пекех тӑлӑххӑн ларать: строительсене те, монтажниксене те малалла ӗҫлеме чӑрмантарать.

Чӑрӑш юпа тавра хӗрӳ калаҫу пуҫланчӗ.

— Юпана хӑвартрах кӑларса пӑрахӑр, пире ӗҫлеме ҫул парӑр! — хушать хушма подряд организацийӗн начальнике стройтрест хуҫисене.

Тӗп подрядчикре ӗҫлекенсем вара шӑрчӗсене хир сысни пек тӑратӑҫҫӗ:

— Ха, ҫӑмарти чӑххине вӗрентет. Заказчик пире проектпа юпа куҫарма хушман. Кирлӗ-тӗк, хӑвӑрах кӑларса перӗр,— алӑ суласҫҫӗ вӗсем.

Тавлашӑва заказчик хутшӑнать:

— Эпир юпа хуҫи-им, эсир хушни пирӗншӗн нимӗн те мар.

— Юпа пирки пирӗн план ҫунать! — чышкӑ ҫапсах кӑшкӑраҫҫӗ цех тавакансем.

Эрнене пынӑ тавлашу, виҫӗ организаци картишӗнчен тухсӑ, хулана ҫитет. Кусем те татса пама васкамаҫҫӗ юпа ыйтӑвне. Ҫакна пула хушма подряд организацийӗн начальникӗ министерствӑна телеграмма ярать: «Тӗп подряд тресчӗ юпа куҫарманнипе ӗҫ чарӑнса ларчӗ тчк васкавлӑ мера йышӑнӑр тчк Столбов».

Анчах та ҫак ыйтӑва никам та татса пама ӗлкӗреймест. Пӗрпӗрне ҫыру, телеграмма ҫӳретнӗ вӑхӑтра ҫурри ытла ҫӗрнӗ чӑрӑш юпа вӑйлӑ ҫилпе тӳннӗ те кайнӑ. Ирхине вара шӑпӑрт выртакан юпана асӑрханӑ та подрядчиксемпе заказчик хуҫисем, пӗр-пӗрин куҫӗнчен пӑхса, юпа пек хытса тӑнӑ.

# ЫРӐ КӐМӐЛ ИНКЕКӖ

Йышлӑ пирӗн кантурта ҫын. Коллективра эпир, арҫынсем, сахалӑн чулӗк. Ӗҫлетпӗр, вӑхӑта ирттеретпӗр. Мӗн кӑна шухӑшласа кӑлармаҫҫӗ пулӗ мӑнтарӑн хӗрарӑмӗсем. Вӑхӑтне таҫтан тупаҫҫӗ. Еҫе наукӑлла йӗркелекен пайри Сима Семеновнӑна ку енӗпе ҫитекенни никам та ҫук.

Тунтикун. Кӑнтӑр апачӗ ҫывхарать. Шӑп вуниккӗре пӳлӗме уява хатӗрленнӗ пике пек тумланнӑ Сима Семеновна пашлатса пырса кӗчӗ.

— Ну, ӑмӑрткайӑкӑмсем,— кулкалать хӑй чеен,— пӗрер тенкӗ кӑларса хурӑр. Кӳрӗр-ха арӑмӑрсем апата панӑ укҫӑрсене кунта? Ия, директорӑн арӑмӗ ача ҫуратнӑ. Этемлӗх йышӗ хутшӑннӑшӑн пӗр тенкӗ шалккӑ-и?

Эпир тимӗр укҫасене Сима Семеновна умне кӑлара-кӑлара хутӑмӑр. Апатланаймарӑмӑр, пӳлӗме юлнӑ хаклӑ йышши духи шӑршипех тӑранса лартӑмӑр.

Ытларикун вӑл урӑх тумпа, пушшех те капӑртараххипе, вашлаттарса ҫитрӗ. Тути хӗррисене, куҫ хупанкисене, пит ҫӑмартисене сӑрлама писевне пӗртте шеллемен хӑй. Чӑшӑл-л! тӑтӑмӑр ӑна курсан.

— Амӑрткайӑкӑмсем, хуйхӑ пирӗн коллективра,— халь-халь йӗрсе ярас пек пӗлтерчӗ вӑл кӗнӗ-кӗмен,— чӑтма ҫук пысӑк хуйхӑ. Директорӑн хунямӑшӗ вилсе кайнӑ. Тӑпри ҫӑмӑл пултӑр та. мӗн тӑвӑн, пулӑшмаллах...

Юнкун кӑнтӑр апачӗсӗр ӗҫлени ырра илсе ҫитерес ҫуккине туйса, икӗ тенкӗ чиксе тухрӑм. Хӑра-хӑрах кӗтсе илтӗмӗр Сима Семеновнӑна. Ана алӑкра асӑрханӑ-асӑрхаманах, хӑнӑхнӑ йӑлапа сылтӑм алӑ шӑлавар кӗсйине пашт! чӑмса анса кайрӗ.

— Паян пирӗн пурин те савӑнмалла,— аллинчи хаҫачӗпе сулкалашрӗ вӑл. — Вуларӑр-и? Директора Хисеп грамотипе наградӑланӑ. Пирӗн те парне хатӗрлемелле. Пӗрер тенкӗ мар, икшер тенкӗ пухар-ха. Ан хытӑр, ют ҫынах мар, хамӑр пуҫлӑх.

Каллех шăнчĕ кăнтăр апатне каясси.

Кĕçнерникун висĕ тенкĕ чикрĕм. Портфеле кăлпасси, çăкăр чĕркесе хутăм. Хăнахнăскерсем, Сима Семеновнăна кĕтме пуçларăмăр. Алăкра кăтралатнă пуç курăнсанах, салтакла яшт! сиксе тăтăмăр. Сима Семеновна хальхинче пукан çине васкамасăр пырса ларчĕ, сăмаха хуллен сĕтĕрттерсе калаçрĕ:

— Эккей, пурнăçра тем те пулать çав. Директор вилет кулянса. Кинĕн инкĕшĕн куккăшĕн шăллĕн арăмĕ магазинта растрата тунă, тет. Директорăн кăмăлне апла хăварас мар, уçас. Виçшер тенкĕ пуçтарăпăр та — çитĕ.

Сима Семеновнăна укçа тыттарса янă хыççăн, портфельсенчен апат-çимĕç кăлартăмăр та, такам туртса илесрен хăранăн, ăмăртмалла тĕшĕрме тытăнтăмăр.

Эрнекун пилĕк тенкĕ илнине курсан, арăм мана алăран шап! тӳнлеттерчĕ:

— Çитет! Ĕнер виç тенкĕ, паян пиллĕк, ыран вуннă... Апатне çĕклемĕ-çĕклемĕпех тултатăн. Кала, мĕн пулчĕ сана, Çитăр?

Хирĕле-хирĕлех пĕтĕрсе чикрĕм пилĕк тенке, апата та манса хăвармарăм.

Кĕтетпĕр Сима Семеновнăна хайхи. Кăнтăрла та çитрĕ. Çук та çук пирĕн чиперкке. Унсăрăнах апат ларса çирĕмĕр. Каç та çывхарса килет — курăнмасть вăр-вар этем. Ĕненменрен, кĕсъерен укçа кăларса пăхрăм: вырăнтах.

Тепĕр тунтикун, ĕçе каяс умĕн, яланхи вырăнта укçа тавраш̆ĕ курăнмарĕ. Арăм пĕçернĕ çăмартапа кукăль чĕркесе пачĕ те, сивĕн çапла каласа ăсатрĕ: «Кăнтăр апачĕпех уйăхне çĕр тенкĕ пĕтерсен, капла мĕнле пурăнас тетĕн-ха?» Нимĕн те чĕнмерĕм, тухрăм та утрăм ĕçелле.

— Эх, ăмăрткайăкăмсем! — çитнĕ-çитмен ĕшелентерме тапратрĕ Сима Семеновна. — Директорăн пĕрремĕш заместителĕ, Аллочка, паян аллă тултарать. Тата тепĕр чаплă хыпар пур: директорăн секретарĕ йĕкĕреш ача çуратнă. Мĕн тери савăнăç!

— Укçа парса ямарĕ-çке арăм,— калаçса татăлнă пек пурте пĕр харăс персе ятăмăр.

Тытăнчĕ Сима Семеновна пирĕнтен кулма:

— Эх, эсир те çав, шереметсем, арçын ятне йăтса çӳретĕр тата. Арăмăрсене алла илейменскерсем! Мĕскĕнсем! Ĕçсе-кӳпсе ямастăр вĕт. Хамăр йыша усă тăватăр, коллектива пулăшатăр. Кун çинчен директор илтес пулсан-и? Сире-и? Хăвăр ăçта ĕçленине манса ан кайăр!

Килĕшрĕмĕр вара Сима Семеновнăпа: малашне вăл пире чăрмантармасть, кассăран илет те укçине, кайран мĕн илнине пирĕнтен тытайса çеç юлаççĕ.

Уйăх вĕçĕнче яланхи пекех хавас кăмăлпа касса умне карталанса тăтамăр. Алă пусрăм та, укçа парасса кĕтетĕп. Кассир мана укçа вырăнне Сима Семеновна списокне тыттарчĕ. Вулатăп мĕншĕн укçа тытса юлнине: директор амăшĕн ĕни кӳпĕнсе вилнĕ иккен, пуçанин пӳрчĕ çунса кайнă, пултăрĕ авланнă, иккĕмĕш заместителĕ курортра укçа çухатнă, секретарĕн йĕкĕрешĕсене ят хунă, çавсем-çавсем менелник тунă...

— Пирĕн мĕн тумалла капла?

Пĕр-пĕрин çине мĕскĕнле пăхса илтĕмĕр те, профсоюз комитечĕн пулăшу кассинчен вăхăтлăх укçа илтĕмĕр. Киле пурпĕрех пуш алăпа таврăнмарăмăр.

# АПЕЛЬСИН ХУППИ

Мускава каятпӑр, Халӑх хуҫалӑх ҫитӗнӗвӗсен выставкине. Кашни районтанах. Шупашкар пуйӑсӗ ҫине, вӑхӑчӗ ҫителӗклех пулин те, пӗр-пӗрин пушмакӗсене тапта-таптах кӗрсе каятпӑр. Проводница пире «сурӑхсем» тесе тӗрӗсех каласа хучӗ пулмалла. Ара, купеллӗ вагонра кам йышӑнать сан вырӑнна?

Яланах ҫивӗч чӗлхепе палӑрнӑ Уҫӑп Остроумов кӳршине, юнашар районти Хӗритун Кукарова, ӑшалать те ӑшалать:

— Таҫта ҫӑванаваскать? Черете-мӗне пӑхмасӑр ӗрӗхсе хӑпарса кайрӗ, ухмах. Институтрах тӑна илнӗ эс пирӗнне. Столовӑйӗнче — Кукаров ура айӗнчеччӗ, гардеробра — Хӗритун тумӗпе лӑшканатчӗ, каникулта — каллех автобус патӗнче тӗрткелешеттӗн. Ун чух студент пулнӑ темелле, халӗ... Аллӑсене хӑвалатпӑр. Ҫапах ачалла хӑтланатӑн, пире намӑс кӑтартатӑн.

Хӗритун Кукаров симӗс шлепкине хывать те Уҫӑп Остроумов сӑмахӗнчен пытанса питне хуплать, мӑкӑр-мӑкӑр тӑвать:

— Те вакката тытнӑ кӑна, лӑпӑртатать. Ни пиччӳ мар эп сан, ни кукку мар. Хамӑнне эп хам пӗлеп.

— Пӗлен ҫав эс хӑвӑнне,— чарӑнмасть Остроумов. — Пӗлсех пушмаксем ҫийӗн чупан. Кур, мӗн тӗслӗ вӗсем?

— Мускавра атӑ тасатакан нумай, кӗтсех лараҫҫӗ пуль-ха пире,— кулать Кукаров.

Ӗҫ шалалла кӗрсе кайиччен вӗсене чаратпӑр та, япаласене вырнаҫтарса хуратпӑр.

Асатма тухнӑ арӑмсене алӑ сула-сула хул вӑйӗ пӗтрӗ ӗнтӗ. Пуйӑс тинех тапранчӗ. Пурте лӑштах сывласа ятӑмӑр. Кайсан-кайсан, Вӑрнара ҫитрӗмӗр, унтан Ҫӗмӗрлерен те иртрӗмӗр. Вагона хамӑр ҫынсем татах та килчӗҫ. Шӳт, кулӑ, сӑмах-юмах. Сисмерӗмӗр те, сӗтел ҫине такӑшин сумккинчен кӑкӑрне хӗрӗхлетсе ҫыхнӑ ҫут кӗленче тухса ларчӗ. Ҫӗмӗрле ачин пулас. Ҫавскер пӑкӑ хӑлхи тупаймарӗ те, эрех завочӗн рационализаторӗсене ятлама тытӑнчӗ.

— Ҫакӑнта тимӗр перекетлесе пуяҫҫӗ пуль ӗнтӗ, шереметсем, халӑха нуша кӑтартаҫҫӗ. Вӑн, алла кастартӑм чакаланса. Кайса парап-ха та заводне списать тунӑ пӗр трактор Мускавран таврӑнсан,— нӑч-нӑч ӗмет вӑталӑх пӳрнине.

Ахӑра-ахӑра сӗтел ҫине хамӑр туяннӑ хӑлхасӑр кӗленчесем, арӑмсем парса янӑ кукӑль-мукӑльсене кӑлара-кӑлара хуратпӑр. Ӗҫе каймастпӑр-ҫке, канма. Ма савӑнас мар пӗреххут... Хӗритун Кукаров ҫеҫ, «Тӑван ҫӗр» журналпа витӗннӗ те, курмӑш-илтмӗш пулса вуланҫи туса пырать. Остроумов — валеҫеканни. Эрех тултарнӑ стаканпа чавсаран кӑт тӗкрӗ те вӑл ӑна, каларӗ:

— Тыт та Хӗритун, ӗҫ те ан тун...

Кукаров пушатнӑ стакана Остроумова тавӑрса пачӗ, ӗхлетсе тутине шӑлкаларӗ, унтан такамӑн автан тукмаккине ҫатӑрласа ярса илчӗ. Туххӑмра чӑмласа ячӗ ӑна, тепӗр черете каллех ӗхлетсеирттерчӗ, ҫӑмартине те, ҫуне те, шӑрттанне те — пурне те каптӑртаттарчӗ.

— Ай, ку тутлӑ апатпа, хырӑм та ыратакан пулчӗ. Паян сирӗннипе хӑналантӑм ӗнтӗ, ыран... Апачӗ сумка туллиех-ха ман, ытлашши пулать пуль тетӗп-ҫке, ҫавӑнпа кӑларас темерӗм. Ҫав



кăркка ашне илсе парăр-ха? Ана мар, пысăкрах татăкне,— сăмах çаптарать Кукаров.

Выççăн çунакан куçне лăплантарас тесе хам умри кăркка туккине часрах тыттаратăп Хĕритуна. Апата тутипе чаплаттарса, шăлĕпе шатăртаттарса пĕтĕрекен Кукаров çине пăхатăп та шухăшлатăп: «Ялхуçалăх институтĕнче чухне мĕнле пулнă — çаплах юлнă. Кĕлетки çеç сарăлнă, куçĕ пысăкланнă тата. Ĕлĕкех пирĕн апата юрататчĕ, хăй вара тултармăш тирне те, кушака çитерме тесе, яла илсе каятчĕ. Вăт сана Кукаров. Хушаматранах пĕлме пулать, теççĕ çынна. Халăхра ахальтен тухман пуль çав Кукаров хушамат, хыткукартанах ĕнтĕ».

Хăлхасăр кĕленчесем пушанчĕç пирĕн. Такăшĕ те юриех, те кирлĕрен, персе ячĕ: «Темскер, çитмен пек туйăнать. Урăх никамăн та çуккă-и? Çук пулсан, чупам-ха ресторана».

«Тăван çĕр» журналпа хупланнă Хĕритун илтмĕше печĕ, эпир пĕрер тенкĕ тыттарса янине те «сисмерĕ».

Çитменнине çитерес текенни часах таврăнчĕ. Сăра туяннă.

— Вăт мур, ăша хыптарать ку эрех,— илтĕнчĕ журнал хыçĕнчен. — Эппин, сирĕн сывлăхшăн! Икĕ стакан сăра тултарса ĕçрĕ те хайхискер, хулăнрах лимон татăккине пикенсех ĕмме тытăнчĕ.

Каярах куперен тухрăмăр, Хĕритун çеç, хăрах аллине журнал тытнăскер, тепринпе çăварне лимон чиксе, выçлăх кĕвви чаплаттарса юлчĕ.

Мускава çитсенех Кукаров ман çумма çыпçăнчĕ, вакки çук тесе метрона ман укçапа чăмрĕ. «Ылтăн пучах» ятлă хăна çуртне вырнаçнă чухне каллех уншăн тӳлеме тиврĕ.

Çӳретпĕр выставкăра, çĕршывăн халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсемпе каçса кайсах паллашатпăр. Курмалли вара! Вăхăтна анчах ан шелле. Вăхăчĕ пирĕн пур-ха. Эрне. Утатпăр павильонран павильона. Хĕвел пуç тӳпи тăрне хăпарсан, апатланатпăр. «Çĕр тенке вакласси, ил-ха мана валли те, кайран унта...»,— тет те Кукаров сĕтел хушшине ларать. Мороженăй та ĕмес килет унăн, сăра ĕçес кăмăл та пысăк, киоскран хаçат та илсе вуламалла, панорамăллă кино та курмалла, катаччи те чупмалла. Алăкра чуптунă вăхăтра арăм çул çине тесе кĕсъене чиксе янă хĕрлĕ укçасем те вакланса пĕте пуçларĕç, Хĕритун çаплах анратать: «Çав зефира илсе кефирпа çиер-ха?»

Пирĕн ачасем, каç енне сулăнсан, гастронома «тĕрĕслес» терĕç. Эрех сутакан пай умĕнче майрасем ӳкернĕ, ыçĕм çырли шереписем çыпăçтарнă, нумай-нумай медаллĕ кĕленчесене куçпа суйлатпăр. «Кун пек ăпăр-тапăрпа аппаланмастăп»,— терĕ те Кукаров, манран вунă пус илсе, помидор сĕткенĕ ĕçме черете тăчĕ.

Эпир тутанса пăхасах терĕмĕр шерпетсене. Пĕри тепринчен тутлă. Кукаров та эхлете-эхлете ӳпĕнтерет стакана. «Кăна-и,— тет,— киле кайнă чухне пурпĕр туянатăп».

Уçăп Остроумов печĕ ячĕ:

— Тыт та Хĕритун, яр та ан тун. Кăлар шуррине, ĕçтер пуррине!

Кăлпасси хыпнă Кукаров сăмахсăрах чăматанне уçрĕ, хутпа чĕркенĕ япала туртса кăларчĕ. Пирĕн ума пуç пӳрне пысăкăш эрех кĕленчи тухса выртрĕ. Кукаров ăна мăнкăмăллăн сĕтел варрине шаклаттарса лартрĕ. «Çитет сирĕнне ĕçсе, манне, хаяррине, тутанса пăхăр,—терĕ. Закуски те пур, ĕçĕр, çиĕр, ан вăтанăр». Сумккинчен шăршланнă, пăнтăхнă кукăльсем, аш-пăш тухса вырт-

рĕ. Кула-кулах Кукарова эрехне хăйнех ĕçтерсе ятăмăр, закускине те тĕкĕнсе пăхмарăмăр. Апат юлашкине вăл, «сыснасем валли кирлĕ пулать-ха» тесе, каялла чăматана чĕркесе хучĕ. Ун хыççăн ман апельсина тапăнчĕ.

Апат çинĕ чух тĕлĕннĕ эпĕ унран. Умри чашăка, такам туртса илесрен сехĕрленнĕн, икĕ аллипе те çатăрласа илет, кашăк тытсан та сулахай аллине чашăкран вĕçертмест. Ахаль те шапанни евĕр куçĕ вара çамка çине тухса ларнă пек вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнать. Апельсина та Кукаров çавăн майлах выççăн çиет, çынсем сĕтел хушшинчен тухсан та ĕмет, ĕмет тутлă, янтă çимĕçе.

Киле каяс умĕнхи кун Хĕритун пирĕнпе выставкăна пымарĕ, хула тăрăх çӳреме юлчĕ. Эпир таврăннă çĕре пӳлĕмре япала... «Аçта хурса пĕтерĕ-ши кусене?» — тесе тĕлĕнетпĕр. Хуçи таçта кайнă, час килмерĕ. Эпир çутă сӳнтернĕччĕ ĕнтĕ, çывăрса çеç каяйманччĕ. Кукаров тин çитрĕ, тем кăштăртатрĕ-кăштăртатрĕ те выртрĕ вырăнĕ çине. Кăшт вăхăт иртсен, пӳлĕме апельсин шăрши сарăлчĕ. Утиял айĕнчен нăчлаттарса ĕмнĕ, ват лаша кавленĕ пек сасă илтĕнет. Ыйхă вĕçрĕ, чăтаймарăм, ӳсĕртĕм. Шăп пулчĕ. Чӳречерен ӳкекен çутăпа лайăххах куратăп: Кукаров пуç çинченех витĕннĕ. Кăшт тăхтасан, юриех харлаттарнă пек турăм. Утиял айĕнче каллех тем чĕрĕлчĕ, нăч-нăч, кăптăрт-кăптăрт тăвать. Иркине тăтăмăр та, ниçта пĕр апельсин хуппи курмарăмăр.

Мускав мыскарисем вĕçленчĕç. Урăх пире кунта усрамаççĕ. Килелле — Чăвашстана çул тытрăмăр. Эртелпех. Ахлатмалли, охлатмалли, ухлатмалли кашниннех çăвар тулли. Калаçкаласа пынă вăхăтра пирĕн сĕтел çине хăлхаллă кĕленчесем тухса ларчĕç. Нумай мар ĕнтĕ, кăшт кăмăл уçмалăх çеç. «Тăван çĕр» журнал вырăнне халĕ Кукаров эп илсе панă кĕнекене вулать, килĕнче нутри ĕрчетме вĕренет. Çав вăхăтрах стаканне ӳпĕнтерет те кăлпасси хыпать, каçару ыйтать: «Мĕн тăвăн мана, ухмаха, япала туянсах укçана пĕтертĕм. Эсĕр ăслă та, эрех валли те хăварнă. Çĕр тенке темшĕн вакламарăм. Юрĕ ĕнтĕ, тепре тĕл пулсан, манран та тухĕ. Сирĕн сывлăхшăн!»

Пĕрне-пĕри каçарса-калаçтарса çĕр турăмăр, хамăрăн тăван çĕре çитнине те сисмерĕмĕр. Канаш пире яланхи пекех тĕркĕш кĕтсе илчĕ. Хĕритун тамбурта чи мала кайса тăнă, ик аллинче икĕ чăматан, хулпуççисем урлă тăвата çыхă çакса янă. Хăйшĕн кирек ăçта та пуринчен малтан чупса çитме хăнăхнăскер, кунта та кĕптĕр-кептĕр шуса анчĕ вагон картлашки тăрăх, йывăр япалисемпе унталла-кунталла сулăнчĕ, такам ăнсăртран тĕртнипе лак ларчĕ. Пĕр çыххи саланчĕ те, перрон çине шапăрр! юхса тухрĕ апельсин хуппи. Ун çине пуснипе темиçе çын харăс кăпăр-капăр персе анчĕ. Тăлпан арçын ӳкеймесĕр силленсе витрине çӳлелле çĕклерĕ, чалăштарса ячĕ те Кукарова цемент ăшне турĕ. Çуйхашу, тĕрткелешӳ пуçланчĕ.

Цементпа витĕннĕ Хĕритун Кукаров мăкăртата-мăкăртата упаленет. «Ах, пĕтерчĕç, пĕтерчĕç, типĕтсен чей ĕçме лайăхчĕ» текелесе, апельсин хуппи пуçтарать.

# ПУКАНĔ ÇЕМÇЕ ТЕ...

Строительсен институтне вĕренсе пĕтертĕм: тертленсех, тар юхтарсах, бетонщикре ĕçлесех. Килĕшетчĕ мана хамăн ĕç. Бетонран никĕс хываттăмăр, урай сараттăмăр. Пысăк цехсем, корпуссем пĕлĕтелле кармашнине пăхса тĕлĕнеттĕмĕр. Савăнаттăмччĕ коллективпа пĕрле. Мухтанаттăмччĕ строитель пулнăшăн. Шухăшĕмĕтĕмпе тем тĕрлĕ мăн ĕç тума хатĕрччĕ.

Институтран тӳрех управлени начальникĕ патне вĕçтертĕм, ăна çĕнĕ диплома тыттартăм, пӳрне вĕçĕпе ромбике тĕллесе кăтартрăм. Инженер вырăнĕ парасса кĕтетĕп. Начальник хĕпĕртенипе мана ыталаса илчĕ, йăл кулчĕ, çемçе пуканĕ çине лартрĕ. «Сана кĕтни,— терĕ саркаланса,— саншăн турра пуççапни... шăпах пилĕк çул. Эс мана тамăкран çăлтăн, эс маншăн... Эп сана уншăн хам вырăна парнелетĕп. Туса пыр ман ĕçсене».

Туса пыратăп çакăн хыççăн начальник ĕçĕсене. Вăл трестри планеркăра кăнтăрлаччен ларнă вăхăтра эпĕ управлени планеркине ирттеретĕп. Вăл канашлура кун каçнă чухне управленире канашлу пухатăп. Ана хулари аслă организацисем чĕнеççĕ, мана та трестри пысăк чинсем вырăнта лартмаççĕ. Васкавлă ыйту татса пама такама та шутсăр хăвăрт кирлĕ эп: управляющине те, главнăй инженера та, главнăй технолога, главнăй механика та, главнăй энергетика та, пай, группа, лаборатори начĕсене те, профсоюз комитетне те...

Эрнере пĕрре стройкăна, завод тунине тухса куратăп. Маншăн вăл экскурси кунĕ шутланать. Унта та начальник ĕçĕсенех тума тивет. Пирĕн стройкăра канашлу-планерка, семинар-экскурси ирттерессипе эксперимент тăваççĕ те... Хулари, районти ответлă кашни пысăк-пĕчĕк организаци ку енĕпе хăйĕн планне çирĕп пурнăçлать. Управлени начальникĕ кунне ик-виç мероприятие лекетех. Паян та вăл, главнăй инженерпа пĕрле, стройкăна çитнĕ-çитменех, каçчен пыракан анлă канашлăва кайрĕ. Начальник заместителĕн хăй енĕпе пуху. Пахалăх инженерĕн — облаçри семинар. Хăрушсăрлăх техникин инженерĕн — профсоюз смотрĕ. Пай начальникĕсен, прорабсен, мастерсен, бригадирсен—хуçалăх меслетне вĕренмелли шкул... Мана та районтан килнисем, начальник вырăнне калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ калаçăва хутшăнмалла тесе, бытовкăна тытса кĕчĕç.

Строительсен ĕç вăхăтне перекетлесси çинчен виçĕ сехет çуйăхнă хыççăн аран-аран чĕлĕм туртса ячĕç. Çав вăхăтпа усă курса, эпĕ канашлуран тухса тартăм та хамăн бригадăна хаваспах шыраса тупрăм. «Салам, начальник!» — алла юри хытă пăчăртаççĕ юлташсем. «Начальник мар эпĕ, начальник ĕçĕсене туса пыраканĕ çеç-çке»,— тетĕп нимлемарланса. «Пирĕн вĕт управленийĕпех, тресчĕпех канашлаççĕ, вăл вăхăтра бригадир ĕçне звеньевой, мастерăнне — бригадир, прорабăнне — мастер, главнăй инженерăнне — прораб пурнăçлать, начальникĕнне — эсĕ. Сан ĕçне кам тăвать кунта! Кам саншăн план тултарать! Ме!»—сив куçпа пăхсах тыттарчĕç вибратор.

Самосвалсем шăпах бетон пушататчĕç. Бригада хĕрӳ ĕçреччĕ, бригада умĕнче эпĕ пысăк тивĕçреччĕ. Вăрттăн пăхса илтĕм те юлташсем çине, вибратора савăнсах мĕнпур вăйран улаттарма тытăнтăм. Çирĕп шухăш тытрăм: «Канашлу начальникĕн ĕçĕсене туса пыриччен, çемçе пукан çинче лариччен — вибраторпах ĕçлес, бетон никĕс çинчех тăрас, усă тăвас».

# ĂШАЛАНĂ ЧĂХ УРИ

Ялта пурăнакан амăшĕ патне Çимун арăмĕпе курма персе çитрĕ. Укахви инке ывăлĕпе кинĕшĕн мĕн тери хĕпĕртенине сăмахпа та каласа параяс çук. Ара, виçĕ çул ытла пулман-çке Çимун ялта. Салтакран тӳрех хулари стройкăна юлнăскер, вăл ку таранччен ниепле те вĕçерĕнсе тухаймарĕ. Халĕ вара пĕччен те мар, тӳрех Кавказ майрипе килчĕ вĕт. Акă мĕнле савăнăç йĕтăнса анчĕ Укахви инке пуçĕ çине, савăнăçĕпе пĕрлех — хуйхи те.

Еçе тухмасăрах хăна пăхать вăл: ывăлне те, кинне те нимĕн тутармасть. Вĕсем тăнă çĕре урайне сĕрсе каять, лаççа тухса апат пĕçерет, сĕтел хатĕрлет, пуçтарать, кашăк-чашăк çăвать. Сисет-ха Укахви инке, кинне апат килĕшсех каймасть пулмалла: яшкине те çиелтен сыпать, шаркку-пăттине те сире-сире хăварать. Сурăх пустарса шăрттан тунăччĕ, эрнерен пĕтрĕ. Аптрарĕ Укахви. Урăх мĕнле тутлă апат пĕçерĕ. Мĕнпе юрĕ кинне!

Ывăлĕпе кинĕ калаçнă чух Укахви инке хăлхине «чахохбили» сăмах ăнсăртран кĕрсе кайрĕ. «Аха,— тавçăрса илнĕ пек пулчĕ вăл,— ăнлантăм,— «чăхăпĕли», шур чăх ĕнтĕ. Ара, пусса çитерес».

Укахви инке лаç умĕнче ăшталанать, чăх тĕкĕ татма вĕри шыв хатĕрлет. Кӳршĕри Маюç Куçки тем сăлтавпа каçрĕ.

— Ма пит васкатăн çак? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Куçкă.

— Кин чăхăпĕли те чăхăпĕли тет, пĕçерсе парас уяв ячĕпе,— пуçне çĕклемесĕрех хуравларĕ ăна Укахви инке,— шур чăх ашĕ çиес килнĕ тесе ăнлантăм та хама май, пĕлместĕп-ха, те яшкалла тумалла, те шарккулла. Куçкă, хула майрисене мĕнле ытларах кăмăла каять-ши? Пуварта ĕçленĕскер, эс лайăхрах пĕлен.

Ялан çынран кулма юратакан Маюç Куçки «вĕрентрĕ» кӳршине майра валли апат пĕçерме.

— Тин ăнлантăм,— лăштах пулчĕ Укахви инке, — ялти хĕрарăм нимĕн те пĕлмест тесе ан шухăшлатăр кин, ăнкаратпăр чăхăпĕли мĕнне.

Куçкă тухса кайсанах вăл кил хушшинче кăтиклесе çӳрекен шур чăхсене сарайне йыхăрса кĕртрĕ, иккĕшне тытса пусрĕ. Повар вĕрентнĕ пек, урисене пакăлчакĕ таран татса илчĕ, çатма

ҫинче услам ҫупа сап-сарӑ пуличчен ӑшаларӗ, унта пӗҫернӗ ҫӗр-улми, хӗрлӗ помидор, симӗс сухан хушрӗ. Вӑрӑмрах чӑх тӗкӗсене кӑшт ӗнтрӗ, ҫиеле урлӑ-пирлӗ хучӗ.

Витнӗ ҫатма хӗрринчен пӑс мӑкӑрлантарса кӗрсе кайрӗ Укахви инке пӳртелле. Савӑннипе хӑй ӑшӗнче юрӑ ӗнӗрлет. Сӗтел хушшинче пӗр-пӗрин куҫӗнчен пӑхса ларакан ывӑлӗпе кинӗ умне лартрӗ ҫатмана.

— Ҫийӗр, ачасем, чӑхӑпӗли, тутлӑ пултӑр апачӗ,— терӗ те вӑл, чӳлмек йӑтса, нӳхрепе сӑра ӑсма тухрӗ.

Кинӗ ҫатмине часрах уҫрӗ, аллине пӗҫертнипе хуппине сӗтел ҫине ӳкерчӗ.

—Ҫимкка, пӑх-ха! Мӗне пӗлтерет ку? — тутине пӑрчӗ ҫавӑнтах.

— Чӑн та,— тӗлӗнчӗ упӑшки. — Ашне хӗрхенет-ши? Ӗ чееленме шутларӗ? Хӑв пулӑшмастӑн та пӗртте.

Арӑмӗ упӑшкине ӑнлантарать:

— Тем пулчӗ, пӗртте апат анмасть. Хунеме ахаль те чӑваш апатне тиркет, тет пуль. Пулӑшасси пирки... Хӑвах каларӑн-ҫке, «эпир канма килнӗ, ӗҫлеме мар», терӗн. Эс ҫи-ха, эп хатӗрленем. Пасара кая юлатпӑр.

Ҫимуна арӑмӗ сӗтел хушшинчен ҫинӗ-ҫимен хӑваласа тухрӗ. Амӑшӗнчен кӑкшӑм илсе сӑра ӗҫрӗҫ те, чупрӗҫ тӑвалла. Укахви инке ним калама аптраса тӑрса юлчӗ, унтан пӳрте кӗчӗ. Сӗтел ҫинче ҫатма туллиех апачӗ. Улмине кӑштах сиенӗ те, ыттине тӗкӗнмен. Ӑшаланӑ урасемпе ӗнтнӗ тӗксем ирхи хӗвел шевлипе ылтӑн тӗслӗн ялтӑртатса выртаҫҫӗ. Лаках ларчӗ Укахви инке сак ҫине.

«Мӗн кирлӗ ку кине? Шӑрттан ыйтрӗҫ — туса патӑм. Чӑхӑпӗли терӗҫ — пӗҫерсе лартрӑм. Мунча чулӗ кирлӗ-им тата? Хӑйсем тытса пӗҫерес темеҫҫӗ...» Сасӑпах калаҫкаласа вӑл сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ, чӑх урине кӑшлама пуҫларӗ. Ӑшаланӑ сап-сарӑ тир те шӑмӑ ҫеҫ, урӑх ним те ҫук ӗнтӗ. Аптранӑ енне сӑра ӗҫрӗ, шухӑша кайрӗ.

«Ненай, ку чӑхӑпӗли япали хырӑма тӑрантарма та, тӑраннӑ хырӑма саплама та каяс ҫук. Ашсӑр-пӑшсӑр апат пулать-и? Маюҫ Куҫки хыҫҫӑн кайсах намӑс куртӑм пӗртен-пӗр кин умӗнче».

Тарӑхнӑ Укахви инке каллех пахчана, лаҫ·умне, тухрӗ. Карта леш енче Маюҫ Куҫки шӑл йӗрсе тӑрать:

— Мӗнле унта чӑхӑпӗли? Майра кинне юрарӑн-и?

Укахви инке ятлаҫать. Маюҫ Куҫки ӑна-кӑна пӑхмасӑрах карта урлӑ сикрӗ те, лаҫ умне пырса тӑчӗ, кӳршине лӑплантарма пикенчӗ:

— Тупнӑ хирӗлмелли, кулянмалли. Кинӳ пуҫу ҫине вӗри ҫатма тӑхӑнтартса лартмарӗ пуль-ха! Тӑхта эс, тӑхта! Вӗсем пасартан таврӑннӑ ҫӗре иксӗмӗр чӑн-чӑн чахохбили, грузинсен чи юратнӑ апатне пӗҫерсе хурӑпӑр. Пар-ха кунта чӑх ашне?

Укахви инке хӑлтӑклансах кайрӗ:

— Каллех чӑхӑпӗли! Сана, эсреле, ват ҫынран култарам! Ху ҫи, ху кӑшла чӑх урине. Круҫинсен юратнӑ апачӗ тесе епрен тата. Чӑх урипех пурӑнаҫҫӗ пуль ӗнтӗ вӗсем...

Авӑк шӑрчӗ иртсе кайнӑ Укахви инке майӗпен кӑмӑлне ҫемҫетрӗ, Маюҫ Куҫкине сӑра ӗҫтерчӗ. Тытӑнчӗҫ вара ӗҫе.

Повар темерӗн, пит ҫаврӑнӑҫуллӑ Маюҫ Куҫкин аллисем. Пулӑшма ӗлкӗреймест Укахви инке. Шӑтӑр-шатӑр вакларӗ те чӑхсене, хурана ярса ҫупа ӑшаларӗ. Унтан икӗ стакан пӗҫернӗ аш шӳрпи, симӗс сухан, томат, пӑрӑс-ҫӑкӑл, тӑвар ячӗ, хӑйне ӗҫме



...республикӑн... БИБЛИОТЕКА

панă шур эрехне кăшт унта силлерĕ, сехет çурă хуллен вĕретрĕ, тăрсан-тăрсан, хĕрлĕ помидор хушрĕ.

— Пулчĕ, Укахви инке,— терĕ Маюç Куçки. — Ыттине хăв пĕл.

Кĕçех Çимунпа арăмĕ пасартан таврăнчĕç. Вĕсем пӳрте кĕнĕ çĕре сĕтел çинче виçĕ чашăк пăсланса ларать. Укахви инке ывăлĕпе кинне апата чĕнет:

— Ларăр, çиййĕр, ачасем, ăшăланă чăх ури мар халь, чăн-чăн шур ашах, чăхăпĕли мар, чăн-чăн ча-хох-би-ли.

Ирпе Укахви инке тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ. Вăл тăнă çĕре çăка хăмаран сарнă урай та шап-шуррăн йăлтăртатса выртать, лаçри хуранра та шӳрпе лăкăртатсах вĕрет... Çимунпа арăмĕ пахчара пуç çĕклемесĕр çĕрулми купалаççĕ.

Ытла та сиплĕ пулчĕ-çке ку чăхăпĕли тени. Кине тинех юрама вĕрентĕм», — хĕпĕртӳллĕн пăхса тăчĕ Укахви вĕсем ĕçленине.

Аслăк тăрринчен вĕçсе аннă шурă чăх, хуçи тавра кускаласа, чарăнма пĕлмесĕр юрларĕ: кă-кă-кă... ăхă-хă.

# ШĂЛАВАР

Яка Якку ачаранпах самăр пурнăçа хăнăхрĕ. Пĕр ывăл пулнăран-ши, ашшĕпе амăшĕ ăна вĕçĕмсĕр шукăллентерчĕç. Ура тупанĕ лапшака пулнăран вăл салтакран тăрса юлчĕ, ефрейторсемпе старшинасен урокĕсене вĕренеймерĕ. Авлансан тин амашĕн чĕрçиййĕ çинчен анчĕ. Арăмĕ те турă çырнă евĕрех тупăннă тата, «ман Якку та сар Якку» тесе çеç ташласа тăрать. Вĕренме ăс-хакăлĕ çитнĕ ĕнтĕ Яккун, кăкăрĕ çинче хи-итре ромбик çакса çӳрет. Еçне те çавна майлах тупрĕ.

Вăл вăраннă çĕре пурте хатĕр: арăмĕ апат пĕçернĕ, шăлаварне, кĕпине якатса çакнă, сăран пушмакне сăн курăнмалла çутатнă, пиншак-пальто тӳмисемпе çаккисене тĕрĕслесе хытарса тухнă, чăлхине ура вĕçне хурса панă, çăвăннă çĕрте питшăлли тытса тăрать. Сухал хырнă хыççăн та ăна одеколонпа арăмех пĕрĕхтерет.

Еçрен Якку каярах юлса таврăнкалать, час-часах командировкăсене шукалать. Таврăнсан, диван çинче хаçат вуласа выртать. Арăмĕ вара чĕп амăшĕ пек ун тавралла кукалет.

Ыйтма питĕ маçтăр вăл. Ирхине куçне уçсанах сӳрĕк сасăпа мăйлашать: «Хатĕр-и унта?» «Хатĕр, хатĕр, апачĕ те, пурте хатĕр ман Яккуçăм, сар Яккуçăм»,— хыпăнса ӳкет арăмĕ.

Пĕррехинче, ирхи автансен сассипе килне аран-аран çитсе ӳкнĕскер, çутă çутмасăрах хывăнса выртрĕ. Еçе каймаллипе, мухмăр тарне шăлса вăранса кайрĕ. Куçне сăтăркаласа уçрĕ те кăшкăрса ячĕ: «Хатĕр-и унта?!»

Анчах никам та сас-хура кăлармарĕ. Пÿлĕмре пĕччеnех иккен. Унтан каллех çухăрчĕ: «Хатĕр-и? Шăлавара якатнă-и?»

Кĕç алăк уçăлчĕ те, арăмĕн куççуллĕ пичĕ курăнчĕ. «Ме, тăхăн! Çакăнпах ĕçе кай. Ан та кил, ун патĕнчех пурăн!» тесе вăрнн! печĕ вăл Яккăва лапсăркка шăлаварпа питĕнчен. Минренĕ сурăх пек пулса кайрĕ Якку. Тытса пăхрĕ шăлавара — хăйĕн мар, еркĕн майрин. Çĕрле йăнăшпа тăхăнса килнине туйса илчĕ те, шифоньертан тепĕр костюмне кăларчĕ.

Есĕклерĕ-ĕсĕклерĕ арăмĕ, уйăхран лăпланчĕ. Çемье каллех пурнăç картине ларчĕ. Пурнăçĕ вара йăлтах улшăнчĕ. Яка Якку халĕ ĕçрен вăхăтра таврăнать, шăлаварне те хăех якатать, пушмакне те тасатать, татăлнă тÿмине те çĕлет, арăмĕн тумтирне те типтерлет, ун тавра йăкăштатсах çÿрет.

Хăвакла çапла упăшка тарçинчен хăтăлчĕ.

# КĂВАКАЛ КÿЛЛИ

Сальнов Ўпре хулинче ырă курса пурăнатчĕ. Хăйĕнчен çÿлерех пуçлă юлташĕсем Ахванеç Аверьяновича пĕррехинче куçкĕретĕнех йĕппе чикнĕ пек тĕксе илчĕç.

— Чĕннĕ хăни те, чĕнменни те килсех тăраççĕ,—терĕ хулăн саслă Аслатин,— çынла пăхма вĕренсе çитеймерĕмĕр ĕнтĕ вĕсене. Кăмăлĕсем тулаймаççĕ пулас, хытăрах та хытăрах хĕстереççĕ. Шухăшласа пăх-ха эп мĕн калас тенине, ăслă-пуçлă шухăшла.

— Шухăшласа пăх, Ахванеç,— лăхлатрĕ хулăн сасли хыççăн чи малтан сăмах илекен Самсон Силантьевич Чинов,— хисеплĕ Андрей Ванифатьевич ăс панă пек çĕмĕрттер пуçна, картлантар çамкуна...

Вĕсенчен яланах ик-виç утăм каярах пыракан Павел Иванович Спинов пăшăл-пăшăл турĕ Сальнова хăлхаран:

— Пурăна киле тем те пулса тухма пултарать, така мăйраки те çамкана ан шăйăрттартăр, çăвăр автан та пуç тăрне ларса кукареку ан тутăр тесен, сана эпĕ те вăрттăн ăс парас тетĕп. Урăхларах майлаштармалла апатсене. Шаннă сана эпир, çĕмĕрттер, çук япаларан пур ту. Камран хăран хамăр чĕрĕ чухне? Пăх-ха, епле мăнаçлăн утаççĕ вĕсем — Аслатинпа Чинов...

Çапла Сальнов аслăраххисен сĕнĕвĕсене тĕп-тĕрĕс ăнланса, вĕсене пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Çĕр чавакан, купалакан, турттаракан хăватлă машинăсен хуçисене тата строительсене алла илчĕ вăл малтан. Хăйсем те, така-автан яшки пĕçернĕ чухне кăвайтă хума юратаканскерсем, Сальнов хушни-ыйтнине хапăлласах йышăнчĕç. Мăч! хупать те Ахванеç Аверьянович куçне, вăрман витĕр авкаланса юхакан Явкаланчăк шывĕ пĕвеленет. Тепре мăчлаттарать те куçне, пĕве çумне икĕ хутлă чаплă çурт эрнерех ÿс-


СУНАРҪӐ КЕРМЕНӖ

се ларать. Ҫуртне илемлетме аякри хуларан ятарласа художник тытрĕҫ. Упа, тилĕ, пакша, хур-кăвакал ӳкерсе тултарчĕҫ стенасем ҫине. Тул енне, ҫӳле, пăлан майраки вырнаҫтарчĕҫ, ун айне йăлтăркка сăрăпа «Сунарҫă керменĕ» тесе ҫырса ҫапрĕҫ.

Ҫĕн пӳрт ĕҫкине Аслатин хăйĕн хăнисемпе кĕрлеттерсе ҫитрĕ.

— Пирĕн пурнăҫра,— мухтанчĕ Андрей Ванифатьевич,— ĕҫлеме кăна-и, канма та ăс-пуҫ кирлĕ. Ҫак вăрман уҫланкинче, тăптăрă пĕве хĕрринче кайăксем юррипе киленнĕ хыҫҫăн камăн ĕҫкленмĕ вăй-хал ҫĕнтерӳ тума! Ҫак ырлăха пире Сальнов туса пачĕ. Ахванеҫ Аверьянович пултарулăхĕшĕн!..

Чăн-чан, чăн-чан! саланать вăрман тăрăх чиркӳ чанĕ пек янăравлă сасă.

Аслатин шухăшне виҫ ҫухрăмран туйма вĕренсе ҫитнĕ Сальнов мухтанчăк ĕмĕтпе тата чаплăрах тĕлĕнтермĕш планĕ турĕ. Сунарҫăсен ушкăнĕн пуҫлăхне Мирун Йăлялова хăйĕн иккĕмĕш машинине шанса пачĕ. Йăлялов кăвакал чĕппи, ылтăн тĕслĕ карп, комбикорм турттарать кӳлĕ хĕррине. Сунарҫăсен ушкăнĕ те хăвăрт ӳссе кайрĕ. Ҫĕр чавакан, купалакан, турттаракан хăватлă машинăсен, строительсен пуҫлăхĕсем, кăвакал-пулă ĕрчетекенсем, комбикорм авăртакансен хуҫисем умлă-хыҫлă заявлени пырса пачĕҫ. «Ни каялла, ни малалла» пĕрлешĕве ертсе пыракан Варриев та, тем сиснĕн, Мирун ҫумне ҫыпăҫрĕ, ăна ялан «пĕр курка сăрапа» хăнала пуҫларĕ.

Утă ҫулма тухиччен Аслатин ухутана персе ҫитрĕ. Пăшалне Чинов ҫакнă.

— Мĕнле-ха унта? — ыйтать Аслатин хăйне хирĕҫ чупса тухнă Сальновпа Йăляловран. — Ӳсрĕҫ-и кăвакалсем?

Ахаль те макăрса каласакан Сальнов пушшех йӳссе кайрĕ:

— Андрей Ванифатьевич, пĕчĕкрех-ха халь вĕсем, тути-масипулас ҫук. Акă, сумкăра тăп-тулли кăвакал-чăх...

— Ухутана килнĕ ҫын сумкăри кăвакала ҫиет пуль,— айăкран кăлт тĕкрĕ ăна Чинов. — Авă епле ишсе ҫӳреҫҫĕ вĕсем, карти-картипе.

Лап выртрĕ ҫав самантрах Аслатин. Ун хыҫҫăн пурте ҫыран хĕррине тăсăлса ӳкрĕҫ. Аслатин ҫумĕнче Чинов йăшăлтатать, ун пăшалне авăрлать.

— Андрей Ванифатьевич,— пӳрнипе кăвакалсем еннелле кăтартать Чинов,— вăн, ҫав варринче ишекеннине тĕллĕр, пуҫĕпе мушкăна, унтан ҫакна пĕр йĕр тăвăр та, аялти ҫаклашкаран туртăр.

Кăрст! янăраса кайрĕ вăрманта. Кăвакалсем чăл-пар саланчĕҫ. Кăрст! Кăрст! тутарчĕҫ Сальновпа Йăлялов. Шыв тĕкĕрĕ ҫине виҫĕ кăвакал пуҫĕ усăнчĕ.

— Кусене сирĕн ятпа персе антартăмăр,— йĕпе кайăксене Аслатин ури пуҫĕ умне пырса хучĕ Мирун. — Ӳпрене илсе кайса кăтартăр.

— Чăнах та,— савăнса ӳкрĕ Аслатин.

— Пĕр кăвакал та пулин ҫухалсан сана! — юнаса хăварчĕҫ Мируна Чиновсем. — Аякри хăнасем валли куҫ шăрҫине сыхланă пек сыхла.

Ҫĕр купалакан техника пуҫлăхĕсем килме пуҫласан, пăшал сассипе стена ҫинчи упасем те чĕрĕлсе ташларĕҫ. Мирун Йăлялова та килĕшрĕ ку пурнăҫ, пĕр кун та урăлса кураймарĕ. Лешсем ҫук чух, мухмăрпа аптăраса, ҫывăхри яла ермешрĕ.

Явкаланчăк тăрăхĕ кĕҫех ҫава-лапатка сассипе тулчĕ, таврана тĕтĕм сарăлчĕ. «Ни каялла, ни малалла» пĕрлешӳ хуҫи Варриев

та, хула хĕрринче пурăнакансkер, ятарласа отпуск илсех хăйĕн ĕни валли эртелпе утă хатĕрлеме килчĕ. Утă çулса ывăнаççĕ те вĕсем, кăвакал, пулă тытаççĕ. Вĕсене кура ытти ушкăнсем те кăвакалсене çавапах çулма пуçларĕç. Пĕвере нарт-нарт туни хуллентерехххĕн те хуллентерехххĕн илтĕнет.

Мирун ялти еркĕнĕ патĕнчен таврăннă çĕре шыв çийĕ тап-тасахчĕ, çаран та Самсон Силантьевич пуçĕ пекех шаклаччĕ. Сунарçă керменне Варриев пырса кĕчĕ. Утă тиеме килнĕ иккен вăл.

— Мĕн пуçна усрăн, Мирун? — шахвăртса ыйтрĕ хăна. — Ташла эрех пур чух. Çыртмалли хатĕрле.

— Мĕн çыртмалли-çимелли пур çак манăн,— лайăхмарланчĕ Мирун,—кăвакалсене такам мурĕ пĕçертсе кайнă. Аслатинсем пĕтереççĕ ĕнтĕ мана халь... Аçта кайса кĕрес?

Керменте юмахласа ларнă вăхăтра Варриев Мируна ăс парса хăварчĕ:

— Енчен те хытах хĕссен, кăвакалсем кайăк кăвакалĕсемпе иленсе вĕçсе кайрĕç, те. Ятлăх ялтан икĕ-виçĕ пуç йăкăртса кил те вĕсем валли, çитет. Еçрен кăларассинчен ан шиклен, хам кунтинчен те лайăх вырăн тупса паратăп.

Çапла турĕ те Йăлялов. Сунарçăсем килнĕ тĕле унăн пĕвере кăвакал аçипе икĕ ами кăмăллăн нартлатса ишетчĕç.

— Çаксем çеç юлнă-и вара? — вĕсене ăмăртмалла персе антарнă хыççăн умлă-хыçлă ыйту пачĕç ăна.

— Çуккă та пуль çав урăх,— кулянnă пек пулса çыраналла пăхрĕ Мирун. — Кăвакал сыхласах чĕре ыратакан пулчĕ. Вĕçсе килеççĕ çапла ик енчен кайăк кăвакалсем, ишеççĕ-ишеççĕ те хамăрăннисемпе, хăйсемпе пĕрлех илсе кая...

Сăмахне каласа пĕтерейменрĕ Мирун, кăвайт патнелле çывхаракан хĕрарăмран хăраса Чинов хыçне пытанчĕ, унтан Спинов хыçне тĕршĕнчĕ. Урнă хĕрарăм кăшкăрса-çухăрса, хĕмленсе ăна çыраналлах сирпĕнтерсе антарса ячĕ. Шампăрт!—илтĕнчĕ аялта.

— Вил! Кăлармас сана кунтан,— аллинчи туйипе печĕ Мируна хĕрарăм. — Ман патра суйса пурăнтăн та, халь кăвакалсене вăрласа кӳптеретĕн-и çак мăн хырăмсене? Çунтарап та ярап, ак кĕрт çуртне. Суеçĕ. Милицие пĕлтереп.

Йăлялов сулахай çырана ишсе тухрĕ те, тункатa çине ларса, хĕрарăма чĕлхе кăларса кăтартрĕ. Хĕрарăм пушшех асса кайрĕ. Чиновсем аран-аран лăплантарчĕç ăна. Кăвакалсемшĕн Сальнов укçа тӳлерĕ. Пӳрт юсама йывăç тупса парсан, ыттисене укçасăрах илме пултаратăр, терĕ инке. Килĕшрĕç.

Хăйне пӳрт çĕнетсе паратпăр тенине ĕненнĕ хĕрарăм Ӳпрене хавасланcсах çитрĕ, тӳрех Аслатин патне кĕчĕ. Андрей Ванифатьевич ăна йышăнчĕ, анчах та пӳрт пирки инкене Чинов патне ячĕ. Чинов — Спинов патне. Спинов уйăрса панă йывăç пĕтнĕ, кăшт кĕтмелле-ха, тесе суйрĕ. Инке йывăç пулсанах килме пулчĕ. Килчĕ. Хальхинче Спинов, ку ыйтăва хам татса параймастăп тесе, хĕрарăма Чинов патне ăсатса ячĕ, Самсон Силантьевич инкене каллех каялла çул кăтартрĕ. Аптăрарĕ çын, утрĕ-утрĕ хула урамĕсемпе, ункă вĕçне тухаймарĕ. Инке Спинова юлашкинчен çапла каласа хăварчĕ:

— Тытатăп та суда паратăп сире, кăвакал вăррисене. Суйса улталарăр тăлăх хĕрарăма. Сирĕн Явкаланчăкра кермен тума та, тем тума та тем те пур. Ман валли кăна çук. Пĕлетпĕр эпир сире.

Сучĕ-качки хĕрарăм чĕлхи çинчех пулса иртрĕ, анчах та çăхав текенни кирлĕ çĕре вĕçсе çитрĕ-çитрех. Хăйне хăртни-вăрçнишĕн Аслатинсемпе Чиновсене тавăрас шутпа кӳтсе çӳрекен Варриев

тинех майлă самант тупрĕ. Инкепе Йăлялова вăл çăхав çырма питĕ тăрăшса пулăшрĕ.

Чиновсем те, ĕç шалалла кĕрсе кайиччен, часрах татăклă мерăсем йышăнчĕç. Сальнова тăваткал сĕтел умне пырса тăратрĕç.

— Шухăшласа пăх, Ахванеç Аверьянович,— хуллен сĕререх пуçларĕ Самсон Силантьевич, — Кăвакал кӳллипе Сунарçă çуртне кам хушнипе, мĕнле приказпа, ăçти укçа-тенкĕпе тутарнине аса ил-ха? Ан пытар, тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пар.

Ахванеç Аверьянович кулса ячĕ:

— Ан мăшкăллăр-ха манран. Ара, эсир хăвăрах така аяк пĕрчипе автан тукмакки кăшласа ывăнтăмăр тесе пăшăрханаттăрччĕ-çке?.. Халĕ тата мĕн пулчĕ?

— Вăт мĕн,— куçран чăрр пăхрĕ Спинов,— шухăшласа пăхма çеç калана сана, ăс-пуçпа шухăшлама сĕннĕ. Ăнлантăн-и?

Кăвакал сăмси пек хĕрелсе-хĕрелсе пычĕ Сальнов, унтан пукан çине лак ларчĕ.

— Начар, начар, Ахванеç Аверьянович,— пӳрнипе сĕтеле шакăртаттарса ларчĕ Чинов. — Ĕç начар пырать сан. Кăвакал кӳллипе ытларах айкашатăн. Пуç тăрринче пуртă çакăнса тăни аван мар та... Шухăшлас пулать, урăх ĕç пирки шухăшлама тивет, ăс-пуçпах...

Сальнов çамкине ку таранччен така мăйраки лексе те шăйăрманччĕ, çăвăр автан та пуçĕ тăрне ларса авăтманччĕ. Явкаланчăк шывĕнче çеç урине шăнăр туртрĕ. Çапла вĕçленчĕ Кăвакал кӳллин историйĕ Ӳпре хулинче.

# ЧЕЙ—ЛАЙĂХ ПУРИНЧЕН

Уçăп Васильевич чейпе питĕ туслă. Унсăр вăл пурăнма та пултараймасть. Арăмне те кашни ирех: «Марье, Марьюшка, чей вĕретме лартатăнах пуль»,— тет. Киленсе, майĕпен ĕçсе ларать вара. Яланах — ик-виç стакан. Çакăн хыççăн ĕçе те кăмăллăн тухса утать.

Вăл кун Марье килте пулмарĕ. Çавăнпа та Уçăп Васильевич каçхи апата ресторанта тума шутларĕ. Меню çине вăл чылайччен пăхса ларчĕ, официантка пырсан, заказ пачĕ. «Астăвăр, чейĕ вĕрирех пултăр»,— чиперкке хĕре часрах тепĕр хут асăрхаттарчĕ вăл.

Апат килсе те çитрĕ. Уçăп Васильевич тути хĕррине шăлкаласа илчĕ те çиме пуçларĕ. Сылтăм аллинчи çĕçĕпе аш татăккине пĕчĕккĕн касать те, сулахай аллинчи вилкипе ăна меллĕн хыпать. Чей стаканĕ çине темиçе хутчен те кăмăллăн пăха-пăха илчĕ вăл, сыпма тесе аллине тăсăнччĕ çеç...

— Кама куратӑп эпӗ. Уҫӑп! — тесе кӑлт пырса тӗкрӗ ҫак самантра ӑна пӗр ҫын.

Шкулта пӗрле вӗреннӗ тусӗ иккен. Вӑл тӳрех официанткӑна чӗнчӗ.

— Сире мӗн? — ыйтрӗ хӗр.

— Ҫӗршер «московски», икшер курка сӑра...

Уҫӑп Васильевич хирӗҫлеме пӑхрӗ, юлашкинчен ирӗксӗрех килӗшрӗ. Ҫын умӗнче аван мар тесе вӑл чейне тутанса та пӑхмарӗ, пысӑк куркари сӑрана пӗчӗккӗн сыпа пуҫларӗ.

— Эрехӗ сивӗрех, чей хутӑштарас,— терӗ юлташӗ.

— Ан ухмахлан-ха,— алӑ сулчӗ Уҫӑп Васильевич.

Тепӗр заказ пачӗҫ, унтан — татах... Палан пек хӗрелсе кайрӗҫ, чӗлхисем те картран вӗҫерӗнчӗҫ. Уҫӑп Васильевич хӑй чей ытларах юратни ҫинчен юлташне ҫине тӑрса тӑнлантарчӗ. Ресторана хупма вӑхӑт ҫитсен тин туссем тайкаланса тухса кайрӗҫ.

Чей ҫеҫ арӑш-пирӗш сӗтел ҫинче пушӑ куркасемпе черккесем хушшинче тӑлӑххӑн ларса юлчӗ. Официантка стакана чашӑк-тирӗк ҫӑвакан пӳлӗме кайса пачӗ. Чашт! сапрӗҫ чее таса мар шыва.

Тепӗр кунне Уҫӑп Васильевич каллех ресторана апатланма ҫитрӗ. Мухмӑрла пулсан та эрех ӗҫме шутламарӗ, каллех чей илчӗ.

— Чейне вӗрирех парӑр! — темиҫе хут асӑрхаттарчӗ вӑл хӗре.

Кӗтсе ларнӑ май Уҫӑп Васильевич ӗнерхине аса илме тӑрӑшрӗ. Алӑк патне ҫитнине лайӑххах астӑвать. Малалла вара... Ирхине милицире вӑранса кайнӑ. Килте арӑмӗ ҫиет, чей вӗретсе пама ыйтсан, ҫатма аври кӑтартрӗ. Ӗҫлекен вырӑна пӗлтереҫҫӗ ӗнтӗ... Тем тумалла халӗ унӑн?

— Тархасшӑн, акӑ,— виҫӗ стакан вӗри чей лартса пачӗ официантка.

Питӗ тутлӑн, тарласах ӗҫрӗ Уҫӑп Васильевич.

— Ах,— терӗ вара,— ҫын эрехне ытараймасӑрах пӗтрӗм, чейрен ырри нимӗн те ҫук ҫав.

# ПИҪМЕН ПАШАЛУ

Пурнан пурнӑҫра ҫын ӑҫта кӑна ҫитмест, мӗнле-мӗнле ӗҫ тумасть пулӗ. Эпӗ те ҫапла, ҫамрӑк чухне, радиона лекнӗччӗ. Унта алӑра ручка-кӑранташ вылятни ҫеҫ ҫителӗксӗр, тап-таса чӗлхепе хӑюллӑн та уҫҫӑн калама, пӗр-пӗр ҫын сассине магнитофон ленти ҫине ҫырма ӑста пӗлмелле. Ӗҫе илес умӗн мана шӑпах ку енӗпе тӗплӗн тӗрӗслерӗҫ. Редакци пуҫлӑхӗ колхоз председателӗ вырӑнне пулчӗ, аллинчи шлепкине ҫавӑрттаркаласа, пӳлӗм тӑрӑх каллӗ-маллӗ утма тытӑнчӗ. Эпӗ унран, ыйтусем пара-пара, интервью илетӗп. Калаҫу пӗтсен, вӑл мана, ҫурӑмран лӑпкаса:

— Шăллăм, чăвашра çĕнĕ репортĕр çурална ятпа саламлатăп. Хăюллă, вăр-вар пул, пĕлнĕ çулпа хастар чуп,— терĕ.

Хĕрĕхсене çитме пуçланă, лапчăкрах питлĕ, пуклак сăмсаллă, хĕрлĕ çӳçлĕ, клеще ураллă Кадров, редакци корреспонденчĕ, пуçлăхĕ мана мухтанăшăн кĕвĕçрĕ-ши, кавăн пек пуçне пăрса, симĕс куçĕпе кăнн! пăхрĕ те ман еннелле, çапла каласа хучĕ:

— Тăхтăр-ха, çуралман тиха çине утланар мар, хăй тĕллĕн ĕçлеме пуçличчен халь пайтах тар тăкмалла, паркра хурăн шывĕ юхтарма вĕренмесĕрех темле-ха...

Хурăн шывĕ тенĕрен, эпĕ ăна-кăна тавçăрса илеймесĕрех урама тухса чупрăм. Çывăхри парк тăрăх çӳремерĕм, лавккарах туянтăм вăрман шерпетне. Сумкăран сĕтел çине кăларса лартнă виçĕ литр кĕрекен кĕленче савăта курнипе редакци пуçлăхĕн куçлăхĕ çамки çинех хăпарса ларчĕ, корреспондентне лăкăртăк ерчĕ...

Хамăн йăнăша эпĕ каярахпа тӳрлетрĕм, вĕсене урăх йышши «хурăн шывĕ» юхтарса патăм. Çапах мана магнитофонпа ĕçлеме шанмарĕç-ха, хăнăхтараççĕ те хăнăхтараççĕ. Вĕçĕмсĕр çӳретпĕр Кадровпа ял-ял тăрăх. Вăл малта, аллисене çурăм хыçне тытса, хуçалла саркаланса пырать. Эпĕ ун магнитофонне, самай йывăрскерне, йăтнă. Сысна пăхакансен, ĕне сăвакансен, тырпул ӳстерекенсен паттăрлăхне эфира сапалатпăр.

— Кадров! — терĕ пĕррехинче редакци пуçлăхĕ. — Праçник çывхарнине туятăн-и? Репортаж кирлĕ. Тулăх пурăнакан çемьене калаçтарас пулать...

Мана та унпа пĕрле ячĕ хайхи. Çитрĕмĕр Çăлкуçне. Шыраса тупрăмăр хăтлă çемьене. Ял Советĕнче каланă тăрăх, вĕсен килçурчĕ те, пурнăç пуянлăхĕ те, ватти те, вĕтти те пирĕн ыйтусене тивĕçтермелле пек ĕнтĕ.

Ултă кĕтеслĕ çурт умĕнче чарăнтăмăр та вырăсла хапхаран кĕтĕмĕр.

— Акă мĕн,— симĕс куçне мăч хупрĕ Кадров. — Репортаж картишĕнчен пуçланать. Уç-ха магнитофонна, кăлар микрофонна. Пуçла çырма!

Эпĕ вăл хушнине тăрăшсах тăватăп. Сурăх макăрчĕ — ăна çыртăм. Витерен тухнă ула ĕне пуçне силлес-му-улатрĕ. Сасă — лента çинче. Аслăк тăррнчен кăтиклесе вĕçсе аннă чăх та çырăнчĕ унта. Чĕвĕлти çерçисем те юлмарĕç.

— Йытă хамлатни çитмест-ха,— картишне пăхса çаврăнчĕ Кадров. — Усрамаççĕ-шим вĕсем нимле Улайкка та? Темех мар-ха ку, кӳршĕре те çырса илме пулĕ анчăка е хамăр фонотекăрах сасă шыраса тупăпăр. Кĕрер пӳрте.

Пит тарават кĕтсе илчĕç пире кил хуçисем, тĕпелелле иртме чĕнчĕç, сĕтел хушшинех кĕртсе лартрĕç.

— Ĕç вăл шапа мар-ха, шыва сикес çук, тутă хырăмпа тулăх пурнăç çинчен пуплеме те кăмăллă,— терĕ те Кадров, апата пикенчĕ.

Ял çынни Шупашкар хăнисемшĕн нӳхрепре мĕн пуррине йăлтах кăларса лартрĕ тейĕн. Сĕтелури авăнать пуль. Кадров, пыл кăрчами тутана-тутана, самай хĕрчĕ курăнать, хăлаçлансах калаçа пуçларĕ:

— Эсир, ырă тăвансем, пирĕн кăмăла пула, эфирта янăрăр. ак. Кĕçех пĕтĕм тĕнче илтĕ сире. Кил-ха кунта, шĕвĕркке? Мĕн ятлă эс?

— Раман,— терĕ сĕтел çӳллĕш ача, сăмсине нăшлаттарса.

— Никамран та хăраман апла? Çырас, сначăт.

— Паллах, хăрама çуралман.



— Пурнăçа юрататăн-и эс?

— Юратап. Çупа çăкăр та юратап. Аннепе аттене те, асаттене те, Миркăна та...

— Во, епле ăслă ача ӳстеретĕр эсир! Мухтанас пулать унпа.

Кадров кĕçех Раман ашшĕне тĕпчеме тытăнчĕ:

— Йĕркипе хушаматна, ятна, аçу ятне асăнса тух-ха? Арăмна та ан хăвар. Çырма çăмăлрах пултăр.

— Аврорин Тельман Иванович,— шкул ачи пекех ответлерĕ лешĕ,— арăма Октябрина Васильевна тесе чĕнеççĕ.

Кадров савăннипе çунатсăрах пĕлĕте вĕçме хатĕр ĕнтĕ, вĕсене ыталаса чуптуманни çеç юлчĕ.

— Вăт телей-тĕк телей! — çатăлтатать хăй. — Пĕр çак ятсене асăнни репортажа çĕклентерсе ярать. Çырар малалла. Сначăт, эсир çуралнăранпах Çăлкуçĕнче пурăнатăр. Лайăх. Авланнăранпах ача-пăча ӳстеретĕр. Маттур. Пĕри трактористра, тепри фермăра вăй хуратăр. Аван. Уява ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илетĕр... Юрĕ, юрĕ, миçе гектар суха туни, миçе литр сĕт суни кирлех мар. Цифра радио чĕлхине пăсать. Ахаль те паллă эсир ĕçченни. Çитĕ сире чăрмантарса. Аслă ăру çыннине итлес. Ватти пуçĕнче ылтăн, чĕлхинче кĕмĕл пулакан.

Аслă кил хуçи, шур сухаллă, шакла пуçлă, курпунланнă мучи, Кадров çине куç айĕн пăхса йăлл! кулчĕ те, ăна курка тыттарчĕ. Корреспондент, кăрчама ĕçнĕ май, старике ыйту хыççăн ыйту пама тытăнчĕ:

— Хăçан çуралнă эс, мучи?

— Иртнĕ ĕмĕртех çав. Пурнап-ха пурпĕрех айланкаласа.

— Чăнах-и? — сиксе тăчĕ Кадров. — Тĕлĕнмелле çын-çке пирĕн умра!

— Ара, ма суяс ман. Ак хĕрес хурса калап. Çĕн ĕмĕр пуçланнине те, тĕнчери çĕн самана хĕвелĕ тухнине те хам куçпа хам курнă.

Сапаланнă хĕрлĕ çӳçне каялла шăлчĕ те Кадров, кушак куçĕпе мучи еннелле пăхса:

— Сначăт, так,—терĕ,—пуçларăмăр çырма. Ман хыççăн каласа пыр, атту такăнма пултаратăн. Эпĕ, те.

— Эп.

— Иван Александрович Аврорин, те.

— Эп, Йăван Сантăрч Аврурин...

— Юрĕ, кун пек те кайĕ ват çынна, иртнĕ ĕмĕрте çуралнăскерне, ун чухне ликбез пулман. Малалла çапла кала: пин те сакăрçĕр тăхăрвун пиллĕкмĕш çулта Çăлкуçĕнче çуралнă.

— Çăлкуç хыçĕнчи сĕлĕ ани пуçĕнче çулла çуралнă, — тӳрлетсе каларĕ мучи.

— Та-ак, çуралнă, тейĕпĕр,— кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ ĕнсине репортер. — Унтан мĕн турнă?

Мучи аптăранипе шакла пуçне сăтăрса илчĕ, сиввĕнрех хуравларĕ:

— Мĕн тăвать ĕнтĕ çуралнă ача. Пыр каниччен çухăрнă, чĕчĕ ĕмнĕ те паппа тунă. Ӳснĕ май суха тунă, авăн çапнă, пашалу çинĕ. Салтак ячĕ тухнă та алла пăшал тытнă, кайран революцие хутшăннă, кăлхуса кĕнĕ, авланнă та ача тунă. Ватăлнă та кăмака çине улăхнă. Туршăн та, хĕвелшĕн те калатăп — урăх нимĕн те туман. Тархасшăн ан нушалантарăр мана урăх.

Мучи çумне çилĕмле çыпçăннă репортер пурпĕрех уйрăлмасть, вĕçĕмсĕр ыйтать:

— Питĕ чаплă пурнăç çулĕ сан, мучи. Халĕ, Иван Александрович, çав çулпа иксĕмĕр пĕрле магнитофон ленти тăрăх ытак-

ланса утса тухар-ха? Так, сначăт, çуралнă, тейĕпĕр. Мĕнле сасăпа кăшкăрнă-ха эсĕ вăл вăхăтра, мучи? Асту-ха? Так, шăпăрт ыттисем! Çыратпăр.

Мучи çăварне уçма ĕлкĕрнĕччĕ çеç, чатăр хыçĕнче ыйхăран вăраннă ача сасси илтĕнчĕ: у-аа! у-аа!

— Прекраснă! — аллисене саркаларĕ Кадров. — Мĕнле çухăрни паллă. Так, сначăт, чĕчĕ ĕмни те паллă. Мучи, итле-ха, мĕнле пашалу çинĕ эс ун чухне? Çакă та пит кăсăклантарать пире.

— Мĕн?.. Мĕнле пашалу, терĕн-и çак? — лăх-лăх кулчĕ мучи. — Сĕлĕ пашалăвĕ, ара...

— Юрĕ,— аллинчи тулли куркана пушатрĕ Кадров.—Хамăртан çапла çырса хурăпăр. «Сначăт, сĕлĕ пашалăвне пиçнĕ-пиçмен çăвара персе хыпнă та, хулпуççи çине çурла хурса, уя тырă вырма тухса чупнă».

Ывăлĕпе кинĕ хăналаççĕ те хăналаççĕ ман вĕрентекенĕме. Хушăран вăл кăрчамине хăех ярса ĕçет. Чĕлхи те сӳтĕле пуçларĕ, пуçĕ те усăнма тытăнчĕ ĕнтĕ, хăй пур, çаплах ыйтать-ха:

— Тем те тунă... терĕн эс, мучи: революци те... колхоз та... ача та... Пĕлесчĕ, ммиçе ачана... ççитертĕн?

— Эп мар, карчăк тунă ачисене, улттă тан. Киле кĕçĕнни çеç юлнă. Акă вăл — кур,— ăнлантарчĕ старик Кадрова. — Пурăнатпăр çапла, халăхпа тан тенĕ пек...

— Пур-нат-пăр, пур... сначăт. Авврор... Ок-тяб-рина, Тель... репор... таж, кăрч... — пушшех уçăмсăррăн мăкăртатрĕ ман вĕрентекенĕм, унтан сĕтел çине пуçне лăнк! ӳкерчĕ.

Мучи тинех хашлатса сывласа ячĕ. Пуçне пăркаларĕ те:

— Вăт, пиçмен пашалу!.. — тесе хучĕ.

# ВИÇ СĂМАХ

Дария Даниловнăна пысăк заводра пурте пĕлекен пулса çитрĕç. Пĕлмесĕр, хуть мĕнле пухура та сăмах тухса калать-çке вăл. Унăн кашнинчех пĕр ыйту:

— Мана та виçĕ сăмах калама ирĕк парсамăр?

Ана никам та хирĕçлемест, трибуна умне кăмăлпа кăлараççĕ. «Докладчик те, тухса калакансем те кунта питĕ лайăх палăртрĕç. Çапах та тепĕр хут тарăннăн чарăнса тăрасшăн эпĕ...»

Ялан çапла пуçласа ярать Дария Даниловна. Хăй вара докладчик каланине йăлтах тепĕр хут асăнать. Унта тухса каланисен сăмахнех айăн-çийĕн çавăрттарать.

Ытла нумай пакăлтатнăран президиумра ларакансем графина çине-çинех шаккаса илеççĕ. Вăл, ниме пăхмасăр, шав малалла калать.

— Çитет, кусене паçăрах каларĕç ĕнтĕ,— асăрхаттараççĕ залра ларакансем.

— Эпĕ тĕрĕссине калатăп, мана ан чарăр,— пушшех хĕрет Дария Даниловна.

Доклачĕ çур сехете пулсан, вăл вара пĕр сехет тăрать трибуна умĕнче.

Кашни пухура хывăх авăртни хăшĕсене йăлăхтарсах çитернĕ.

Шухăшласан-шухăшласан, май тупаççĕ хайхи. Кашни пухурах ăна протокол çырма хушакан пулчĕç. Вĕçĕмсĕр çырать вара.

Хăшĕсем юриех шӳтлесе:

— Тен, Дария Даниловна виç сăмах тухса каласшăн?—теççĕ.

— Калаймастăп, пушă мар-ха эпĕ,— тет вăл пуçне çĕклемесĕр.

# КАНĂÇ ПУРНĂÇ АНĂÇĔ

Иккĕшĕ те вĕсем — тантăшсем, пĕр ялта çуралса, вăтам шкултан пĕрле вĕренсе тухнăскерсем. Валя-Валентина колхозрах сысна пăхма юлчĕ, Аля-Альбина хуланалла тапрĕ. Унтанпа самай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Иккĕшĕ те пурпĕрех куçа-куçăн тăрса калаçаймаççĕ-ха. Пĕтĕм шухăш-туйăмне вĕсем çырупа пĕлтереççĕ. Валя-Валентина тантăшне ял пурнăçĕпе, хуçалăх çитĕнĕвĕсемпе тăтăшах паллаштарать. Вăл хăйсен кӳршинчи хăва хулли пек яштака Вася-Василека качча тухнă, икĕ ывăл çуратнă, тава тивĕçлĕ ялхуçалăх ĕçченĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă, хăй тĕллĕн зоотехника вĕренет, çĕн пӳртре çемйипе савăнса çеç пурăнать.

Валя-Валентина ĕçлеме çеç мар, çыру çырма та юратать пулсан, Аля-Альбина ачаранпах наян чирĕпе чирлет. Пурĕ те виçĕ çыру çеç ячĕ вăл ун патне.

ПĔРРЕМĔШ ÇЫРĂВĔ: «Хаклăран та хаклă тусăм! Пĕлес пулсанччĕ хулана лекнĕшĕн эпĕ епле савăннине! Вăрттăнлăха сана çеç уçса паратăп. Астăватăн-и яла театр килнине? Мана юратса пăрахнă Палля Палтунова та манман пуль-ха? Хулана çитсен, тӳрех çав артист тĕл пулчĕ. Ыталаса илчĕ те мана вăл пилĕкрен, никамран вăтанмасăрах чуптурĕ. Тута хĕррисем халĕ те пĕçерсе тăраççĕ.

Артистпа çӳресе хам та чутах артистка пулса каяттăм. Массăллă сценăсенче выляса та куртăм. Палля тусĕ, çăмламас пуçлă режиссер, тĕп ролех парасшăнччĕ те, хам килĕшмерĕм.

Çапах та Палля Палтунова пĕлсе çитрĕм-çитрĕмех. Куккук иккен вăл! Виçĕ çĕрте виçĕ арăм ун. Ку мана самай пăшăрхантаратчĕ. Çапах пуçа усмастăп-ха. Нумай пулмасть пĕр шурсухал хама куç хыва пуçланине сисрĕм... Ун пирки каярахпа хыпарлăп».

ИККЕМЕШ ÇЫРАВЕ: «Çĕр хут салам сана, хаклăран та хаклă тантăшăм! Ялта лайăх, тетĕн-ха эсĕ. Эпĕ вара: хуларах, тетĕп. Ĕçлеме ăна, паллах, такам та пĕлет. Тар кăлармасăр ыр курма çеç... Эх, пурнăç та çав ман! Тĕлĕкре те курас çук эсĕ унашкаллине. Леш, хам хыççăн юртакан шурă сухаллă художник, Аристарх Апполонович, мана Палляран туртса илчĕ, хăйĕн мастерскойне вырнаçтарчĕ. Ман кĕлетке, сăн-пит мĕнлине хăвах пĕлетĕн. Тухса тăратăп та çапла ун умне... Вăл пур, умран та, аякран та ӳкерет мана, тĕрлĕрен портретсем тăвать. Выставкăна тăрататăп, тет. Ак хайхи, чапа тухасси те инçе мар... Укçа вара хăйĕн тем чухлех! Пĕр çитменлĕх çеç пур — ватă вăл. Анчах художник ӳкерсе илмелли кĕлетке çеç мар-çке-ха эпĕ? Кăтра пуçлă Кăмпа Çитăрĕ кăмăла каять-ха. Ĕçре тăрпапа выляканскер, килĕнче музыка сыраканскер...»

ВИÇÇЕМЕШ ÇЫРАВЕ: «Пин хут салам сана, ентешĕм! Эх, мĕнле ырăччĕ Аристарх Апполоновичăн кăмăлĕ. Тăрпач тимĕр пăрça пулсан, вăл — услам çуччĕ. Пĕтĕм пурлăхне, хваттерне, дачине, мĕнпур картинне мана халаллатăп, тетчĕ. Мал ĕмĕтпех йăпанса пурăнтăм унпала. Анчах, тăрпач пек кăтра çӳçлĕ ача çуралсан, ман художник, пурнăç шанчăкĕ, тытамак тытнă пек хутланса ӳкрĕ. Эрнеренех леш тĕнчене ăсанчĕ.

Аристарх Апполоновича питĕ чаплăн, музыкăпах пытарчĕç. Саван чухне эпĕ оркестр ушкăнĕнче мĕскĕннĕн утса пыракан Кампа Çитăрне курах кайрăм. Нимле композитор та пулман иккен вăл, тăйлăк-тайлăк оркестрта çеç ĕçленĕ... тăрпачра.

Художник мăнукĕ мана килне те, мастерской та кĕртмерĕ, алиментран хăраса, урăх хулана тухса тарчĕ. Тем, юлашки вăхăтра ăнмарĕ-ха ман пурнăç. Ĕненессĕм те килмест. Тин кăна çăтмахри пекчĕ. Халĕ ак... пурнăç анăçĕ... Ну, юрĕ, ун пирки кайран...»

Валя-Валентина урăх шутласа тăмарĕ, тантăшĕн çырăвĕсене чăр-чар çурчĕ те çунакан кăмакана пăрахрĕ — хут татăкĕсем самантрах кĕл пулчĕç.

# КАРТЛАШКА

Мĕнле картлашка çук пулĕ тĕнчере: чулран, йывăçран, тимĕрбетонран, çĕртен-тăмран туни... сарлаки те, ансăрри те, çӳлли те, лутри те. Пурне те вĕсене çын хăйĕн ĕçчен аллипе ăсталанă: çӳлелле улăхмаллине те, аялалла анмаллине те. Картлашка çине пусса курман çынна çĕр çинче тупма та çук пуль. Ахальтен танлаштарнă-и çын хăйĕн пурнăçне картлашкапа?

Чăн та, пурнăç картлашки пусма картлашки мар. Акă, пирĕн

ялти Вĕçкĕн Ваççапа Михвать Микулайĕ пĕр вăхатрах çуралса ÿсрĕç. Пурнăçĕ çеç пĕр килмерĕ вĕсен. Пĕчĕк чухне пусма картлашкипе паллашса хăшĕ пирвай сăмсине ватнă — аса илме йывăр. Анчах пурнăç картлашкинчен Вĕçкĕн Ваççа маларах таканчĕ.

Нишлĕ Ваççа мăйлама, çухăрашма, кутăнлашма юрататчĕ. Амăшне çаврака çăкăра тавралла кастарса тухтаратчĕ. «Ку чĕлли хулăн, ку çÿхе, кунта кĕл лекнĕ, варрине пар, çунăк, тепĕр енчине кас»,— тесе вăрăмтуна пек мăйлатчĕ сĕтел хушшинче. Амăшĕ аптранипе Ваççана çăкăра пĕтĕмпех тыттаратчĕ Пĕрене пуçне татса тунă кустăрмапа выляна пек çавăркаласа ларатчĕ вара ача çăкăра, куççульсĕр куçĕпе чалăшшăн пăхса, ăна киленсе кăшлатчĕ.

Пĕртен-пĕр ывăла амăшĕ ытла та чарусăрлантарса ячĕ пулмалла çав. Хĕрĕсене юнаса, хăтăрса çеç тăратчĕ: «Ах, Ваççана ан тăратăрах, ыйхи пăсăлать; çитĕ-ха сире уйрапа улма та, Ваççана тутлăрах туса парас; Ваççана макăртнă пултăр тулĕк сире...» Пĕр ывăл тени çапла ачашлăх чаршавĕ хÿттинче чăркăш та каппайчăк кăмăлпа çитĕнчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи çулсенче те пулин Ваççа нимле йывăрлăх та туймарĕ. Тути хĕрринчен çу татăлмарĕ ун. Çийĕнче те пирĕнни пек сăрра чикнĕ пир кĕпе-йĕм марччĕ. Çăпата тума та, ура сырма та вĕренеймерĕ вăл, атă-пушмакпа йăлтăрталтарса çÿрерĕ.

Пĕррехинче, амăшĕ пасара чăкăт сутма кайсассăн, аппăшĕсем Ваççана çум çумламашкăн уя илсе тухма шутланă. Вăратаççĕ, вăратаççĕ кăна, ниепле те вырăн çинчен тăратаймаççĕ. Тарăхнипе Улюн текенни тытать те шăллĕне кил хушшине илсе тухать. Малтанах мăйласа выртаканскер, лăкăртăкĕпе чыхăна-чыхăна тытăнать лешĕ: «Уль... уль... вĕл... лерет... ан... не... кал... ласа...» Хăй патне сывăха та ямасть, урисене çил арманĕ пек çавăрттарать. Амăшĕ çуккипе усă курса, Улюнĕ те парăнмасть. Ярса тытрĕ те вăл Ваççана аллисенчен, вăшт çеç çĕклесе тăратрĕ. Шăллĕ пурпĕр каллех лĕнчĕр кукленсе анчĕ. Çав вăхăтра амăшĕ çитсе кĕчĕ. Ваççа, çăлăнăç туйса, пушшех ÿлесе ячĕ: «Уль... Уль... çыв... рнă çĕртен... йăт... тух... пăрах... рĕ те ух... маха кăл... ларчĕ пул... Уль...»

Амăшĕ кутамккинчен сахăрланă конфет кăларнине курсан лăшах пулчĕ Ваççа, аппăшне уринчен тапрĕ те, йăраланса тăчĕ.

— Пăх-халĕ вĕсене! — юнарĕ хĕрĕсене амăшĕ. — Тупнă йăпанмалли, ĕççĕр аптăранăскерсем. Кайăр вăн, уя!

Хĕрĕсем сăмах чĕнмесĕр пуçĕсене усса алăк патнелле утрĕç.

— Ай-уй, ман ывăлăма мĕн тунă вĕсем? Макăрнăран куçĕ шыçса кайнă. Ме, çи, акă, конфет. А-ах вĕсене, лектереп ак пушăпа ывăлăма манне хĕн кăтартнăшăн,— пуçĕнчен ачашларĕ Ваççана амăшĕ.

Эпир Микулайпа иксĕмĕр, хÿме шăтăкĕнчен пăхса тăраканскерсем, Ваççана тăпра катăккипе петĕмĕр те аннесем хыççăн уялла чупрăмăр. Хĕвел çунтарнине те, пилĕк ыратнине те пăхмастăмăрччĕ, çум та çумлатпăр, тырă та выратпăр. Ун чухне уйĕпех халăхчĕ. Пыратпăр аннепе çапла, хамăр бригадăн ыраш пуссине шыратпăр, тупаймасăр хăшкăлтăмăр вĕт. Унтан кĕç нĕрр! туни илтĕнчĕ. «Тупрăмăр!» — терĕ анне савăнса,— вăн Ваççа йĕрет, атя çырма урлă».

Кĕлтесенчен тунă хÿтлĕх айĕнче хĕвелтен пытаннă Ваççа ĕсĕклесе ларать, амăшне киле чĕнсе анратать.

— Вăт камит,— кулса ячĕ анне,— ма мăшкăллаттаран эс ачуна. Тĕмĕ айĕнчех аллине çурлапа шăйăрттарса выртакан мăнттая çап та çутăлтар! Ӳссен кам пулĕ унран? Пĕр ывăл тесех пăсса ятăн ĕнтĕ Ваççуна. Кай, санпала, ача пăхма пĕлместĕн.

Ĕсĕклеме чарăннă Васса çурăмпа çаврăнса ларчĕ. Амăшĕ анне енне алă çеç сулчĕ. Эпир ана тытса ыраш вырма пуçăнтăмăр. Ваççа çаплах тĕм айĕнче пучахсемпе вылярĕ...

Михвать Микулайĕн ашшĕ вăрçăра вилчĕ, чирлĕрех амăшĕ те ун хыççăн нумаях пурăнаймарĕ, çĕре кĕчĕ. Аппăшĕпех ӳсрĕ ача. Микулайăн урока хатĕрленме те вăхăт сахалччĕ ĕнтĕ, çапах çиччĕмĕш класран Мухтав грамотипе вĕренсе тухрĕ. Ваççа ним тумасăр килĕнче кĕнекепе çеç ларатчĕ пулин те, ăна çитейместчĕ.

Аппăшĕ Микулая малалла вĕрентеймерĕ, вара вăл çиччĕмĕш класс хыççăн колхозра ĕçлерĕ, унтан Донбаса кайрĕ, пурнăçне шахтăпа çыхăнтарчĕ. Салтак çулĕ çитсен Микулай Çурçĕр флотне лекрĕ, служба хыççăн каçхи вăтам шкул, университет пĕтерчĕ.

Ваççа шкулта чухнех хăйне ытти ачасенчен мăнăрах тытма тăрăшатчĕ. Пурте шкул пахчине улмуççи лартма тухаççĕ, вăл мĕнле те пулин сăлтав тупса пăрăнатчĕ. Таçтан сăвă çырма ăнкартрĕ тата, пĕрмаях хĕрсене юрату йĕркисем парнелетчĕ. Район хаçатĕнче икĕ-виçĕ сăвă пичетленсе тухнă хыççăн Ваççа вĕçкĕнленсех кайрĕ. «Эпĕ сăвăç, мана районта пĕлеççĕ, ялта ку таранччен поэт пулманха»,— тесе мухтанатчĕ те мухтанатчĕ.

Амăшĕ унран та хытăрах савăнса ӳкнĕ, «ман Ваççа пекки ялта çук, Микулайсем пек шахтăра кăмрăк тусанĕ çăтса пурăнмасть, вĕренет, пысăк çын пулать», тесе мухтанса çӳрерĕ. Такамран та чаплă вĕçкĕн Ваççа чăнах та Шупашкарти пединститута çыпăçрĕ. Икĕ çул хула тăрăх «эп кам» тесе мухтанса çӳренĕ хыççăн, вĕренсе пĕтереймесĕрех каялла таврăнчĕ, районти культура пайне ĕçе кĕчĕ.

Халĕ ĕнтĕ Василий Васильевич тесе чĕне пуçларĕç. Вăл сăвăсем, пĕчĕк пьеса çырчĕ, вĕсене райхаçатра пичетлеттерчĕ, ялсем тăрăх вуласа-кăтартса çӳрерĕ. Малтан сăввисем айне хăйĕн хушаматнех çыратчĕ, каярахпа, чапа туха пуçласан, «кун пек пулмасть, эпĕ халăхпа хутăшса каятăп» терĕ те, псевдоним шыра пуçларĕ. Поэтсем-писательсем, тин çеç сăвă-калав çырма пуçланисем те, ватăлса йӳтенисем те çырма-çатра, юханшыв, ял-хула ячĕсене псевдоним илсе пĕтернĕ ĕнтĕ, хăватлă янăракан вырăс сăмахĕсем çине куçнă иккен. «Ман мĕншĕн пуça усăсăр çĕмĕрес? «Чап» псевдоним питĕ чаплă пулать вĕт! Аçта пур Чап ятлă поэт? Хальтерех йышăнмасан, сехетсерен çуралакан çыравçăсем кăна та хăвармĕç. Пур енĕпе те мана килĕшӳллĕ — Ваçлей Чап. Чăвашла та, вырăсла та хытă янăрать. Янăра Ваççа!» — хăйне хăй пĕлĕтелле вĕçтерчĕ вăл.

Амăшĕ ăна пĕчĕклех тăн паратчĕ: «Эсĕ, ывлăм, хура ĕçпе нихçан та çын пулаймастăн, хут çинех пуçна чик, авланма та пĕлсе авлан, лăпăр-лапăр çемьерен ан ил арăмна, чаплăраххине туп»,— тетчĕ. Пуçа хывнă çакна Ваççа. Авланма вăхăт çитерехпе вăл паллăрах çынсен хĕрĕсене куç хывма пуçларĕ. «Поссовет председателĕн хĕрĕ хитре ĕнтĕ, анчах мана мĕн парать-ха ашшĕ? Милици начальникĕн тин çеç вăтам шкул пĕтернĕ, малалла вĕренме каяссăн»,— пӳрне хуçлатсах шутларĕ вăл. Завод директорĕн хĕрĕпе çӳрерĕ, лешĕ каппайчăк качча хăй пăрахрĕ. Тепĕр пысăк хуçан хĕрĕ ăна нумай ĕçнĕшĕн сивлерĕ. Авланмалли çул Ваççана райĕçтăвкомри пĕр пысăк пуçлăх хĕрĕ патне илсе çитерчĕ. Ун енне

вăл, лешĕ курпунтарах та шатра питле пирки, малтан çаврăнса та пахмастчĕ. Халĕ, амăшĕ хушнă тăрăх, сыпçăнчĕ çак хĕр çумне, «юрататăп та юрататăп» тесе тăнран ячĕ. Лешĕн ашшĕпе амăшĕ те савăнчĕç, «хĕр валли чипер каччах тупăнчĕ» тесе урлă-пирлĕ чупкалама пуçларĕç, кĕç туй кĕрлеттерсе хучĕç. Пы-ы-сăк парне — çĕнĕ хваттер уççи пачĕç çамрăк мăшăра.

Институтне заочно аран-аран пĕтеркеленĕ Василий Васильевич авланнă хыççăн ай хăпарчĕ çӳлелле, ай, хăпарчĕ: методистран Культура çурчĕн директорне, унтан культура пайĕн заведующине çитрĕ. Пĕр картлашка çине лайăххăн пусаймасть, ури сисмесĕрех тепĕр картлашка еннелле туртăнать.

Алă çинче çĕклесе çӳренĕ пек пăхаççĕ Василий Васильевича. Хай те вĕçкĕнленчĕ, каппайланчĕ, чĕлхи çинче те «эпир пулсан — пурнăç пулать, хуньăма калап — пулăшап» сăмахсем çеçчĕ. Ĕçкĕ ушкăнĕ тумалла — хуньăшĕ ячĕпе ăçта кирлĕ унта шăнкăравлать те — пурте хатĕр. Пĕр кун та урăлса кураймасть Васлей Чап. Ача чухнехи кутăнĕ çĕнелчĕ. Амăшне çăкăр сăмси кастарса тăнран кăларнă пек, хăйне хăналакан çынсен тинкине илчĕ. «Шурри анчах-и, çак эрех-и вăл?» — пуçне пăркаласа ларать сĕтел хушшинче. «Коньяк? Мĕнли-ха? «Армянски» пулсанччĕ», — алăк енне пӳрнипе теллет. «Шампански? Пылакки мар, çурма типпи кирлĕ», — ура çине сиксе тăрать. Чупаççĕ вара мĕскĕнсем Васлей Чап валли эрех шыраса. «Кунти ресторан ресторан-и вăл? Давай Шупашкара, хăвала машиннă», — кăшкăрать лешĕ тепĕртакран.

Василий Васильевич ĕçкĕрен хăпаймарĕ. Арăмĕ унăн пит-куçĕнче ирхи хĕвел пек уçă кулă кураймарĕ. Курпунтарах арăмпа вăл хăнана та, халăх çине те тухми пулчĕ, Культура çурчĕ çумĕнчи агиткультбригадăпа çеç чунне кантарса çӳрерĕ. Унта унăн шăпчăк сассиллĕ савнийĕ пурччĕ.

Чылай вăхăт асрĕ çапла Васлей Чап. Хуньăшĕ, ĕçре çунса кайнă хыççăн, районтан урăх çĕре, таçта çĕпĕреллех тухса тарчĕ, Василий Васильевичăн «авторитетне» те пĕрлех илсе кайрĕ. Йăпăлти çынсен çуллă аллисем çинче ярăнса çӳрекен Васлей Чап йăкăш шуса анчĕ картлашка тăрăх çĕрелле, кĕлеткин хыçалти тачка пайне самаях ыраттарчĕ. Чаплă пукансемпе сĕтелсем унпа ĕмĕрлĕхех сывпуллашрĕç. Аптăранă енне «район чапне» каллех Культура çуртне тĕкрĕç. Кунта та малалла мар, каялла утма пуçларĕ вăл. Халĕ ĕнтĕ тиркешсе «армянски» коньяксемпе «типĕ» е «çурма типĕ» шампанскисем суйласа ларма май çук. Нимле йăпăлти те ун патне хура сумкăпа ĕçмелли-çимелли йăтмасть, ресторана ăна хăналама чĕнмест. Малтанхи юлташсен ушкăнĕ те чакса-чакса пычĕ. Шурри мар, чи йӳнĕ хĕрли те йăпăр-япăрах лекмест. Ялсенче концертпа пулнă чухне ăнсăртран тĕп сакайĕнчен сиксе тухнă çунăк аншарли те темрен пахарах туйăнать.

Арăмĕ Ваççан мăшкăлне чăтаймарĕ, ашшĕ патне тухса кайрĕ. Кĕçех Васлей Чапăн ăшăх кĕсйине «алимент» текенскер тавăрса пăхма пуçларĕ.

Васлей Чап кил тăрăх ĕçсе çӳреме тытăнчĕ. Кам ĕçкĕ ĕçет, çавăнта пичке пушаниччен пурăнать. Чайнăйсемпе столовăйсенчи буфетчицăсене «сире хаçатра ырласа кăларатăп» тесе улталаса пĕр вăхăт укçасăр ĕçсе-çисе пурăнчĕ-ха. Анчах вĕсем те ăнланчĕç пакăлтие, буфет çывăхне те ями пулчĕç. Унтан вăл буфет умĕнче черетре паллакан, тахçан курнă-илтнĕ çынсене шыракан пулчĕ. Усĕртен хăпас тесех пулмалла, сăра е эрех илсе параççех лешсем. Çынсене йăлăхтарнăшăн, ĕçлеме чăрмантарнăшăн буфетчицăсем Ваççана хăваласа кăларса яраççĕ, лешĕ тухасшăн мар, пукан çине тăрса сăвă вулать. Каллех ун умне кăпăклă сăра курки пырса ларать.

Васлей Чап чееленчĕ. Çапла вăл çывăхрах юлташĕсене тустарсă тухрĕ. Киле пырать те, макăрас пек ыйтать: «Тархасшăн пилĕк тенкĕ парăр, ыранччен çеç, çула май кĕпе илмелле». Пĕлмен-илтмен çын мар, хĕрхенсе тыттарса яраççĕ укçа. Ыран та, виçмине те Василий Васильевич çук та çук хайхи, тепрер уйăхран тин аран-аран персе çитет. «Эсир мана унччен те хăналанă, хальхинче те ахаль кăларса ярас çук. Хăвăра лавккана чуптарса чăрмантариччен сирĕн укçăрпах туянса килтĕм»,— тесе кăштăрт кăларса лартать сĕтел çине тулли эрех кĕленчи. Аптранă çынсем ĕнсе хыçа-хыçах çыртмалли-çимелли хатĕрлеççĕ.

Поселок тавра çапла пĕр çаврăм турĕ вăл, иккĕмĕш хутĕнче кунашкал май тухас çуккине туйрĕ те тактикăна улăштарчĕ: ыттисенчен виçшер тенкĕ иле-иле ĕçсе ячĕ. Виçĕ тенкĕ çаврăмĕ вĕçленсен, пĕр тенкĕ çине куçрĕ. Камран мĕн чухлĕ укçа илнин шутне те çухатрĕ ĕнтĕ, ĕçрен кăларнă хыççăн ваккине пуçтарма тытăнчĕ: аллă, çирĕм, вунă пус... Çынсем патне пырать те, «вилетĕп, тархасшăн пулăшăр, ĕмĕр манмăп!» тесе ача пек макăрать. Хĕрхенеççĕ «район чапне», е çĕпре тăрри, е сарăхнă сăмакун ярса параççĕ. Чĕрĕлет çын, унтан каллех поселок тăрăх укçа шыраса чупать.

Аптранă енне Васлей Чап каллех столовăйсене ермешрĕ. Тахçан район хаçатĕнче пичетленнĕ сăввисене каса-каса илет те, сĕтел хушшине кĕрсе ларать. Кам унта пырать, тӳрех «сирĕн ятпа çырнăччĕ» тесе алă пусать те парнелет. Выçă анчăк çури пек сăвартан пăхса лараканскере сăра ярса параççех вара.

Тимĕр укçа та пăхăрланса юлчĕ Васлей Чапшăн. Анланса çитрĕç ăна, пилĕк-виçĕ пусран ытла пами пулчĕç. Халĕ ĕнтĕ сăралăх е хĕрлĕ эрехлĕх пуçтармашкăн та самаях чупма тивет. Çавăн чухне ĕнтĕ «Василий Васильевич ГТО нормине ылтăн значоклăх панă» тесе кулма тытăннăччĕ халăхра.

Этем нĕрне çухатрĕ Васлей Чап, сăввисене парнелесе пĕтерчĕ, çĕнĕрен çырма вăхăт та, вăй-хал та çук. Пукан çине тăрса вуласан та итлеми пулчĕç. Халĕ ĕнтĕ çынсем лартса хăварнă курка тĕпĕнчи сăрана пуçтара-пуçтара ĕçрĕ вăл.

Аптранă енне ăна сыватма ăсатрĕç. Унтан тухнă хыççăн çын сăнĕ кĕнĕччĕ мĕскĕне. Хăй ыйтнă пысăк ĕçе вырнаçаймарĕ вăл, ытла та шанми пулнă-çке мухтанчăк ĕçкĕçе. Культура çуртне ячĕç, анчах унчченхи пек асса-сиксе сăвă каласа çӳреме те, телефонпа хушса ларма та мар — котельнăйне, кочегара.

Амăшĕ хура ĕçрен хăтарма тăрăшрĕ пулин те, пурнăç картлашки Вĕçкĕн Васçана хăй вырăннех çитерсе лартрĕ. Ĕхлете-ĕхлетех печĕ вăл кăмакана хура кăмрăк, уйăхĕпех тарлă çамкине тусанлă алса тулĕпе шăлчĕ. Шалу илес вăхăта аран-аран кĕтсе илчĕ. Васлей Чап ĕç укçине чĕтрекен аллипе вĕçсе тарасран хăранă пек пăчăртаса тытрĕ, унтан каялла çаврăнса пăхмасăр тухса утрĕ урамалла, çывăхри чайнăя кĕрсе çухалчĕ...

Микулай курма килнĕччĕ. Вăл сăрт-ту институтĕнче кафедра пуçлăхĕ, профессор. Нумай каласса лартăмăр, Василий Васильевича та аса илтĕмĕр.

— Ытлашши ачашласа ӳстерчĕ çав ăна амăшĕ, хура ĕçрен пăрăнма вĕрентрĕ. Эпир те пĕр ывăлччĕ те аннесен...— терĕ Микулай хаш сывласа.

— Каярах та ăна алă çинче çĕклесе çӳресе никампа улăштарма май çук «чаплă талант» туса хучĕç, пуç тавра пурнăç ункине çавăрттарма вĕренеймерĕ, укçа ункине — ахаль укça унки-

не çавăрттарса минрере, никама та итлемерĕ, пурнăçне суяпах ирттерчĕ,— хушса хутăм эпĕ.

Михвать Микулайĕ тăлăх ӳссех пысăк çын, халăха, çĕршыва усăллă çын пулнăшăн савăнтăмăр, вăл хăй çинчен, хăйĕн ĕçĕ çинчен мухтанмасăр каласа панăшăн пушшех хĕпĕртерĕмĕр. Микулай пурнăç картлашки тăрăх, Вĕçкĕн Васса пек, çын пулăшнипе çеç вĕçтерсе хăпарса кайман çав, йывăррăн пулин те çирĕппĕн, çивĕч куçпа сăнаса, пысăк ăстăнпа улăхнă. Çавăнпа унăн умра татах картлашка нумай.

# КАМ ВĂЙЛĂРАХ

Пушă пӳлĕмри хĕрлĕ пустав витнĕ тăваткал сĕтел çинче телефонпа шурă хут вăй виçеççĕ.

— Эпĕ вăйлăрах! — шăнкăр-шăнкăр сасăпа мухтанать телефон.

—Эпĕ! — çӳлелле çĕкленет хут листи. — Манран вăйли, витĕмли никам та çук.

— Эс-и? — каллех шăнкăртатать телефон. — Эс вара этемрен те, хуçаран та вăйлăрах-и? Сӳпĕлти.

— Вăйлăрах! — чăштăртатать хут листи. — Авăс вулли ячĕпе калатăп: вăйлăрах.

Телефон трубки, çӳлтен пăхса, хут листи мухтаннинчен кулать:

— Лĕпĕрти. Çын туман пулсан, эс те, эп те кунта пурнас çук.

— Вара мĕн? — парăнмасть лешĕ. — Хăйсене кирлĕрен тунă. Пурпĕрех эп унран вăйлăрах. Ăна ĕненмеççĕ — мана ĕненеççĕ, ăна шанмаççĕ — мана шанаççĕ.

Хуçа мăшлатса килсе кĕнипе вĕсем шăпланчĕç. Пуканĕ çине ларичченех хуçа телефон трубкинчен кăшкăрчĕ:

— Эй, Иван Иванч! Илтетĕн-и эс? Хăлхасăр-им? Итле! Сирĕн пата çынсем ярса патăм. Çитрĕç-и?

— Килчĕç, — аран-аран илтĕнет сасă.

— Апла ĕçлеттер. Эрнерен ытла ан тыт тулĕк.

Трубкăра çурăк сасă хăйăлтатать:

— Йĕркене пăсатăн. Хут кирлĕ. Унсăрăн йышăнма пултараймастăп вĕсене.

— Мĕн хучĕ?

— Аçтан, миçе çын, мĕнле-мĕнле специальноçпа, хăш разрядпа, арçын е хĕрарăм, çемьеллĕ-и ача-пăчаллă-и... формăллă хут.

— Ан мăшкăлла. Ярса панă сана вунпилĕк çын. Ĕненмесен, пĕр йĕркене тăрат та шутла. Ыйтса пĕлме чĕлхӳ пур.

— Куç та, чĕлхе те пур. Анчах ăна та, кăна та ĕненместĕп, официаллă хута çеç.

— Апла эс мана та ĕненместĕн?

— Çук, сана та. Хут кирлĕ.

Трубкăна тарăхса хучĕ те хуçа техсекретарьне чĕнсе илчĕ, лар та çыр çапла, терĕ: «Çиччĕмĕш стройуправлени начальникне Неверов юлташа». «Тăхта, «юлташ» сăмаха турт. Юлташ мар вăл паян маншăн, тăнилтермĕш, чунилли. Так, малалла çыр: «трест управляющийĕн 150-мĕш номерлĕ приказне пурнăçласа, саккăрмĕш управлени Сире...» Тăхта, сире тенине пĕчĕкрен çыр. Пăх-халĕ ăна, телефонпа каланине те ĕненмест, чĕр çынсене те курмасть. Так, малалла кайăпăр: «сире çичĕ каменщик, пилĕк штукатур, виçĕ плиточник эрнелĕх ярса парать». Хушамачĕсене, ячĕсене, ашшĕ ячĕсене тата ыттисене те çыр. Пулчĕ. Алă пусам. Ярса пар почтăпа. Илтĕр, ĕнентĕр, папкăна çĕлесе хутăр. Бюрократ».

Хуçа хут листине аяккарах сирсе хучĕ те каллех трубкăна тытрĕ:

— Алло, алло! Бетон завочĕ-и ку? Саккăрмĕш управленирен. Бетон çук. Еç чарăнса ларчĕ. Заявка паман тетĕр-и? Телефонпа пĕлтернĕччĕ-çке. Ĕненместĕр апла? Официаллă хут кирлĕ? Çыратăп хутне, халех, туххăм çитерсе паратăп.

Хуçа çумĕнче ташласа тăракан секретарь алла ручка тытрĕ, «Бетон завочĕн директорне...» тесе çырма пуçларĕ. Хут листи, перо шăйăрнипе канлĕн авăнса, телефонран лĕхлетсе кулать.

Телефон трубки ташланипе хуçа шартах сикрĕ, ăна хăлхи çумне пăчăртарĕ:

— Прокуратурăран тетĕр-и? Салам, салам! Мĕн ыйтупаччĕ? Дача пирки апла. Юрать. Тунă-лартнă. Патшалăх шучĕпе, рабочисен ĕç вăхăчĕпе усă курса тетĕр-и? Çавăн çинчен çырса памалла-и?...

Хуçа тарланă çамкине шăлса пӳлĕмрен тухнă хыççăнах тавлашу малалла тăсăлчĕ:

— Куртăн-и халь тĕнчере кам вăйлине? — чăшăлтатрĕ хут листи.

— Ан каппайлан,— шăнкăртатрĕ телефон. — Унашкал шутласан, эпех чи вăйли. Сан çине пăхмасăр ман урлă мĕн тĕрлĕ ĕç тăвать хуçа. Университета ачине вĕренме кĕртнĕ чухне эсĕ кирлĕ пулмарăн — пулмарăн. Хваттер гарнитури туяннă вăхăтра сана алла тытмарĕ — тытмарĕ. Пĕр-пĕр пикене машина памалла — эсĕ кирлĕ мар. Дача мĕнле тунине те сиссе юлман хăв... Кам вăйлă унта, кала?

Хут листи хырăмне тытнă пек авăнса кулать:

— Университет, гарнитур, дача, пике тетĕн... Хуçана усă тунă та, савăннă, ухмах. Хуçа хӳрешки. Пурпĕрех мана ĕненнĕ пек ĕненекен сахал сана. Телефон трубкинчи сасă вăл официаллă мар.

— Курăпăр-ха, курăпăр,— ним каласа витерме аптранипе чăнкăлтатать телефон.

— Хут вăл,— чӳречерен вĕрекен çилпе çӳлелле çĕкленет лешĕ,— чăтать. Мана пурте ĕненеççĕ. Хăюллăнах калас хуçана: «Çакă çутă тĕнчере вăйли çукка та хутран!»

Хуçа кĕчĕ те, сулахай аллипе телефон трубкине янах çумне хĕстерчĕ, сылтăммипе хут листине умарах куçарса прокуратурăна ăнлантару çырма тытăнчĕ.

Телефонпа хут хуçа илтмелле мар тавлашрĕç: кам вăйлăрах?

# МАЛТАН ШУХӐШЛА!

Пирӗн урамра тахҫантанпах ҫутӑ ҫукчӗ. Юлашкинчен аран-аран юпасем ҫине лампочкӑсем ҫакса тухрӗҫ. Эпир ӗҫлекен ҫурта пӗррехинче монтер пырса кӗчӗ, стена ҫине рубильникпа счетчик вырнаҫтарчӗ.

— Урамри ҫутӑпа эсир хуҫа пулатӑр. Ӑнлантӑр-и?—терӗ вӑл лапчӑк сӑмсине пӳрне вӗҫӗпе тӗртсе.

— Ӑнлантӑмӑр,—тетпӗр,—капла пире пит лайӑх пулать: хӑҫан ҫутас килет—ҫутатпӑр, сӳнтерес килет—сӳнтеретпӗр.

Ҫакна илтнипе монтер аллинчи отвертка урайне шӑкӑрт тухса ӳкрӗ, унтан хӑй те, тачка кӗлеткине тулли тултармасӑр сыхнӑ михӗ пек хуҫкаласа, таплаттарса анчӗ.

— Кулма ан шутлӑр, юлташсем. Ку вӑл—патшалӑх ӗҫӗ. Унсӑрӑн сирӗн ҫинчен урӑхла шухӑшлама пултараҫҫӗ. Унашкал ан шухӑшлаччӑр тесен, сирӗн усалли ҫинчен шухӑшламалла мар, урамри сынсене ҫутӑ ҫулпа уттарасси пирки шухӑшламалла...

— Юрӗ эппин, эпир те эсир шухӑшланӑ пекех шухӑшлӑпӑр,-- кулкаласа илчӗ пирӗн техничка Наҫтуҫ.

Монтер Наҫтуҫа пушмакӗнчен пуҫласа пуҫ тӳпи таранах шӑтарасла пӑхса илчӗ те:

— Миҫе сантиметр?—тесе ыйтрӗ.

— Мӗн сантиметр? Метр ҫурӑ,—лӑпкӑн хуравларӗ лешӗ.

— Лутра, ҫутӑ ҫутнӑ-сӳнтернӗ ҫӗрте ӗҫлеме юрамасть, — темле инструкцие уҫкаларӗ монтер. — Ӗненмесен, ак, хӑвӑр вулӑр: 170 сантиметртан кая мар кирлӗ, тенӗ.

Монтер каланине итлесе тӑракан техничкӑн, хӑйне тивӗҫсӗр сын вырӑнне ҳунӑран пулас, пит-куҫӗ йӑмӑхса кайрӗ, вара вӑл аякалла пӑрӑнчӗ те:

— Макӑрап пуль сирӗн ӗҫӳшӗн, кирлех-тӗк, кӗтӗр-ха ӳсиччен, —терӗ.

— Э-э, ҫук, ҫук, тӑхтӑр,—чарса тӑратрӗ ӑна монтер.—Сирӗнсӗр кунта ӗҫлекен урӑх ҫук. Тӑхтӑр. Вулар-ха малалла инструкцие. Акӑ, «Асӑрхаттарни» ҫинче мӗн каланӑ? Енчен те кӗлетки лутра пулсан, пукан е тенкел ҫине хӑпарса ҫутма юрать, тенӗ. Ҫакӑнпа килӗшер те, ҫураҫар, инструкци вӗренме тытӑнар, ҫак хута ухфурмить тӑвар. Так, так... хушамату, яту, аҫу ячӗ?

— Таранова Анастасия Тарасовна,—ыйтнине тивӗҫтерчӗ техничка.

— Миҫемӗш ҫулта ҫуралнӑ?

— Хӗрӗх пӗрремӗшӗнче.

— Пин те сакӑрҫӗр е пин те тӑхӑрҫӗр?

— Эй, санпала, кирлӗ мар мана нимӗнле инструктаж та, — вӗриленчӗ Наҫтуҫ.

— Тӑхта,—аллине сулкаласа ура ҫине тӑчӗ мӑнтӑркка монтер.—Ку вӑл патшалӑх ӗҫӗ пулни ҫинчен шухӑшлама ан манӑр. Так, так... малалла кайӑпӑр сырса.

Инструктаж паракан «пӗлӳ илни» текен йӗрке патне ҫитрӗ.

— Иккӗмӗш курс,— кӗскен каласа хучӗ Наҫтуҫ.

— Мӗнле курӑс?—ӑнланмарӗ монтер.

— Эс ху курӑс лӑнчашки,—кулса ячӗ Наҫтуҫ,—нимле курӑс та мар, курс. Техникумра иккӗмӗш курсра заочно вӗренетӗп.

— Авланман-и? Качча кайман-и?

— Вăл сан ĕç мар.

— Юрĕ, юрĕ, хуллентерех калаç патшалăх ĕçĕ тунă чухне... Тен, сирĕн кам та пулин ют патшалăхра пурăнать?

— Ара, пурăнмасăр, тахçантанпах пурăнаççĕ: асаттен ашшĕ—Шипкăра, асатте—Альпра, атте—Карпатра...

Монтер Наçтуç куçĕнчен кăнн пăхрĕ те аллинчи хутне хупласа хучĕ, ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ.

— Ку вара хытах шухăшлаттарать,—лапчăк сăмсине пӳрнипе тĕртсе илчĕ вăл каллех,—Шипка, Альпă, Карпат патшалăхĕсенче пурăнаççĕ апла аçу-аслаçусем. Мĕншĕн унта пурăнни çинчен уйрăммăн тĕплĕнрех çырса памалла пулать. Унсăрăн...

— Эх, ырă çыннăм,—терĕмĕр монтера,—тĕнчене ан култарăр-ха, Наçтуçа ан хурлантарăр-ха, ашшĕпе аслашшĕсем мĕншĕн унта пурăннине ăнланăр-ха...

Монтер алă çеç сулчĕ:

— Мана ăнланма кирлех те мар. Çырса патăр. Начальник тĕрĕслет унта. Ман инструкци пур. Малалла луччĕ, ак, пукан çине мĕнле хăпармаллине вĕренĕпĕр. Таранова юлташ, лайăххах тăнлăр. Çапла, куçа аяккалла вылятмасăр тӳп-тӳрĕ пăхса пыратăр та, урăх япала çинчен шухăшламасăр хăрах урапа хуллен хăпарса тăратăр, унтан теприне асăрханса çĕклесе пусатăр. Кунта чи малтан ӳкесси çинчен шухăшлама юрамасть. Акă, хам туса кăтартатăп.

Монтер пукан çине хăй каланă пек çĕкленчĕ, унтан Наçтуçа хăпарма хушрĕ. Наçтусăн ирĕксĕрех пукан çине улăхса анма тиврĕ.

— Так, так... халĕ матчаç çине куçăпăр. Авă, куратăр-и, счетчик айĕнче мĕн? Ана рубильник, теççĕ. Вăл корпусран тата рычагран тăрать. Шалта—контактсем.

— Çыпçăнаççĕ-и вĕсем? — Наçтуç кулкаласа йăпăртах монтер çумне пырса тăчĕ.

— Эй, çук, çук, унашкал çыпçăнасси çинчен шухăшласан... Рубильник çинчен çеç шухăшлама ыйтатăп.

Монтер каллех пукан çине хăпарса тăчĕ те тăрăшсах ăнлантарчĕ:

— Тепĕр хут асăрхаттаратăп: пукан патне пынă чухне нимĕн çинчен те ан шухăшла. Халĕ çак хут çине ним шухăшламасăр алă пус. Инструктаж вĕçленчĕ.

Кун каçа пакăлтатнипе каç пулнине те сисмен. Монтер тухса кайсанах Наçтуç чалт! сикрĕ те рубильнике çӳлелле куçарчĕ. Урамра çутă çутăлса кайрĕ.

# ТАМАКРАН ТАВРАНСАН

Хĕлĕх Хĕлипĕ—хĕрĕхелле хăвалакан мĕштĕркке. Хĕрĕх ĕçре çитрĕ пуль, ниçта та йĕркеллĕ вырнаçса пĕтеймест. Юлашкинчен стройкăна килсе çыпçăнчĕ. Тахçан кирпĕч купалакалама вĕреннĕскер, еккине ярсан, пĕр кана мăшăлтатать. Хушăран тем пулать вара, ытларах мастерокпа пилĕкне шăлма тытăнать.

Бригада ăшă трасси хывнă çĕрте ĕçлет. Вĕсем кунта çĕр айĕнчи пăрăхсене анса тĕрĕслемелли шăтăксем тăваççĕ: тавралла кирпĕч яраççĕ, çиелтен тăм çапаççĕ. Хĕлĕх Хĕлипĕ юлашки шăтăкачи кайран вĕçлерĕ. «Пырать», тесе ала сулчĕ те уттарчĕ.

Бригадăна тепĕр кунне çĕнĕ çурт тума куçарчĕç. Унта тӳрĕрен çитме ăшă трасси урлă каймалла. Хĕлĕх Хĕлипĕ чиперех пыратчĕ-ха лăпăстатса, унччен те пулмарĕ—шăтăка янк! ярăнса анчĕ. Ун тĕпĕнчи кирпĕч катăкĕ аяк пĕрчине хăйăрса илнипе куçне чариех уçрĕ вăл. Çӳлелле сиксе пăхрĕ, кĕске пӳрнипе шăтăк хĕррине çаклатса та илчĕ, анчах çĕкленме хул вăйĕ çитмерĕ, каялла тачлатрĕ.

«Кам уçă хăварнă ку шăтăка?»—тарăхса шухăшларĕ вăл. Шăп çак вăхăтра алса кĕрсе кайрĕ ун аллине. Хăйĕн алси-мĕн! Вăл кăштах лăпланчĕ: ĕнер майлаштарнă шăтăк иккен. Кахалскер, ун чухне тĕпĕнчи çӳп-çапа та тасатмарĕ, ӳкнĕ алсине те анса илмерĕ, шăтăка тимĕр ывăспа та витмерĕ. Анра-сухра уçса лар халĕ унта. Каллех сиксе пăхрĕ вăл—кăлăхах. Чылайччен тĕрмешрĕ çапла. Ку таранччен пурăнса та çакăн чухлĕ тар кăларса курман пуль. Халтан кайнă Хĕлĕх Хĕлипĕ аптранă енне кăшкăрма пикенчĕ, хăйсĕр пуçне ăна пурпĕрех никам та илтмерĕ. Ним тăвайманнипе шăтăк тĕпне хутланса выртрĕ, майĕпен тĕлĕк тĕнчине кĕчĕ.

Вăрăм çӳçлĕ яштака хĕрсем Хĕлипе чечеклĕ алшăлли çинче утьăкка сиктереççĕ пек, сулласçĕ те вăшт вĕçтерсе яраççĕ. Вĕçет, вĕçет Хĕлĕх Хĕлипĕ кăтра пĕлĕтсем хушшипе, пăхать аялалла—рай пахчи. Савăннипе чалт! сикет. Каллех тепĕр алшăлли çине лекет. Алшăллине кунта темшĕн хĕрсем мар, вăрăм хӳреллĕ шуйттансем тытса тăраççĕ. Рай пахчи алăкĕ умĕнче сăмала хуранĕсем вĕреççĕ. Хуранĕсем çине пысăк саспаллисемпе «Вăрăсем валли», «Ултавçăсем валли», «Кахалсемпе брак тăвакансем валли» тесе çырнă. «Эп вăрă мар-ха, ултавçă та, кахал та мар...»—текелесе чунне лăплантарма пуçланăччĕ çеç вăл, хурансем патĕнчен хаяррăн кăшкăрни илтĕнчĕ: «Филипп Струинова — кунта, кахалсемпе брак тăвакансен хуранне!»

Шуйттан çурисем алшăллине ахăлтатсах карăнтарчĕç, Хĕлĕх Хĕлипне çӳлелле вĕçтерчĕç. Ай вĕçет вăл рай пахчи çийĕн, анчах тамăк хуранĕ патнеллех çывхарать. Хуранĕ айне пĕр енчен арăмĕ тепĕр енчен бригадир вут хурса тăраççĕ пек. Тамăк хуранĕ сиксех вĕрет, сăмала сирпĕтет. Хĕлĕх Хĕлипĕ вĕтеленсе çухăрать: а-а-а!

Çав тери хăраса вăранса кайрĕ Хĕлип. Йĕри-тавра — пăч тĕттĕм. Тăчĕ те чалт! сикрĕ çӳлелле—лĕпкине çавăнтах мăкăль сиксе тухрĕ. Тинех тавçăрса илчĕ вăл. Ара, çывăрнă вăхăтра шăтăка такам витсе хăварнă вĕт! Сехри хăпнипе унăн сивĕ тар тапса тухрĕ. Вăт сана тамăк, вăт сана леш тĕнче!

**Сивĕ стенана çурăмĕпе тĕкĕлесе, куççуль тăкса тăрать Хĕлĕх**



Хӗлипӗ. Ҫав вӑхӑтра йӑкӑрр юхса анчӗ ӗнсе тӑрӑх шыв. Хӑранипе унталла ҫапӑнчӗ, кунталла, ниҫта кайса кӗрейменнипе лак! ларчӗ шӑтӑк тӗпне. Шӑлаварӗ йӗпеннипе ҫийӗнчех каялла сиксе тӑчӗ, ӗнтӗ хырӑм выҫҫи асра та ҫук. Акӑ, вилӗм хайхи—куҫ умӗнчех. Кӑвапине шыв илсен, Хӗлӗх Хӗлипӗ хӑрушшӑн ҫухӑрса ячӗ, аллисене лӑстӑрах усрӗ: «Хама валли хамах тупӑк турӑм»,—шутларӗ вӑл хурлӑхлӑн. Ҫапла шутларӗ ҫеҫ, сылтӑм аллине ӑнсӑртран ҫур кирпӗч кӗрех кайрӗ, вара пуҫне ҫӳлелле ҫӗклерӗ те, шыв юхакан ҫӗрте ҫӑлтӑр пек ҫутӑ асӑрхарӗ, унтан пӗтӗм вӑйран ҫав вырӑна кирпӗчпе тӳплеттерме пуҫларӗ. Пӗр кирпӗч катӑлса ӳкрӗ, тепри, хӑлтӑр-халтӑр турӗ те, стена йӑтӑнчӗ те анчӗ...

Икӗ талӑк ҫут тӗнче курман Хӗлӗх Хӗлипӗ шӑтӑкран аран-аран тапаҫланса тухрӗ, ирхи хӗвеле курсан, йӗпӗлл кулса ячӗ.

«Енчен те,—шухӑшларӗ вӑл,—ҫынсем пек тӑрӑшнӑ пулсан-и, хам хатӗрленӗ шӑтӑкрах шывра хутланса выртма тиветчӗ. Юрать-ха хамӑн ӗҫ хамах пулӑшрӗ, шӗкӗр турра».

«Леш тӗнчерен» таврӑннӑ Хӗлӗх Хӗлипе бригада урӑх йышӑнмарӗ. Ытла та нумай тарӑхтарнӑ-ҫке вӑл коллектива. Ҫухалнӑ упӑшкана арӑмӗ те алӑк еннелле ҫеҫ тӗллесе кӑтартрӗ.

Ку вара чӑн-чӑн тамӑках пулчӗ—пурнӑҫ тамӑкӗ.

# ПӐТА

Мӗшӗл Мӗтрисен пуян Тӑванкасӗ. Ял ҫыннисем ӑмӑртмалла тенӗ пек чул ҫуртсем лартаҫҫӗ. Мӗтрисем те пӳрт кӑшкарне шур кирпӗчренех ҫавӑрчӗҫ. Тӑрӑ тӑрласа ҫӗнӗ пӳрт ӗҫки янраттармалла ҫеҫ... Анчах пӑта ҫитменни пӗтерет.

Ялти лавккана пӑта кӳрсе килессе кӗтсе выртать ак тенкел ҫинче Мӗшӗл Мӗтри. Сасартӑк арӑмӗн сасси илтӗнсе каять:

— Ҫак ыйхӑ чӑптипех пӗтрӗм!—ятлаҫать Тарье. — Тӑр! Лариван Шупашкара каять, вӑн. Ак укҫа. Илсе кил пӑта!

Мӗшӗл Мӗтри ирӗксӗрех кӳрше мӗшӗлтетсе каҫрӗ. Йӑлттам Лариван хирӗҫсе тӑмарӗ, лартса кайма килӗшрӗ.

Тухса шӑхӑрчӗҫ ҫапла вӗсем хуланалла. «Лариванӑн, шофӗрте ӗҫлекенскерӗн, хурҫӑ учӗ аллинчех те, маттур пулмасӑр вӑл. Ман килте пӗчӗк урапасӑр пуҫне ним те ҫук та... Ула качакана кӳлсе тухас-им? Пушали вӑрҫ», — ятлаҫрӗ арӑмне Мӗтри хӑй ӑшӗнче

Шупашкартан Лариван пӗрле таврӑнасса шантармарӗ. Мӗшӗл Мӗтри лавккасем шыраса хула тӑрӑх утрӗ. Майӗпен пӑта та тупрӗ, ытти япаласем те туянчӗ. Кутамкки самай йывӑрланчӗ. Вокзалта хуплу ҫисе хырӑмне кӑшт лӑплантарнӑ пекки тунӑ хыҫҫӑн кассӑна черете тӑчӗ Мӗтри. Кассирӗ чӑн-чӑн усалах пулчӗ пулмалла, билетне Нурӑса ҫитиччен ҫеҫ сутать. «Аллӑ пус аллӑ ҫухрӑм танккасси мар-ха»,—тӗкелесе хаклӑ билетах туянчӗ Мӗтри.

Эх, пырать вăл автобуспа ярăнса. Пуçĕнче ун пӳрт ăшчикки майласа арăмне савăнтарас шухăш çеç. Акă, аслă çул хĕрринчи Тăванкас та куç умне тухрĕ.

— Тăванăм, вăн çавăнта, уничче тĕлĕнче, тăрат-ха,—асăрхаттарчĕ Мĕтри шофера.

— Вула,—сĕнчĕ лешĕ тӳрех, хыçалалла пуçне сĕлтсе.

— Мĕн вуламалла?

— Çырнине. Хут пĕлместĕн-им?

Мĕшĕл Мĕтри вара шофер çурăмĕ хыçĕнчи авăк кантăк çинелле тинкерчĕ. Унта чăнах та: «Пассажирсене вокзала çитсен тин антармалла»,—тесе çырнă иккен.

— Вуларăн-и?—ыйтрĕ шофер.

— Вуларăм.

— Апла пулсан, Нурăса çитиччен шăпăрт лар.

— Нурăса мар эп, Тăванкаса каятăп. Акă, пирĕн ял...—хыпăнчĕ Мĕтри.

Шофер, хăлхасăр хуçа пекех, итлемерĕ ăна, тăратмарĕ автобусне.

Нурăсра та билетне Шупашкара çитиччен çеç сутаççĕ. Хăрахăрах билет илчĕ Мĕтри. Тăванкас курăннă-курăнман вăл шофера пусахлама пуçларĕ:

— Анса юласчĕ çакăнта. Тархасшăн тăрат!

Шофер хăнк та тумарĕ.

— Вокзал пур-и сирĕн ялта?—ыйтрĕ вăл, йăл-йăл кулкаласа. Çук. Хăçан тăваççĕ, çавăн чухне антарăп... Халь вара, хам тăван ларса пырать пулсан та, инструкцие пăсмастăп.

Куççуль тухманни çеç Мĕтрин.

— Вăн, арăм алăкра тăрать, мана кĕтет!—йăлăнчĕ вăл çаплах.

— Кĕтет сана арăму, тăрпалтая,—пӳлчĕ ăна шофер,—хирĕç чупса пырсах мăйран уртăнать. Пӳрт тăрринче пăта çапса ларакканни кам тата?

— Вăл-и? Ара, вăл кӳршĕ, Лариван пулас, сан пекех шофер. Эп çук та, кăçнă ĕнтĕ пулăшма...

— Пулăшать сана,—лăх-лăх кулчĕ шофер. — Пĕлетпĕр эпир кӳршĕсем мĕнле пулăшнине...

Мĕтри татах тем каласшăнччĕ, анчах «Шофера каларстарса ан чăрмантарăр» тенине вуларĕ те вырăна ларчĕ. Тăванкас часах курăнми пулчĕ.

Шупашкара автобус тĕттĕм пуласпа тин çитрĕ. Автовокзал хупă. Мĕтри çул çинче паллашнă пĕр çын патне кĕрсе çывăрчĕ. Ирпе вăл сăра ĕçрĕ, хуплу çирĕ те билет туянчĕ. Нурăса çитсен тин аса илчĕ: кутамккине Шупашкарти хваттертех манса хăварнă-мĕн! Нимĕн те тăваймăн, каяллах таврăнма тиврĕ унăн. Ку хутĕнче тата, мăшкăл пекех, автобус Тăванкас тĕлĕнчех çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Кил те çывăхрах ĕнтĕ, пурпĕрех Мĕтри автобусран тухмарĕ, арăмĕ патне пăтасăр таврăнма шикленчĕ вăл. Мотор юсаса пĕтернĕ шофер автобуса малалла чуптарчĕ.

Мĕтрин хулара каллех хайхи ыр кăмăллă çын патĕнче çĕр выртма тиврĕ. Ирпе сăра ĕçрĕ, хуплу çирĕ, билет туянма тесе, черете тăчĕ, касса патне çитсен, хыпăнса ӳкрĕ: укçа çук! Вара вăл Шупашкартан çуранах тухса утрĕ. Кутамкки йывăррине пула икĕ талăк ытла иртрĕ ун çул çинче. Пĕр яла кĕрсе çĕр выртма тиврĕ. Аран-аран çитрĕ тăван Тăванкасне, мăръерен хура тĕтĕм палканине курнăскер, юлашки вăйне пухса килне хашăлтатса кĕчĕ. Мĕтри йăлтăртататакан пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ те арăмĕ патнелле утăм турĕ:

— Тарье! Чунăм!

Урай çăвакан Тарье хăранипе шартах сикрĕ.

— Ай-уй! Кам ку?—таврăнă кĕпи аркине пилĕкĕнчен вĕçертсе ячĕ вăл. — Мĕн кирлĕ сана? Лариван, тух-ха часрах! Темле çапкаланчăк килсе кĕчĕ. Лариван?!

Шалти пӳлĕмрен Лариван тухрĕ, хуралса пĕтнĕ шăрт сухаллă ламсăркка арçын çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

— Сассинчен Мĕшĕл Мĕтри пек те,—тем аса илнĕн пуçне пăркаларĕ Лариван,—çипуçне, сăн-питне пăхсан...

— Эп... эп-çке ку, Тарье, чунăм, пăта илме кайнăччĕ-çке. Илсе килтĕм, акă, кутамкка туллиех,—типнĕ чĕлхине аран-аран çаврăттарчĕ лешĕ.

— Суеçĕ эс, çапкаланчăк!—кăшкăрса пăрахрĕ сасартăк Тарье.— Ман упăшка тахçанах пес вĕсти пропал!

— Тарье... Чунăм, упăшку...

— Кай-кай, ан сӳпĕлтет! Пӳртне ĕнтĕ туса пĕтертĕмĕр эпир Ларианпа. Мăшкăллатарам сана чĕр упăшка умĕнчех! Ак, йĕпе çĕтĕк илем те... Марш пирĕн килтен!

Мĕшĕл Мĕтри урăх нимĕн те калаймарĕ, халтан кайса çитнĕскер, пăта кутамкки çине тĕшĕрĕлсе анчĕ.

# ШАРАШКИН ÇУРЧĔ

— Арçын пулатăн-и эс, Павăл! Санпала ĕмĕрне те ыр курас çук. Çынсен упăшкисем таçта кĕрсе тухаççĕ, эсĕ пур—пурăнатăн тĕмсĕлсе, —ятлаçать Нинук пӳлĕмре кăртти-кăртти утса çӳренĕ май.

Павăл, мамăк утиялне пуç çийĕн витсе хунăскер, арăмĕ ĕрлешнине паçăртанпах итлесе выртать. «Тем тăвасшăн ĕнтĕ мана, янрашать те янрашать. Хваттер паманшăн та эп айăплă», — хăй ăшĕнче шухăшласа илет аптăранă енне.

— Тăр тата, намăссăр!—карт! туртса антарать ун утиялне Нинук. —Тепĕр йĕркеллĕ арçынна качча тухнă пулсан, эпĕ тахçанах çап-çутă хваттерте пурăнмалла. Çаврăнкалама вырăн çук халь. Шифоньер илес тетĕн тата. Аçта лартăн ăна? Хуçисем Алтайран таврăнсан, таçта кайса кĕрĕпĕр-ха. Шухăшлать-и сан пуçу ун çинчен? Пурăнмастăп тек эп санпа, ыранах тухса каятăп!

— Нинук, чунăм, чарăн тархасшăн,—йĕрес пек пăркаласа илет тутине Павăл. — Ачасене вăратан.

Картран вĕçерĕннĕскер, чарăнма пĕлет-и-ха, касать те касать хĕрарăм чĕлхи:

— Йăлăнма лайăх пĕлетĕн-ха эсĕ, çемьешĕн çеç чĕрне хури чухлĕ тăрăшмастăн. Сакăр хваттерлĕ çурт тумалла, тет, поселокра. Çыр заявлени. Хамах леçсе паратăп поссовета. Сана шансан...

Йтлемех тиврĕ Павалăн, вара сĕтел хушшине керсе ларчĕ. Тутăхнă перо сассине илтсен тин Нинук кăмăлĕ майĕпен лăпланса пычĕ.

Заявлени çав кунах кирлĕ çĕре çитсе выртрĕ. Нинук тинех упăшкипе ятлаçма-вăрçма пăрахрĕ, ун вырăнне Павăла кашни кун çурт тунă çĕре сĕтĕре пуçларĕ. Ытла та хуллен çĕкленет-çке çурчĕ, çур çулта çĕрпе танлашрĕ, тепĕр çулне пĕрремĕш хучĕ купаланчĕ, виççĕмĕш çулне... Ун умне тепĕр çурт ÿссе ларчĕ. Ун патенче те, Нинукпа Павăл кускаласа çÿренĕ пекех, пĕр мăнтăркка, лапчăк питлĕ çын вăшталанчĕ. Ăна поселокра палламанни çук, пурте пĕлеççĕ. Вăл—сакăр хваттерлĕ çурта тăвакан строительство организацийĕн пуçлăхĕ. Ятне-хушаматне асăннă чух чĕлхе хуçăлма пултарасран ăна пурте Шарашкин теççĕ, кантурĕн ятне те, пĕтĕмпех каласа тухмашкăн çур кун кирлĕрен, кĕскен Шарашкин кантурĕ текелеççĕ.

Шарашкин кантурĕ вара çĕрĕн-кунĕн ĕçлет. Ларса канма пĕлмеççĕ строительсем. Шарашкин хăй, поезд çинчен ăнсăртран вăрман поселокне тăрса юлнăскер, ачарах чухне маляр та пулнă-мĕн. Каярахпа ку поселока вăхăтлăх килсе ĕçлекен пуçлăхсем Шарашкина çемçе пукан çине хăпартса лартнă. Ларать халĕ унта вăл шăл йĕрсе, кантур ăшшине хĕвне чиксе.

Кантур бухгалтерĕ, унччен райпора учетчикра ларнăскер, Шарашкин патне куççан, унпа пĕр чĕлхе тупнă та хуçа умĕнче «авторитетне» самаях ÿстернĕ. Ара, вăл коммуналлă çуртпа юнашар ăмăртмалла хăпарнă Шарашкин пÿрчĕ вали ăнăçлă операци сахал тунă-и? Çĕн пÿрт ĕçкинче те Шарашкин хăйĕн бухгалтерĕпех кĕрекере ыталанса ларчĕ.

Нинукпа Павăл тахçанах çурт тунă çĕре çÿреме пăрахнă ĕнтĕ, пĕр-пĕринпе ĕрлешсе те ывăннă. Пĕррехинче, командировкăран таврăнсан, Павăл алăк урати урлă сулахай урине пуснăччĕ кăна, арăмĕ ăна майран ыталаса илчĕ те, хыттăн пăчăртаса чуптурĕ. Павăлăн куç-пуç чарăлса кайрĕ.

— Ан ухмахлан-ха,—ытамран хăтăлма пăхрĕ вăл. —Çамрăклăх аса килчĕ-им?

— Çамрăклăх та аса килчĕ, виçĕ çул кĕтни те пурнăçа кĕчĕ,—хыттăн-хыттăн ыталарĕ Павăла арăмĕ. — Хваттер пур халĕ пирĕн, хваттер! Акă, кур, ордер.

Çын патĕнчен çĕнĕ хваттере куççан чуп-чуп уйăхĕнчи пекех пурăнчĕç Нинукпа Павăл. Анчах ытла та кĕске-çке çав вăхăт, хăвăрт вĕçленет. Вĕсемшĕн те вăл пуртăпа касса янă пекех пат татăлчĕ. Шăкăл-шăкăл пурнăç пĕтрĕ. Нинук Павăла каллех кăшла пуçларĕ:

— Эп ыр курма çуралнă-и? Аçтан пултăн эс ман тĕле. Аçтан качча тухсах сана! Шарашкинсем епле телейлĕ пурăнаççĕ. Арăмĕ мĕн тери ырă курать пуль. Уйрăм çурт. Никам та кансĕрлемест. Каччă чух лĕпĕртететтĕнччĕ «эп начальник пулап» тесе. Мухтанчăк. Шарашкин вунă класпах çăтмахра. Эсĕ пур, техникум та пĕтертĕн, институтра та вĕрентĕн, мĕн усси. Килсе хупрăн çак вĕллене... Сана качча тухман пулсан-и...

Павăл хаçат тытнă та, диван çинче саркаланса ларать, арăмне хирĕç пĕр сăмах та чĕнмест. Ун пек чухне Нинук пушшех тарăхса каять. Хаçатне çапса ÿкернипе шартах сикрĕ Павăл, тăчĕ те тепĕр пÿлĕме тарчĕ. Арăмĕ унран юлмасть, хыççăн çитсе тăрлаттарать те тăрлаттарать:

— Чĕлхÿне çăтрăн-им? Ай тарса хăтăлатăп тетĕн манран? Ниçта та пытанаймастăн! Итле. Тăнла. Пурăнмастăп ку çуртра урăх. Каятăп, паянах тухса каятăп!

Павăл нимрен те мар, çак сăмахсенчен темрен хăранă пек хăрать. Арăмĕ çине йăлăнса пăхса илет те вара, çепĕççĕн сăмахлама пуçлать:

— Юрĕ-çке ĕнтĕ, Нинук, хăвах ĕмĕтленеттĕнччĕ-çке çап-çутă уйрăм хваттерте пурăнма? Пăх-ха, пӳлĕмсене хĕвел тулнă. Тавралла хырлăх. Курорта кайма та кирлĕ мар...

— Кунашкал вĕлле пек çуртра пурăнаймастăп, хал çитмест. Ир те, каç та шăв-шав, пуç ыратакан пулчĕ ĕнтĕ.

— Ара, эпĕ мĕн тăвăп-ха? Çынсем çаплах пурăнаççĕ-çке...

Эрнере темиçе хут та пулса иртет çемьере кунашкал калаçу. Нинук упăшкине темле вăрçсан та, Павăл та, никам та çак сакăр хваттерлĕ çуртри шава чараймасть. Аялти хваттерти пĕр вĕтĕрнĕк, авă, пианинопа пĕчĕк акăшсене вĕçĕмсĕр ташлаттарать. Аптранă Павăл хăй те чĕрне вĕççĕн çаврăнкаласа илкелет, çав сасăран хăтăлас тесе çывăрмалли пӳлĕме тарать. Кунта та пианино кĕрлет. Культура çуртĕнче ĕçлекен хĕрарăм эрне ĕнтĕ упăшкине лăпкă каç серенади юрлама вĕрентет. Урайĕнчи шăтăксенчен джаз сасси сирпĕнсе тухать тата. Кӳршĕре такăшĕ «Ну, погоди!» курать. Пĕри арăмĕпе хирлешет. Таçтан ӳсĕр çын сасси кĕрсе каять. Пĕр сăмахпа, типĕ штукатурка çапса тунă стена витĕр çĕр тĕрлĕ сасă илтĕнет. Чăтаймасть Павăл, мулаххайне тăхăнать те, унăн хăлхиссне шартлама сивĕ чухнехи пек усса, диван çине тăсăлса выртать. Арăмĕ вара шăв-шав кăларакан кӳршĕсемпе ятлаçма тухса каять. Çавнашкал харкашу хыççăн пĕррехинче юлташла суда та лекрĕ. Унтанпа вĕсем çăвара шыв сыпнă пек шăпланчĕç, ачисене те урайĕнче чупма, çуйхашма чарчĕç. Чĕн пиçиххи тытсах çӳрет халĕ ашшĕ. Хăйсем те хĕрпе каччăлла пăшăлтатса шăппăншăппăн çеç уткаласа çӳреççĕ. Пĕр эрне иртрĕ пăшăлтатса Павăлсен, тепĕр эрне... Чăтаймарĕ юлашкинчен Нинук, чĕлхине салтсах ячĕ.

Павăлсем çеç мар иккен, тарăхса пурте пăшăлти пăтти пĕçерсе пăхнă, анчах никам та нумаях тӳсеймен. Сакăр хваттерти çынсем хайхи пĕр-пĕрне сывлăх сунми пулчĕç вĕт.

Инкеке уйăхлă пĕр каç татса пачĕ. Çĕрле пурте çурт чĕтренипе вăранса кайрĕç. Тухса пăхаççĕ—чул çурт варринчен çурăлнă. Ара, Шарашкин пӳрчĕ валли тесе кирпĕч перекетлерĕç те, стени çӳхерех пулнă çав коммуналлă çуртăн. Никам та кулянакан пулмарĕ арăш-пирĕш вĕллешĕн. Савăнчĕç çеç. Кĕçех пурте çĕнĕ хваттерсене куçрĕç. Çакăнпа вĕçленчĕ Нинукпа Павăлăн хăр-хар пурнăçĕ. Çĕнĕ çуртра халĕ вĕсем шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççĕ.

Кĕçех Шарашкин кантурне те çил-тăвăл силлерĕ. Пуçлăх çемçе пукан çинчен çĕре лаплатсах ӳкрĕ. Аçтиçуксем купаланă çурт ишĕлчĕкĕ çине куç хĕррипе пăхса илчĕ те Шарашкин, пысăк чăматанне йăтса станци еннелле васкарĕ.

# «САРӐ ХУРТ» ПӖРЛЕШӖВӖ

Пӗр вӑхӑтра эпӗ Вӑрманъенче ӗҫленӗччӗ. Пурӑна-киле хама май тус-юлташ та тупкаланӑ ӗнтӗ. Пӗри тепринчен лайӑххӗ, ытармалла марччӗ вӗсем. Ҫапах та маншӑн ытларах Уҫӑп кӑмӑллӑччӗ. Амӑшӗ ӑна утӑ ҫулнӑ чух уҫланкӑ варринчех сарӑмсӑр ҫуратса пӑрахнӑ, тет-и? Ҫавӑнпа шӑлйӗренсем Уҫланкӑ хушамата ун ҫумне ачаллах сухӑр пек ҫыпӑҫтарса хунӑ.

Уҫланкӑ Уҫӑпӗпе эпир вӑрман хуҫалӑхӗнче туман ӗҫ те юлман пулӗ. Химиксем валли юман хуйӑрӗ пуҫтарнӑ, хыр сухӑрӗ юхтарнӑ. Турат иртсе, иҫӗм йывӑҫҫи тӗкӗлемелли тӗрек, кӗреҫе-кӗрепле аври тунӑ. Ҫулла ҫӑка хуппи шыва хутса ислететтӗмӗр те курӑс сӗветтӗмӗр. Курӑсӗ чӑпта ҫапма, пӑяв-вӗрен явма, мунчала тума аван каятчӗ. Хӑва хуллинчен мӗн чухлӗ, мӗн тӗрлӗ карҫинкка ҫыхман тата. Ҫан-ҫурӑма мунчара ҫапӑнса кантарма хурӑн милӗкӗ хатӗрлесе параттӑмӑр. Юман, хыр-чӑрӑш йӗкелӗ пухма епле кӑмӑллӑччӗ. Хурӑн шывӗ юхтарнине, ҫырла-пилеш татнине, кӑмпа типӗтнине е тӑварланине аса илсен...

Вӑрман ырлӑхне ҫӗршыв валли ӑсатма тӳр килнӗшӗн хӗпӗртеттӗмӗр. Сухӑр юхтарса мала тухнӑшӑн Уҫланкӑ Уҫӑпӗн хушаматне хыр вулли ҫинех ҫырса хунӑччӗ. Тепринче ӑна ҫемҫе мунчалапа мӑшӑр милӗк парнелененӗччӗ. Ҫырма пуҫӗнчи мунчара вӑл пире ҫав мунчалапа ҫурӑм сӑтӑрса янӑччӗ, милӗкӗпе шӑмшак каниччен ҫапнӑччӗ. Мунчаран тухсан, какӑриччен пилеш кукӑлӗ ҫисе, хурӑн ҫырли чейӗ ӗҫнӗччӗ. Аванччӗ пирӗн пурӑнӑҫ!..

Вӑрманъенчи савӑк пурнӑҫа ӑҫтан манӑн? Тӗнче хӗрне куҫса килтӗм пулсан та, вӑрман ырлӑхӗ куҫ умӗнчех. Уҫланкӑ Уҫӑпӗ те ҫырупа савӑнтарсах тӑрать тата. Вилет мансӑр тунсӑхласа, пӗрмай каялла таврӑнма чӗнет. Хальхинче те, тинӗсрен пулӑ тытса таврӑнсан, хыр йӗкелӗ шӗкӗлчесе ларакан пакша ӳкернӗ конверта курнипе пит хӗпӗртерӗм. Мана ырӑ хыпар пӗлтерет иккен тусӑм.

«Урра! Эпир те аталану ҫулӗ ҫинче! —ҫырнӑ вӑл унта.— Прогресс тени пирӗн пата та ҫитрӗ. Эх, курасчӗ сан Вӑрманъенчи улшӑнӑва! Хамӑрӑн «Вӑрман парни» ятлӑ бригадӑран «Хуйӑр», «Сухӑр», «Турат», «Пушӑт», «Хӑва», «Милӗк», «Юман йӗкелӗ», «Хыр йӗкелӗ», «Чӑрӑш йӗкелӗ», «Хурӑн шывӗ», «Ҫырла» тата «Пилеш» эртелсем туса хучӗҫ. Специализаци! Унччenхи пек ҫӗр тӗрлӗ ӗҫ мар, кашни пӗр ӗҫ тӑвать. Эпир Мархва куммапа, Хӗрлӗ Хӗлиппе, Ҫинук Ҫинахванӗпе тата унӑн Улюн Улюнӗпе сухӑр юхтаратпӑр. Виҫҫӑмах Вихтӑрне «Пушӑт» пуҫне лартрӗҫ. Пуҫлӑх темерӗн, самантрах пушӑтран пуртвӗль тутарчӗ. Юмахри автан пек каҫӑрӑлса ӳкрӗ, палласшӑн та мар пире. Ытти эртелсен пуҫлӑхӗсене таҫтан муртан илсе килчӗҫ, пӗрне те палламастӑп. «Турат» эртелӗн пуҫлӑхӗ ҫеҫ ҫук. Кил хӑвӑртрах, сана лартма пултараҫҫӗ унта. Вара эп те кӗреҫе аври тума куҫатӑп. Бригадӑра эпир малтан миҫен ӗҫленӗ—ҫавсемех. Специализаци пуртвӗльне йӑтса ҫӳрекенсем ҫеҫ йышланчӗҫ. Унччен пирӗн пӗр пуҫлӑх пулнӑ пулсан— халӗ вӗсем вуниккӗн. Прогресс!..»

Тинӗсре те аталану тӑвӑлӗ вӑйланса пырать те, Вӑрманъенче специализаци пуҫланнишӗн эпӗ ытлах тӗлӗнмерӗм. Уҫланкӑ Уҫӑпӗпе иксӗмӗр шухӑшласа кӑларнӑ япала-им?

Уйăх çуртан, пулăран килсен, çĕнĕ çыру вуларăм:

«Прогресс» тени вырăнта тăмасть иккен: тымар ярать, ӳсет, сарăлать, уçланкăра ман ятпа лартнă юман пекех. Пирĕн эртелсене ертсе пыма çăмăлрах пултăр тесе, трестсем йĕркелерĕç. «Хуйăр», «Сухăр», «Турат» эртелсем халĕ «Хуйăр» треста пăхăнаççĕ. Виçсăмах Вихтăрне, ӳссе çитмен тесе, ун пуçлăхĕ тумарĕç. Хăй тĕллĕнех хирĕлсе-кутăнланса çӳрет уншăн. Тен, килетĕн? Эс унта пултармаллах. «Пушăт», «Хăва», «Милĕк» эртелсенчен «Мунчала» тресчĕ, «Хурăн шывĕ», «Çырла», «Пилеш» эртелсенчен «Шерпет» тресчĕ турĕç. Унсăр пуçне «Йĕкел» тата «Кăрăç» трестсем пур. Эпир халĕ те çавсемех: виç эртелти вунпилĕк çын сухăр юхтаратпăр, хуйăр сĕветпĕр, турат-тĕретрен кĕреçе аври тăватпăр. Пуртвĕль йăтса çӳрекенсем кăткă пек хунарĕç. Кашни трестрах вуншар çын тет-и? Кантурĕсем мĕнле тата? Икшер хутлă вă-ăрăм çуртсем. Хам ăçта ĕçлени çинчен ĕнентерекен хут çыртарма кайрăм та кантура, пӳлĕмрен пӳлĕме çӳресех кун иртрĕ. Уншăн мана Виçсăмах Вихтăрĕ прогул лартса хунă. Вăт сана прогресс, специализаци!»

Уйăх ытла тинĕсре тăварлă шывпа исленсе çӳрерĕм. Пирĕн «Сельдь-Иваси» карап каллех тăван çырана çитрĕ. Уçланкă Уçăпĕ умлă-хыçлах икĕ çыру янă. Малтанхинче вăл пилĕк трестран çав тери пысăк пĕрлешӳ туни, унăн ятне тупмашкăн конкурс ирттерме палăртни, чи лайăх ят тупакана пĕр лав мунчала парнелеме пулни çинчен пĕлтерет. Тепринче «Кăрăç» треста тата нумайрах енлĕ специализацилени çинчен çырать. Ана тăхăр пая пайлаççĕ-мĕн. Малашне шурă кăмпа, кăрăç, уплюнкка татакан, типĕтекен, тăварлакан уйрăм трестсем пулаççĕ. Трест пуçлăхĕсем çитмеççĕ. Вăл мана каллех «пуртвĕль çаклатса» юлтарасшăн.

Вăрманъен те туртать, тинĕс шавĕ те хăлхаран каймасть. Специализаци тени кунта та аванах аталанса пырать те... Хамăрăн та «Сельдь-Иваси» эртелтен «Сельдь» тата «Иваси» трестсем туса хума йышăннă-ха. Пушă портфель шывра сăмса умĕнчех ишсе çӳрет, ав. Пĕшкĕнсе çĕклемелле çеç.

Конкурсне, чăн та, хутшăнмаллах ĕнтĕ. Шухăшларăм-шухăшларăм та, пуçа ытла çĕмĕрмесĕрех тупрăм Вăрманъенчи пĕрлешӳ валли ырă ят: «Сăрă хурт». Тен, конкурс иртерекенсене кăмăлах кайĕ. Йышăнĕç те, ак, парнине те парĕç. Пĕр лав мунчала «Сельдь-Иваси» карап çинчи пулăçсене пĕрре мунча кĕме шăпах çитĕ. Пĕлтерес терĕм вара тусăма, «Сăрă хурт» пĕрлешĕвĕнчи «Хуйăр» тресчĕн «Сухăр» эртел ĕçченне, Уçланкă Уçăпне, çакăн çинчен.

# АЙВАН АЙАВАН

Сергей Васильевич—сăмах ваклама юратман, йĕркене хисеплекен, аллăсенчен иртнĕ типшĕм çын. Алă панă чух вăл шăши юсĕнни пек куçĕпе асăрхануллăн пăхать, шĕвĕр сăмсине çăвара кĕртсе ярасла çывхăртать. «Пурнатпăр, ай, аван»,—тет те йăпăр-йăпăр уттипе малалла иртсе каять. Кантурта ĕçлекенсем ăна, ялан çапла каланăран, Айаван тесе чĕнеççĕ.

Мана профсоюз комитетне суйланăччĕ. Çав сăлтавпа пурте саламлаççĕ хайхи. Сергей Васильевич та куктĕрриллĕ çăмлă аллине тăсса пачĕ, «пурнатпăр, ай, аван», терĕ те пӳлĕмрен йăпшăнса тухса кайрĕ. Çакăн хыççăн вăл ман пата кунсерен кĕрс пуçларĕ. Анчах пĕринче те хăй мĕншĕн кĕнине палăртмарĕ.

Пĕррехинче, ĕç пĕтес умĕн, пӳлĕме ватах мар, пит-куçне сăрланă, тути хĕррисене хĕретнĕ кăтра çӳçлĕ хĕрарăм пырса кĕчĕ. Сывлăх сунчĕ те вăл, кĕске мăйне тăсса:

— Эсир, паллах, мана пĕлме тивĕç ĕнтĕ...—терĕ.

— Каçарăр та, ырă çыннăм,—пуçа пăркаларăм эпĕ,—астумастăп ăçта курнине.

Палламан хĕрарăм сĕтел умне пычĕ, куç айĕн пăхса, шĕвĕр пӳрнипе пысăк пĕлтерĕшлĕн юнаса илчĕ:

— Мана пĕлместĕр-и çак? Мана? Сергей Васильевич арăмне?—тĕлĕнчĕ вăл. — Хă, виçĕмçул эпир пасарта анчăк çури туяннă чух пире пуç сĕлтсе хăвартăр-çке? Нивушлĕ маннă? Эп пĕрре курнипех палласа юлтăм. Эсир профком председателĕ вĕт? Упăшка пирки эп. Турă пулăр, пулăшăр мана?

— Сергей Васильевича темĕн пулман пуль?—хыпăнса ӳкрĕм эпĕ.

— Çук, нимĕнех те пулман,—ответлерĕ хĕрарăм. — Ылтăн çын вăл ман Çерук. Вăрçма-ятлаçма мар, урлă сăмах чĕнеймест. Авлантарма та эп ăна хам авлантартăм. Вăтансах вилет. Çынран хăйăр пĕрчи ыйтса илеймест хăйшĕн. Эп ăна сывлăхне çирĕплетме санаторие кайма ӳкĕтлетĕп. Вăл пур, путевка ыйтма аван мар, тет.

Сергей Васильевич пӳлĕме кашни кун мĕншĕн кĕрсе тухнин сăлтавне те, арăмĕ ман пата мĕн çăмăлпа килнине те тин ăнланса илтĕм.

Хĕрарăм крокодил тирĕнчен çĕленĕ сумкинчен хут татки туртса кăларчĕ те мана хуллен тыттарчĕ:

— Акă, заявленийĕ те пур, хам каласа çыртартăм, хамах илсе килтĕм. Тархасшăн ярăр ăçта та пулин. Ĕçре типсех ларать вăл. Кайтăр, ӳт хуштăр.

Çывăх вăхăтра мĕнле путевка пур, çавна пама ыйтать-мĕн Сергей Васильевич.

Йĕркеллĕ çынна кĕçех тӳлевсĕр путевка патăмăр. Анчах тепĕр куннех арăмĕ хашăлтатса та çитрĕ.

— Мĕн туса хутăр эсир ман Çерука?— куççульпех йĕпенчĕ хĕрарăм. — Канни пулать-и кустăрма çинче уйăх халтăртатса çӳрени? Пушшех пĕтсе килет вăл унтан, пушшех типсе ларать. Эй, турă, кам шутласа кăларнă ăна, турпуйăса! Ямастăп! Санаторисĕр пуçне нимĕн те кирлĕ мар, çийĕнчен укçа тӳлесен те. Килтех лартăр. Акă путевки.

Ним тума та çук—çунчĕ путевка. Туристсен ушкăнĕ çĕрпывăн кăнтăр енне унсăрах саваăнса кайса килчĕ.

Ĕçлетпĕр, пурăнатпăр. Кун иртет те çĕр иртет. Сергей Васильевич пуçне çĕклемесĕр мăшăлтатса ларать сĕтел хушшинче.

Кетмен-туман çĕртен пӳлĕм алăкĕнчен каллех Айаван арăмĕ курăнса каирĕ. Кăштăрт хучĕ сĕтел çине заявлени. Хирĕçлемерĕмĕр, хальхинче те савăнтарма шутларăмăр Сергей Васильевича. Чан-чăн курортах яма йышăнтăмăр. Анчах икĕ кун иртрĕ-и, виççĕ-и, арăмĕ персе те çитрĕ.

— Эй, тур-тур,—нĕшĕклетрĕ вăл,—пĕтрĕ пуç. Ман Çерука курорта ярсах тĕп тăвасшăн-и эсир? Пĕлеп эп курорт мĕнне. Кӳршĕри Хĕлип те курорт хыççăнах арăмĕнчен уйрăлчĕ. Çерука ярапи çанта, тĕнче хĕррине? Пĕччен шанса ярапи арçынна? Хĕвеле, Уйăха асăнса калатăп: Çерук Хура тинĕс хĕрне каймасть! Лартăр килтех, хыткан кĕлеткипех. Эй, çырлах, кам шутласа кăларнă-ши çав курорта?..

Сергей Васильевич вунă хут та, çĕр хут та каçару ыйтрĕ пуль. Эпир шарламастпăр, ятламастпăр коллективри хисеплĕ çынна. Арăмĕ çеç пирĕнтен хăпмасть-ха, тата тепĕр заявлени парса хăварчĕ. Ăçта ямалла халь Айавана? Чĕнтĕмĕр ларăва. «Вăт, çапла-капла, эсир чирлеттĕрччĕ, вар-хырăм тӳрлетмелли санаторие кайма май пур»,—тетпĕр. Ку ухутах пулчĕ. Анчах эрне вĕçĕнче Сергей Васильевич арăмĕ путевкăна каллех сĕтел çине килсе хучĕ.

— Мăшкăллатăр ман Çерукран,—терĕ. Ана сыхласа, сыватса халăхшăн, çĕршывшăн ĕçлеттерме пĕлместĕр. Ман Çерук...

— Мĕн пулчĕ тата?—ыйтатăп çакăнтан. — Профсоюз комитечĕ сирĕн упăшкăр сывлăхĕшĕн тăрăшмасть-и? Ырă тăвасшăн мар-и? Санаторие пирĕн виçĕ çулта та пĕр çын каяймасть. Анланмастăп.

Хĕрарăм ниепле те лăпланаймасть, куççуль таксах хĕремесленет:

— Кулни пулмасăр тата... —тарăхать вăл. —Çынсем санаторие песплат кайса килеççĕ. Ман Çерука... Канни пулать-и, сывални пулать-и? Укçа çинчен шухăшласа вăл ӳт хушма мар, пушшех хăрăнса килĕ. Песплат путевкăлăх тар тăкман-и ман Çерук патшалăх ĕçĕнче? Ĕмĕрне çак архивра иртерчĕ.

... Ĕçлетпĕр, пурăнатпăр. Çутçанталăк çурхи тум тăхăннă вăхăтра пӳлĕме Айаван арăмĕ çуталса çитсе кĕчĕ. Мана курсан, йăлл! кулса сарлака тутине ик еннелле сарса пăрахрĕ, пуçне тайса, сĕтел çине каллех заявлени кăларса хучĕ. Унта çапла çырнă: «Сире çуркунне ячĕпе саламлатăп, сывлăха çирĕпетмешкĕн çывăхри кану çурчĕсенчен пĕрне путевка уйăрса пама ыйтатăп. Арăм хирĕçлемест».

Шупашкарти кану çуртне кайма хисеплĕ ĕçчене путевка ухутах тупса патăмăр. «Пурнатпăр, ай, аван» тесе пуçне пĕке-пĕкех уйрăлчĕ пирĕнтен Сергей Васильевич.

Çурхи уявсем иртсе кайнă хыççăн çанталăк пăсăлчĕ. Çил вăйланчĕ, çумăр лӳшкеме тытăнчĕ. Таврана çĕмĕрт сивви сарăлчĕ. Айаван Атăл леш енчен вăхăтсăрах таврăннă-мĕн. Хутса ăшăтман павильонра шăнса чире кайнă. Ӳпке шыççипе виçĕ уйăх пульницара выртрĕ, ун хыççăн песплат санаторие те кайса килчĕ. Унтан килсен, кăшт вăхăтран ĕçе пычĕ те, пурне те васкамасăр, йĕркеллĕн, асăрхануллăн алă тытса тухрĕ, хăюсăррăн пăхкаласа, «пурнатпăр, ай, аван» терĕ те, хăйсен пӳлĕмне кĕрсе çухалчĕ.

«Эх, Айван Айаван,—терĕ вара хут çĕлекен пĕр хĕрарăм.— Арçын ятне илтсе пурнать çав çĕр çинче...»

# ПЫСӐКРАХХИ

Паллова чылайранпа пӗлетӗп. Паллашасси-мӗнӗ акӑ ӑстан пуҫланчӗ.

Эпӗ ун чухне ял Советӗнче ӗҫлеттӗм, вӑл—финанс пайӗн инспекторӗччӗ. Райцентра-мӗне кайсан, хушӑран ун патне кӗркелесе те ҫывӑрнӑ. Паллов валли те ман килте ӑшӑ вырӑн яланах пурччӗ. Вӗри шӳрпе е шаркку антарма сӗтел ҫинче тӑм чашӑк, ҫиме йывӑҫ кашӑк, кӑпӑклӑ урпа сӑри ӗҫме савӑт ҫителӗклехчӗ.

Иксӗмӗр пӗрле чухне пирӗн умран ҫӗрӗпе те шахмат каймастчӗ. Вӗсем патне райпо пуҫлӑхӗ Сумов пырсан ҫеҫ Паллов авалхи ӑслӑ вӑййа шакӑрт кӑна пӑрахатчӗ. Арӑмӗ те, Антонина Ивановна, ялан ал ӗҫӗ тӑвакансскер, кӑмака умне йӑпӑшт кӗрсе ҫухалатчӗ. Паллов хӑй арӑмӗпе мухтаннине эпӗ ялтах, хамӑр сӗтел хушшинчех, илтсе йӑлӑхнӑччӗ. Хӑна пӑхса чап илнӗ хӗрарӑм, ун шучӗпе, урӑх ниҫта та ҫук-мӗн.

Малтанах эпӗ унӑн ӑсталӑхне ытлашши асӑрхаманччӗ. Мӗн лартса панӑ—ҫиетӗп, мӗн ӗҫтереҫҫӗ—ӗҫетӗп. Тав тӑватӑп. Каярахпа Антонина Ивановна хӑй пултарулӑхӗпе паллаштарма тытӑнчӗ. Енчен те, Сумов килсен, вӑл ун умне, чӗвӗл-чӗвӗл калаҫса, кӗмӗл тӗслӗ тӑрӑхла турилкке лартса парать, ман ума — тӑмран тунӑ йӳнӗ чашӑк. Ун савӑтӗнче пуҫламан кӑвакал месерле пӑсланса выртать, ман турилккере—ҫунаттипе мӑйӗ. Кашӑкӗ те, вилки те унӑн кӗмӗл, манӑн вара—ахаль йышши. Черккисем те урӑхларах-ҫке. Ман—хулӑн кӗленчеллӗскер, унӑн—кӗмӗл шывӗпе тавралла йӗрлесе тухнӑскер.

Сумов тухса кайсан, Антонина Ивановна хӑлхаран пӑшӑлтатрӗ:

— Ана ҫапла хӑналанӑшӑн эсир ан пӑшӑрханӑр. Пысӑкраххиҫке вӑл, хӑвӑрах ӑнланма тивӗҫ,—терӗ пӗр хӗрелмесӗр.

Каккуй пӑшӑрханма-ҫилленме унта. Хваттере янӑшӑн, тутлӑ апатпа сӑйланӑшӑн тем пекех пысӑк тав.

Самаях вӑхӑт иртсен, пирӗн райфо пуҫлӑхне тата пысӑкрах ӗҫе куҫарчӗҫ. Ун вырӑнне вара Паллов йышӑнчӗ.

Сумов хӑйне нумай кӗттермерӗ, района килсе, шут шӑрҫи шутаракансемпе канашлу ирттерчӗ. Ун хыҫҫӑн Паллов, ӗлӗкхи пекех, хӑй патне чӗнчӗ ӑна.

Антонина Ивановна «Ма хитре-ши Шупашкар урамӗ» юрӑ кӗввипе кухньӑран сӗтел патне, сӗтел патӗнчен кухньӑна йӑкӑртатать. Ларатпӑр эпир пӗҫ хуҫса, сӑмах-юмах ҫаптарса. Сӗтел пӑсланать, йӑсӑрланать, сӗтел ури те авӑнать тейӗн, кил хуҫи хӗрарӑмӗ ҫаплах пирӗн пата темтеҥӗр йӑтать. Палловпа арӑмӗ Сумов килнишӗн хаваслӑ. Хаклӑ хӑна умне ылтӑнланӑ чашӑкпа чӑп-чӑмӑркка сысна ҫури хунӑ. Сап-сарӑ пуличчен ӑшаланӑ нӑришка ылтӑн тирпе витӗннӗ пек йӑлкӑшса выртать. Сумов ӑна ылтӑн вилкӑпа хӑлхинчен аяларах пусса ылтӑн ҫӗҫӗпе кӑчӑрт-кӑчӑрт касать те, ылтӑнланӑ черккене ҫӗклесе, йӑл кулам пекки тӑвать. Эпир те Палловпа кӗмӗл чашӑк ҫинчи ҫурмаран касса хунӑ сысна ҫурине кӗмӗл вилкӑпа тирсе, кӗмӗлленӗ черккесене ылтӑн черкке ҫумне сӗртӗнтеретпӗр. Ылтӑн-кӗмӗл сасси, Антонина Ивановна юррипе хутшӑнса, пушшех янравлӑн янӑрать.

«Пысӑкраххине пӑхмалла, сире ку та, вӑл та юрӗ»,—пӑшӑлтатать Паллов арӑмӗ. Хӑй ҫав вӑхӑтрах Сумова пилӗк ҫӑлтӑрлӑ коньяк тултарса парать, пире—пилӗкҫӗр аллӑ пилӗк ҫӑлтӑрлине. Ана Антонина Ивановна ялти тӑванӗсем патӗнчен тупса килнӗ, тет...

Миҫе хӗлпе ҫу вӗлтлетсе иртрӗҫ-ши ҫав каҫранпа—шутламан. Ҫакна каламаллах: Сумов ҫӳлелле урӑх улӑхаймарӗ, «пусма картлашкипе» аялалла анса-анса пычӗ те, тӗп хулари пӗр райфо пуҫлӑхне пулӑшма тытӑнчӗ. Мана та ун умӗн Шупашкара ӗҫлеме илнӗччӗ. Ҫулла хамӑр районах акатуй иртterме представитель туса ячӗҫ. Кунта каллех виҫҫӗмӗр тӗл пултӑмӑр та—тӳрех Паллов патне.

Антонина Ивановна яланхи пекех сӗтел хатӗрлет. Паллов мана пусахласах унччен Сумов ларакан вырӑна тӗртсе кӗртсе лартрӗ. Арӑмӗ ман ума ылтӑнланӑ чашӑк, черкке-вилка, ҫӗҫӗ кӑларса хучӗ, пилӗк ҫӑлтӑрлӑ коньяк уҫса лартрӗ, ылтӑн тирлӗ автан йӑтса килчӗ. Упӑшкипе Сумова тӑмран тунӑ турилккесем ҫине автан ҫунаттисемпе аяк пӗрчисене хурса пачӗ, ахаль черккисене пилӗкҫӗр аллӑ пилӗк ҫӑлтӑрлине тултарчӗ.

Эпӗ именнипе ӗҫме-ҫиме аптрарӑм. Сӗтел хушшинче мӗн-мӗн пулнине вӗҫӗмсӗр сӑнакан Антонина Ивановна ман пата пырса та тӑчӗ.

— Мӗн вӑтанса ларатӑр ҫак,—ирӗлет вӑл ҫуллӑ чӗлхипе. — Ӗҫӗр-ҫиийӗр, кусем ҫине ан пӑхӑр. Вӗсене юрать. Эсир вара—пысӑкраххи.

— Вара мӗн,—кӑнн пӑхрӑм Паллов арӑмне.—Эпир туссем вӗт. Сӗтел хушшинче те пысӑкки-пӗчӗкки пур-им?

Хам ума лартнӑ илемлӗ чашӑк-кашӑка эпӗ Сумова патӑм.

... Антонина Ивановна пире хӑна тума сӗтел ҫине апат-ҫимӗҫ каллех лартать. Халь вӑл пач чӗвӗл-чӗвӗл калаҫмасть, тунсӑхлӑ юрӑ ӗнерет. Кӗҫех сӗтел ҫийӗн тӑватӑ черкке пӗр сасӑпа янӑрарӗ—уҫӑ кӑмӑллӑ сасӑпа.

# САМСАМСОН

Пирӗн пуҫлӑхӑн пӗр заместителӗ вӗҫӗмсӗр улшӑнатчӗ. Кам кӑна ларса курмарӗ пуль вӑл пукан ҫине. Коллективра пурпӗрех кадрсемпе ӗҫлесси тата йӑла ыйтӑвӗсене йӗркелесси начар пулса пыратчӗ. Такам сӗннипе-тӗртнипе треста Якиев хушаматлӑ вӑтам ҫулсенчи, йӑрӑс кӗлеткеллӗ, япшар чӗлхеллӗ арҫын килсе ҫакланчӗ. Екӗм Ехӗмч тупата малтанхи замсенчен пуринчен те ирттерчӗ, паллах, ӗҫӗпе мар,—урӑх енӗпе.

Якиев чи малтанах хӑйне пулӑшакан шанчӑклӑ, итлекен ҫын шыраса тупрӗ. Унччен нимпех те палӑрса кайман, ӳссех ҫитеймен Самуил Самсоновича инспектора тытрӗ те лартрӗ. Лешӗ ку ӗҫе

ухутах пулчӗ. Техника библиотекинче кӗнекесемпе, чертежсемпе аппаланса йӑлӑхнӑскер, хӑйне унтан туртса кӑларнӑшӑн кӑвапа таран пуҫ тайсах тав турӗ... Самуил Самсоновича эп астӑвассах Самсамсон тесе чӗнеҫҫӗ. Ячӗпе ашшӗ ятне кӗскен каланӑшӑн вӑл кӳренмест.

Управляющи кашни ир иртерекен радиоҫухрашу хыҫҫӑн ӑна Якиев хӑй пӳлӗмне чӗнсе илет те кун каҫа-тумалли ӗҫсен планӗпе паллаштарать. Унтан, «эпӗ ҫав-ҫав ӗҫпе ҫав-ҫав ҫӗрте пулатӑп, ман вырӑнта хускалмасӑр лар» тет те, кантуртан тухса шӑвӑнать.

Чӑнах та, Екӗм Ехӗмч кӗҫех йӗп пек ҫухалать. Ӑна трестра ҫеҫ мар, хулара та никам ниҫта шыраса тупаймасть. Хӑшӗсем калана тӑрӑх, вӑл юратнӑ арӑмне ал ӗҫӗ тума пулӑшать иккен. Ҫӑмран кофта ҫыхса йӑлӑхать те сехечӗ-сехечӗпе аквариумри ылтӑн тӗслӗ пулӑсене сӑнаса выртать, унтан маркӑсемпе значоксем майласа йӑпанать.

Уншӑн Самуил Самсонович тар юхтарса ӗҫлет. Хуҫа шанса панӑ анкарти пек анлӑ пӳлӗмри вӑрӑм сӗтел хушшине саркаланса кӗрсе ларать те, икӗ хӑлхи ҫумне те телефон трубкисем хӗстерсе, харӑсах темиҫе ҫынпа калаҫать. Мӗнле кӑна ыйту татса памасть-ши Самсамсон кун каҫиччен!

Акӑ, пай пуҫлӑхӗсене пухса, общежитисенче йӗрке тума кӑларса ярать. Унччен хӑйӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ техника пайӗн начальникӗ те халӗ ун патне шаккаса кӗрет, унран чертежсем упрамалли шкап тутармашкӑн тархасласа ыйтать. Аякран килнӗ тӗрлӗрен пуҫлӑхсене мӑнаҫлӑн йышӑнать инспектор. Ҫамрӑк рабочисем умӗнче ҫулӑмлӑ сӑмах сирпӗтет. Хваттер, ясли вырӑнӗ ҫуккисене малашлӑх ӗмӗчӗпе хавхалантарать. Сӗтел хушшинчен тухайми пуличчен тӑрмашать ҫапла Самсамсон, пуҫлӑхшӑн тертленсех шанкӑ пек типсе пырать.

— Екӗм Ехӗмч,—йӑлӑнать вӑл пӗррехинче,—спектакльти пек пулса тухать-ҫке. Сирӗн роле выляса ывӑнтӑм эп. Пӗри тарлаканни, тепри кулаканни майлӑ мар-и капла?

Инспектор сӑмахне Якиев хӑлхана та чикмест, ӑна пуҫӗнчен лӑпкаса йӑпатать:

— Эх, Самсамсон юлташ, ытла ан хӑмпӑлан, атту ҫурӑлса кайма пултаратӑн. Мӗн хушнине ту, ху умӑнта кам ларнине асту...

Лешӗ вара каллех ун пӳлӗмне ларса юлать, малалла ҫӗмӗрттерет. Якиев ҫаплах-ха ҫӑм чӑлха ҫыхать, пулӑ ӗрчетет...

Вӑхӑт иртнӗҫем сисеҫҫӗ трестра Якиев мӗн туса пурӑннине. Пӗр ирпе управляющи иккӗшне те хӑй патне чӗнтерет, хирӗҫ ларса ыйту парать:

— Калӑр-ха, тархасшӑн, сирӗнтен хӑшӗ ман заместитель?

— Эпӗ,—ура ҫине яшт тӑрать Якиев.

Управляющи кӑшт кулса илет те пуҫне пӑркалать:

— Самуил Самсонович тата кам-ши?

— Вӑл камне пӗлетӗр вӗт—кадрсем енӗпе ӗҫлекен инспектор,—ӑнлантарма хӑтланать заместитель.

— Апла-тӑк,—тет управляющи,—кадрсен ыйтӑвне татса парар, ларӑр та юнашар, ҫырӑр иксӗр те заявлени: пӗри—ӗҫрен хӑтарма, тепри—ӗҫе кӗме.

Самуил Самсонович чӑн та зам пулса тӑрать, унченхинчен те ытларах чунне парса ӗҫлеме пуҫлать. Якиев вара трестран тухса шӑвӑнать.

... Ҫӗнӗ вырӑнта пӗрремӗш хут ӗҫ укҫи илнӗ май Самуил Самсонович юлташӗсемпе пӗрле ресторана апатланма каять. Вӗсен сӗтелӗ умне пырса тӑнӑ официант куҫӗнчен чеен пӑхса илет те:

— Халĕ эпĕ приказ паратăп. Мĕн хушнине ту, ху умăнта кам ларнине асту,—тет лăпкăн.

Поднос йăтнă Якиев йăпăртатса буфета кĕрсе çухалать.

# ЙЎÇĔ КУКĂЛЬ

Маньăпа Таня ĕçре паллашрĕç:

— Таня,—пуçне сĕлтрĕ ун чух пĕри.

— Маня,—ура çине тăрса сывлăх сунчĕ тепри.

Çавăнтанпа вĕсем ăмăртмалла тенĕ пек шут шăрçисене шак та шак шаклаттарма тапратрĕç, кăнтăрлапа икĕ хутлă столовăя пĕрле çўреме тытăнчĕç. Питĕ тутлă хуран кукли пĕçерессĕ унта. Çавăншăнах-и, тен, ĕçри халăх апат вăхăтĕнче ресторанта та, ытти столовăйсенче те мар, çакăнта ытларах хĕвĕшет.

Маньăпа Таня малтанхи кунран пуçласах пĕр сĕтел хушшине ларма хăнăхрĕç. Пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăха-пăха кашăксене вĕлт те вĕлт вылянтараççĕ кăна вĕсем...

Питĕ туслашса кайнăччĕ хайхисем, кĕпе-тумтирне те пĕр пеккине туянса тăхăннăччĕ. Каччăсем ўпре кĕтĕвĕ пек сырăнчĕç чиперккесене... Çамрăк вăхăта çамрăкла ирттернĕ самантрах Таня райпо председателĕн арăмĕ пулчĕ тăчĕ.

Тантăшсем ĕçре пурпĕрех пĕрлеччĕ, апата та унччен столовăях çўретчĕç, хире-хирĕç пăхса хуран кукли çиетчĕç. Малтанах ăна-кăна асăрхайманччĕ-ха Маня. Турилккине пушататчĕ те вăл тепĕр турилккери апата çиме тытăнатчĕ. Пăхать пĕррехинче Маня çапла,—Таньăн турилккинче тăп-тулли хуран кукли иккен, кашăкĕ çаврăнаймасть, иçмасса, ун вара яланхи пекех ултă-çиччĕ çеç ярăнса çўрет. Маня нимĕн те шарламарĕ, ĕçе тухса уттарчĕ. Анчах кăмăлĕ пăсăлчĕ унăн, хăйпе юнашар пыракан Таньăна та, официанткăпа повара та тарăхрĕ вăл. «Укçине пĕр пекех тўлерĕмĕр, çиме вара уйрăмрах çирĕмĕр. Ак тамаша», —вĕчĕхрĕ хĕр хăй ăшĕнче. Каярахпа Таньăран укçа та илми пулчĕç, лешĕ шăпăрт та шарламарĕ, тав тума мансах йăкăртатса туха-туха кайрĕ.

Маня çакăн хыççăн апата Таньăпа çўреме пăрахрĕ. Юлташĕн турилккинчи хаксăр хуран кукли ытла та йўçĕ пек туйăнчĕ ăна.

# МУЛКАЧ МĂШКĂЛĚ

Ĕçрен ĕшенсе таврăннă хыççăн диван çинче пĕç явса выртакан Кашкăра чакăлти Чакак çыру парса хăварчĕ. Кашкăр конверта чĕрнипе чĕрсе уçрĕ те савăннипе чалтах сиксе тăчĕ.

— Хă-ă! Мулкач! Пилĕк çул курманччĕ. Тинех тупăнчĕ. Мĕн сăрмаклану-ха татăк хўре?

«Чунтан-вартан юратнă Кашкăр-кашаманăм!—юр пек шурă хута хуратнă Мулкач. — Эпĕ Шупашкара килсе ĕçе вырнаçрăм, ăшă йăва çавăртăм. Во! мĕнле пурăнатăп халĕ. Ырă курмашкăн, савăнса канмашкăн тем те пур. Витнĕ пасарта кашни кун чĕрĕ кишĕрпе купăста туянатăп. Парикмахерскине кĕрсе çўç кăтралаттаратăп. Ательере хитре кĕпе çĕлеттеретĕп, тумтир тасаттаратăп-çутаратăп. Сан пата яма фотографинче сăн ўкерттеретĕп. Шывра чăма-чăма мунча кĕретĕп. Пуç ыратсан—пульница çывăх... Пурте пур пирĕн—эсĕ çеç çук. Сана хăнана чĕнетĕп. Килсен, хăвах курса савăнăн, каялла та каяс темĕн. Пурăн, хваттер пирĕн нумай. Карта кăмпи пекех ўсеççĕ çурчĕсем. Тĕл пуличчен».

Кашкăр тин çеç туяннă йăрăмлă кĕпе, хура костюм, шлепке, лакпа витнĕ пушмак тăхăнчĕ, хĕрлĕ галстук çыхрĕ, укçа чиксе çула тухрĕ. Автобуспа вăл Мулкач калану бульвара çитрĕ. Гастроном тĕлĕнче анмаллаччĕ. Хыçалтан хытă тĕртнипе хăна шыв кўлленчĕкне шампăрт! сикрĕ. Пушмакне хывса силленĕ хыççăн тин асăрхарĕ: çынсем пурте резина атăпа иккен. Кашкăр та атă шыраса урамсем тăрăх чупса çаврăнчĕ—ниçта та тупаймарĕ. Ара, промышленность таварĕсем ниçта та сутмаççĕ-мĕн.

Шухăша кайнипе Кашкăр сисмесĕрех проспекта çитсе тухрĕ. Строительсене курсан, чунĕ лăштах пулчĕ унăн, ара, хăй те хула урамĕсене чавса çўрет-çке.

— Салам, Кашкăр!—алă тытрĕ ăна сарă каска тăхăннă качча.—Мĕн çăмăлпа çўретĕн? Мулкачна сухатнă пуль-ха?

— Çапла çав,—йĕпе пушмакĕ çине шеллесе пăхса каларĕ Кашкăр,—чунăмах шыратăп. Тулĕк ун патне резина атăсăр çитеес çук пуль. Кунта универмаг пур терĕç те...

— Э-эх, тăванăм. Суйнă сана. Универмагĕ пулмаллаччĕ те çав, иртнĕ пилĕкçуллăхрах... Авă, халĕ тин никĕс сăвайĕсене майлаштаратпăр. Пилĕк çул кĕтнине тепĕр пиллĕк кĕтме пулĕ.

Кашкăр хаш! сывларĕ, кулянса сăмахларĕ:

— Ман паянах хăнана çитмелле çав. Мулкач ун чухлех кĕтмĕ. Эс луччĕ мана кишĕр ăçта туянмаллине кала. Пуш алăпа кайма аван мар.

— Аптрамалла санпа, тăванăм... Кунтан инçе мар, авă, витнĕ пасар пулмаллаччĕ, халлĕхе проекчĕ те çук. Çавăнпа кишĕре халĕ сан унта мар, авă, бульварпа проспект кĕтессинчи гастроном патĕнче шырамалла.

Калану çĕрте Кашкăр урамра ларакан хĕрарăмсенчен кишĕр туянчĕ те магазина хĕсĕнсе кĕчĕ. Шалта халăх пичкери пулă пек. Черетре тăрса ывăннă Кашкăр чăтаймарĕ:

— Хă-ă!— терĕ. —Мулкач валли ман кучченеç часрах туянмалла. Ăçта завмаг?

— Эпĕ кунтах-ха,—çийĕнчех тухса тăчĕ ун умне тулли кĕлеткеллĕ хĕрарăм. —Хамăнне те чутах аяк пĕрчине хуçатчĕç. Халăхĕ

пур—вырӑнӗ ҫитмест. Ҫавӑнпа черечӗ те вӑрӑм. Кунӗпе миҫе пин ҫын тапӑртатмасть-ши?

— Урӑх магазин ҫук-им тата?—ыйтрӗ тӗлӗнсе Кашкӑр.

— Ҫук ҫав...

Магазинран салху кӑмӑлпа тухнӑ Кашкӑр кишӗр хутаҫҫине хулпуҫҫи урлӑ уртса ячӗ те Мулкач пурӑнакан ҫурта шырама пуҫларӗ. Ҫумӑр лӳшкет, таврара пӑч-тӗттӗм. Миҫе урамра кӑна пулмарӗ пуль вӑл—кирлӗ ҫурта тупаймарӗ. Икӗ ҫырма хушшинчи ҫурутраври ҫак урамсене ку таранччен те электролини карман иккен. Пӗр урамӗ вӗҫӗнче темиҫе шӑтӑка чӑмса тухрӗ, вӗри шыв пӑрӑхӗ улӑштарнӑ хыҫҫӑн витмен канавра ишрӗ, вӗҫленме пӗлмен ӑшӑ трасси тӑрӑх упаленсе тухса, тепӗр тарӑн шӑтӑка сикрӗ. Юрать-ха мӗскӗне ирпе шкул ачисем туртса кӑларса ҫӑлчӗҫ.

Акӑ, ҫурӑлса пӗтнӗ, вараланнӑ тумпа, шлепкесӗр, хӑрах пушмакпа, кӑн-кӑвак пит-куҫпа уксахласа пырать Кашкӑр. Хӑнана ҫитиччен тасаласшӑн, ҫӑвӑнасшӑн, унтан пульницана кӗрсе сывалассшӑн. Ҫук, ӑнмасть шереметӗн. Йӑла комбинатне халӗ те туса пӗтерейменн. Мунчан кӑшкарӗ ҫеҫ. Пульницана вуннӑмӗш ҫул тӑваҫҫӗ, тет. Кашкӑр, аптранӑ енне, кино курса чуна лӑплантарасшӑнччӗ. Нимӗнле кинотеатр та ҫук иккен ку таврара.

Улталанӑ ӑна Мулкач, чип-чиперех мӑшкӑл кӑтартнӑ. Хӑй вӑл хулан тепӗр енче пурӑнать-мӗн. Ҫырури йӑла ҫурчӗсемпе кермен-сем йӑлтах Мулкачсен районӗнче. Кашкӑр пулнӑ района хула хуҫисем темшӗн пӗр енлӗ кӑна аталантараҫҫӗ-ҫке.

Каҫ енне тин ӑнсӑртран тӗл пулчӗ тукмак хӳре вӑрӑм хӑлхана.

— Эй, Кашкӑр-кашаман, Мулкач ҫуртне тупайман... — тӳрех йӗкӗлтеме тытӑнчӗ лешӗ.

— Ну, Мулкач, лекӗн-ха!—тесе хӑвалама ҫеҫ пуҫланӑччӗ ӑна Кашкӑр, таҫтан тупӑннӑ тепӗр шӑтӑка ярӑна пачӗ, унтан аран-аран тухрӗ те, ним тӑвайман енне, уласа ячӗ.

# ТӐРНАККАЙ

Юрук Юркипе пӗр ҫулта ҫуралнӑ эпир, шкула та пӗрлех ҫӳре-рӗмӗр.

Юрки усала ашшӗнчен хӑнӑхрӗ пулмалла...

Юрук пичче тесе чӗнеттӗмӗр ашшӗне. Тӑнран яратчӗ вӑл вӗреннӗрех ҫынсене: «Хӑш патша миҫе ҫул пурӑннӑ? Тӗнчере миҫе вӑрҫӑ пулнӑ? Арӑслана ташлама вӗрентеҫҫӗ-и? Кушакпа йытӑ ма вӑрҫаҫҫӗ?»—таҫтан тупать ҫакнашкал ыйтусем.

Пĕррехинче атте çăпата туса ларать. Юрук пичче çитрĕ. Пакăлтатрĕ-пакăлтатрĕ, тĕпчерĕ-тĕпчерĕ аттене, хăйне ăслă çын пек кăтартасшăн тем пек тăрăшрĕ.

Еçлекен çын пуш параппан çапакана хăçан юратни пулнă? Атте те, ун сăмахĕсемпе йӳçĕхсе çитнĕ май, чĕлĕм туртса ячĕ.

— Ну, кусене пĕлетĕн, тейĕпĕр. А мĕн сăмах вăл фельдфебель? Хăвăрт ăнлантарса пар-ха мана?—каллех ыйтрĕ Юрук пичче.

— Фельдфебель?—куçне чеен хĕсрĕ атте. —Фельдфебель акă мĕн...—танн тутарчĕ Юрук пиччене калăплă çăпатипе...

Вĕçкĕн тĕпчевçĕ чӳрече умĕнчен вĕлтлетсе иртни çеç курăнчĕ.

— Итле эс, ывăлăм,—терĕ кайран атте мана, — пĕли-пĕлми сăмахпа нихçан та çынна тăнран ан ил, нумай пĕлетĕн пулсан, пурнăçра усă кур унпа, çынсене усă кӳр. Юрук пиччӳ, ав, пакăлтатсах ĕмĕрне иртерет. Чăннипе пусĕнче унăн ăсĕ арпа миххинчи виç пĕрчĕ тырă чухлĕ çеç.

Атте вĕрентсе каланисем пурнăç сукмакĕпе утнă чухне самаях пулăшрĕç мана.

Шкул вальсне ташласа тухса кайнăранпа вăхăт чылай иртрĕ. Тĕрлĕ çул суйласа илчĕç ачасем. Юрук Юрки ун чухне, пирĕнпе энциклопеди терминĕсемпе çеç калаçатчĕ пулин те, вырăспа чăваш сăмахĕсене пăтраштаратчĕ.

Нумаях пулмасть эпĕ Çĕпĕрти хуларан яла таврăнтăм. Тĕлпулу ячĕпе тăвансемпе ларатпăр. Кĕтмен çĕртен куккасем патне Юрук Юрки çитсе кĕчĕ. Еçкеленĕ май чĕлхи сӳтĕлсех кайрĕ ачан. Перкелешет те перкелешет. «Интеграл, интермеди, интерес, интервал, интервью, Интеркосмос тата ытти интерсем ăçтан тухса кайнă, мĕне пĕлтереççĕ»,—тесе йĕкĕлтесе ларать.

Чăтаймарĕ ман кукка, ура çине сиксе тăнăскерне хулпуççинчен пуссах лартрĕ.

— Эх, Юрки,—терĕ лăпкăн,—аслă шкул та пĕтертĕн, çапах аçу юрринчен лайăхрах юрă вĕренеймерĕн. Эс пире кунта тĕрлĕрен ыйтусем парса тĕрĕсленĕ пекки турăн. Парам-ха эп те сана пĕр ыйту: «Мĕне пĕлтерекен сăмах вăл «тăрнаккай?»

Юрки куçĕсене кукка енчен пăрчĕ те тутине чалăштаркаласа илчĕ:

— Пĕлместĕп ку сăмаха, илтме илтнĕ те, ăçтан тухнă—калама пултараймастăп. Пĕр-пĕр çын тăрнаккай пулнă пулĕ. Çавăнпа халăх хушшинче сарăлнă. Тен, эсир те мана тăрнаккай тетĕр пуль? Вĕреннĕ çын эп, диплом пур ман...

— Диплому хăвăнтах пултăр сан,—чарчĕ Юркине кукка, — «тăрнаккай» сăмаха та ăнлантарса параймансккер, чăнахах тăрнаккай пуль эсĕ?

— Эпĕ-и?—сиксе тăчĕ Юрки. — Ак сире, киле кайса словарь илсе килетĕп те тĕп-тĕрĕс ăнлантарса паратăп. Тупнă «тăрнаккай» темелли çын.

— Тăрнаккаях ĕнтĕ, кӳренмесĕрех йышăн: вĕреннĕ тăрнаккай!—ахăлтатса кулса ятăмăр эпир пурте.

# ПУРНĂÇ ЮХХИНЧЕ

## УНИВЕРСИТЕТРА

Ларивапа Мирун ĕлĕкренпех пĕр çулпа утаççĕ. Тĕн уявĕсенче пĕринче те чиркӳрен юлман. Чиркĕве кайнă чухне Мирун яланах Лариван патне кĕретчĕ. Анчах юлашки вăхăтра Мирун çак çул çинче курăнмарĕ. Ларивана ку тĕлĕнтерчĕ. Пĕр каçхине старик Мирунсем патне анчĕ.

— Аслаçу пур-и?—ыйтрĕ вăл кĕнекс вуласа ларакан пĕчĕк Павăлран.

— Университетра,—лăпкăн хуравларĕ ача.

— Мĕнле университетра?—тăруках ăнланмарĕ Лариван.

— Культура университетĕнче,—тепĕр хут каларĕ Павăл, — асанне те, аттепе анне те унтах. Эсир тата мĕншĕн вĕренӳре мар, Лариван мучи?

Лариван Мирунсен килĕнчен шухăша кайса тухрĕ, пĕр вăхăт хапха умĕнче иккĕленсе тăчĕ. Унтан вал, тем пулнă пек, Мирун кайнă çĕнĕ çулпа—ялти клуб еннелле уттарчĕ.

## ХУРА ПĔРКЕНЧĔК СИРĔЛЕТ

Ку ĕç пĕр çирĕм çул каяллах пулса иртнĕччĕ.

Пĕррехинче яла халиччен курман тракторсем килчĕç, урамсене çӳллĕ юпасем ларта пуçларĕç. Сăнчăрлă пиçиххи çыхнă каччăсем юпасем çине пралук карса тухрĕç. Вĕсем Çурта Матĕрни патне те çитрĕç.

— Кинемей,—терĕç каччăсем,—çутă кĕртсе паратпăр.
Матĕрне кĕтесри турăшсем енне пăхса сăхсăхса илчĕ:
— Çук, çук, ачамсем, лектричествă кĕрттерместĕп эпĕ, çылăх пулать.

Тепĕр темиçе кунтан яла уяв çитрĕ, урамсемпе пӳртсенче Ильич лампăчкисем ялкăшрĕç. Матĕрнесен умĕнчи юпа тăрринче те çĕнĕ хĕвел çуталчĕ. Унăн куçа шартаракан пайăркисем кантăк витĕр Матĕрне пӳртне кĕчĕç. Матĕрне çавăнтах чӳречене кивĕ утиялпа карса хучĕ. Пӳртре халĕ кĕтесри лампада çути çеç тĕксĕммĕн мĕлтлетрĕ.

Анчах та, пурăнсан-пурăнсан, пĕррехинче Çурта Матĕрни çывăрма выртнăскер сиксе тăчĕ те чӳрече çинчен утияла сирсе пăрахрĕ. Çĕрлехи хĕвел пӳрт ăшчиккине çап-çутă турĕ.

Халăх çутинчен пытанса йăлăхнăскер, Матĕрне, çылăха-мĕн мансах, ирпе монтер патне тухса утрĕ.

# ПРОПИСКĂСАР ТУРĂШ

Кĕркури — çитмĕлелле çывхарнă ватă, машина паркĕнче хуралта тăрать. Карчăкĕпе иккĕшех пурăнаççĕ. Сывлăх енчен аптрамаççĕ-ха. Пурнăçĕ те чиперех темелле. Кăçал вĕсем, колхоз пулăшнипе, çĕнĕ пӳрт лартрĕç.

Киввине пăсас умĕн Кĕркури хăй хĕрĕх çул ытла пурăннă пӳрте кĕчĕ те кĕтесри турăша алла илчĕ. Нумайччен шухăша кайса тăчĕ вăл Христос сăнне ӳкернĕ картина умĕнче.

— Çук,—терĕ вара кăмăлсăррăн,—сана эпĕ çĕнĕ пӳрте хампа пĕрле илсе каймастăп. Пайтах кĕл турăмăр карчăкпа иксĕмĕр, анчах пурпĕрех йывăр вăхăтсенче пулăшу тавраша ямарăн: ывăла та вăрçăран илсе килеймерĕн, пӳрт те лартса памарăн. Ватлăхра вара эсĕ мар, колхоз пулăшрĕ. Тĕрĕсех каларĕç пуль çав клубра: тĕн-тĕшмĕш вăл — ултав. Эй, санпа, чунсăр хăма татăкĕпе!..

Вăнны! туса вĕçрĕ Кĕркури ывăтса янă турăш алăк патнелле.

# «АТТЕ ХĂЙ КАЛАРĔ»

Çтаппан çиччĕ тултарчĕ. Кунĕпех вăл букварьне уçа-уçа хупать. Саспаллисене пурне те паллать ĕнтĕ, вулама та кăшт пултарать Çтаппан, çыраса вара чăх чĕрни пек сăрмаклать.

Пĕррехинче амăшĕ Çтаппана иртерех вăратрĕ.

— Ывăлăм, паян икĕсĕмĕр пасара кайăпăр, куккусем патне те кĕрсе тухăпăр,—терĕ.

Çтаппан хĕпĕртесе ўкрĕ. Пасарлă яла çитиччен вĕсене лашапа тухнă Микула мучи лартса кайрĕ.

— Ай-яй пысăк çурт, пăх-ха, анне, тăрри çап-çутă йăлтăртатать, шалта мĕнле-ши. Кĕрсе курар-и?—кĕпе çаннинчен карт-карт туртса илчĕ Çтаппан.

Кун пек пулса тухасса кĕтмен Марье инкен чĕри лăшах пулчĕ. Кутăнрах ывăлне чиркĕве епле илсе кĕртесси çинчен паçăртанпах шухăшласа пыратчĕ-ха вăл. «Ашшĕ хăех шкула кайма пуçличчен ачана шыва кĕртес, ăна пачăшкă умĕнче хĕрес чуптутармасан хамăра та çылăх пулĕ, терĕ те»,—картишне кĕнĕ чух шухăшларĕ Марье инке, пичĕ умне çине-çинех хĕрес хунă май.

Çтаппаншăн кунта пурте кăсăклă: «Мĕншĕн хĕрес нумай лартса тухнă? Ма çынсем хура халатсемпе? Ку хуранĕ мĕн тума кирлĕ?» —анратса пĕтерчĕ вăл амăшне.

— Çакна ĕç-ха,—хĕрлĕ шĕвек сĕнчĕ ăна хулăн сасăпа мăкăртатакан пачăшкă.

— Эрех вĕт ку,—хăюсăррăн хирĕçлерĕ Çтаппан. — Ачасене ĕçме юрамасть вĕт...

— Эрех мар, тура юнĕ вăл. Ĕç те, çак хĕресе чупту, вара шкулта пуринчен лайăх вĕренекен пулăн,—суйма пăхрĕç пĕчĕкскерне.

Çтаппан пуçне çеç пăркаларĕ.

— Турă чури, çўлти аттемĕре хисепле! —янăраса кайрĕ пачăшкă сасси.

— Чура мар эпĕ. Суятăр, мучи, нимле турă та çуккă. Атте клубра лекци вуланă чухне хăй каларĕ! — алăк хыçĕнче илтĕнсе юлчĕ Çтаппанăн çинçе, анчах çирĕп сасси.

# ЧЕРЕТ КАНТУРĔ

Йĕркеллех ĕçлеттĕмĕрччĕ, шăкăл-шăкăл калаçсах пурăнаттămăрччĕ. Ирхине саккăрта кантура çитнĕ те, пиллĕкре унтан тухса кайнă. Ним хуйхи-суйхи те пулман. Тиркеева кантур пуçлăхне лартнă хыççăн пуçланчĕ камит. Халăха пухрĕ те вăл хыттăн асăрхаттарчĕ: «Малтанхи ирĕклĕхе манăр. Ыррантан пуçласа ĕçе килнине, ĕçрен кайнине, апата тухнине, апатран таврăннине журнал çине паллă тăвăпăр, унта алă пусатăр».

Тепĕр ирпе, алă пусас тесе, коридор вĕçне черете тăтăм. Умра сахалтан та çĕр çын ытла. Кам хаçат вулать, кам кукăль чăмлать, кам юмах çаптарать. Кантурĕнче, арçын пуçне виç хĕрарăм ĕçлекенскерĕнче, чанкăлтатакан, пăшăл пăтти пĕçерекен ытлашшипех. Амăрту инженерĕ Сарра Сарафанова сасси янкăх каять: «Хĕрсем! Паян универмагра атă сутаççĕ—çӳллĕ кĕлеллĕ, ăшă сăранлă, хура тĕслĕ, ют патшалăхран кӳрсе килнĕскер».

Такăшĕ ăна шăпланма ыйтрĕ. Управляющи килет иккен. Тиркеев çынсем çине мăнкăмăллăн пăхса иртсе кайрĕ. Вăл курăнми пулсанах, Сарра Сарафанова тепĕр хыпар сарчĕ: «Суту-илӳ çуртĕнче ăшă халат, мамăк кĕпе-йĕм пулать. Кăнтăрла иртсен кĕрĕкпальто сутма тытăнмалла».

Самай хăвăрт шăвакан черет чарăнчĕ ларчĕ. Хĕрарăмсем Сарра Сарафановăна сырса илчĕç те, тĕпчеççĕ те тĕпчеççĕ: «Мĕн тĕсли? Мĕнле виçевли?..» Саккăр çурăра тин алă пусма черет çитрĕ. Ĕçре пай пуçлăхĕ мана куçран сиввĕн пăхрĕ те:

— Малтанлăха каçарăпăр. Çухатнă вăхăта хăть юлса, хăть апатра ĕçлесе тат,—терĕ.

Чӳречерен лайăххах курăнать: Сарра Сарафанова ертсе пыракан ушкăн, автобус çине ларса, лавккана вĕçтерчĕ. Эпир ĕçлетпĕр. Вунпĕрте гимнастика туса хул-çурăма çемĕçтертĕмĕр. Унтан буфетра сив яшкапа шăртлă пулăшăн черет тăтămăр. Апат çинĕ хыççăн—алă пусма. Пиллĕкре... Хĕрарăмсем коридорта каллех суту-илӳ çăмхи сӳтеççĕ. Атă илни мухтанать, илейменни—кулянать.

Çапла, пурăна-киле, хамăр чăн-чăнах ĕçре пулнине ĕнентерес тесе алă пусассишĕн черетре тăра-тăра халран кайрămăр. Çуртйĕр проекчĕн чертежне ӳкерме мансах халап-юмах итлетпĕр.

Сарра Сарафановасем... Управляющи заместителĕ Чупкин ĕçре мĕншĕн хура куçлăх тăхăнса çӳренине те пĕлеççĕ. Сухов инженер, аллăри хусах, Сарра тантăшне йӳнетнĕ тутăр парнеленĕ пулать.

Марине Маринова чертежница упăшки ача чăпăл тума, кĕпе-йĕм çума, шӳрпе пĕçерме пит маçтăр-мĕн. Кадрсен пайĕн пуçлăхĕ Ревнин хăна çуртĕнче ĕçлекен арăмĕ патне кашни çур сехетре шăнкăравласа тăрать имĕш. Маша машинистка ресторана ташлама çӳрет, урай çăвакан Укахвин сутлăх пилĕк йыт çури пур, Глинова геодезист попугайне çăмламас кушакĕ тытса çинĕ, тет. Хыпар çине хыпар...

Черетре çухатнă вăхăта эпĕ, тем пек тăрăшсан та, ĕçлесе татаймиं пултăм. Аптранă енне чертеж сĕтелне механизацилерĕм те хутăм: тăвата ури вĕçне шариклĕ подшипниксем çапрăм. Кăлтăр-



таттарса тухрăм та сĕтеле, коридорта хамăн вырăна йышăнтăм. Алă пусма черет çитиччен шăпах пĕр чертеж ÿкерсе пĕтертĕм. Ман пата ВОИР пуçлăхĕ чупса пычĕ те, хыттăн-хыттăн ыталаса виççĕ чуптурĕ. «Маттур,—терĕ,—малтанлăха ку çĕнĕлĕхшĕн преми, кайран...» Кайрантарахпа тава тивĕçлĕ рационализатор ятне те илтĕм, пуху-канашлура хамăн малта пыракан опытпа паллаштарса та ывăнтăм. Çапах та савăнтăм. Коридора ман хыççăн мехсĕтел тĕксе тухакансем татах тупăнчĕç.

Профсоюзăн вырăнти комитечĕ «Черетри вăхăтпа туллин усă курар!» ятпа конкурс ирттересси çинчен пĕлтерчĕ. Хĕрарăмсем çав кунах алĕç кружокĕ йĕркелерĕç. Сарра Сарафанова тĕрĕ тĕрлекенсем, çăм чăлха, чĕнтĕр çыхакансем хушшинче ăмăрту пуçарса ячĕ. Арçынсем вĕрсе каламалли инструментсем сĕтĕрсе килчĕç те репетици пуçларĕç.

Коридор шавлать, кĕрлет. Черет кантурĕ хĕрсех ĕçленĕшĕн Тиркеев пĕсехе тулли савăнать пулĕ. Эпир вара шăла çыртатпăр çеç.

## ТУПМАЛЛИ


Йӗкехӳре . . . . . . 3
Тараса Тарасе . . . . . 6
Юпа . . . . . . . 8
Ырӑ кӑмӑл инкеке . . . . . . 9
Апельсин хуппи . . . . . 11
Пуканӗ çемçе те . . . . . 15
Ӑшаланӑ чӑх ури . . . . . 16
Шӑлавар . . . . . . 18
Кӑвакал кӳлли . . . . . 19
Чей—лайӑх пуринчен . . . . 23
Пиçмен пашалу . . . . . 24
Виç сӑмах . . . . . . 28
Канӑç пурнӑç анӑçӗ . . . . 29
Картлашка . . . . . . 30
Кам вӑйлӑрах . . . . . 35
Малтан шухӑшла . . . . . 37
Тамӑкран таврӑнсан . . . . 39
Пӑта . . . . . . . 41
Шарашкин çурчӗ . . . . . 43
«Сӑрӑ хурт» пӗрлешӗвӗ . . . . 46
Айван Айаван . . . . . 48
Пысӑкраххи . . . . . . 50
Самсамсон . . . . . . 51
Йӳçӗ кукӑль . . . . . . 53
Мулкач мӑшкӑлӗ . . . . . 54
Тӑрнаккай . . . . . . 55
Пурнӑç юххинче . . . . . 57
Черет кантурӗ . . . . . 60

Библиотека «КАПКАНА» № 1 (58)

КУЗЬМИН ВЛАДИМИР ПРОКОПЬЕВИЧ

# СТУПЕНЬКА

Рассказы и фельетоны
на чувашском языке

Редактор Н. Н. МАКСИМОВ
Художник Г. Я. ЯКОВЛЕВ
Тех. редактор Н. С. ОРЛОВА
Корректор Е. С. ТИХОНОВА

НТ 18018. Сдано в набор 6.10.82 г. Подписано к печати 4.02.83. Формат 84х108 1/32. Объем 3,5 уч.-изд. л.
Заказ № 5730. Тираж 24000 экз. Цена 15 коп.

---

Типография издательства Чувашского обкома КПСС,
г. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

Хакĕ 15 пус
Индекс 73990